150 28-76

Пĕтĕм тĕнђĕри пролеттарисем, пĕрлешĕр!

Ç. П. ПЕТРОВ.

# ПĔТĔМ СОЙУСРИ КОМУНИССЕН (полђшевиксен) ПАРТТИН XV-мĕш СЙЕСĔН ĔÇĔСЕМ

ПСК(п)П Ђăваш Опкомĕн тата Ђăваш Контролђ Комиççийĕн пĕрлешӳллĕ II-мĕш пленăмĕнђе тунă toклат

ПСК(п)П-ин ЂĂВАШ ОПКОМĔ КĂЛАРНĂ
Шупашкар—1928

Иванова

*ĕтĕм тĕнтђери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

Ç. П. ПЕТРОВ.

# ПĔТĔМ СОЙУЄРИ КОМУНИССЕН (полђшевиксен) ПАРТТИН XV-мĕш СЙЕСĔН ĔÇĔСЕМ

ПСК(п)П Ђăваш Опкомĕн тата Ђăваш Контролђ Комиççийĕн пĕрлешӳллĕ II-мĕш пленăмĕнђе тунă токлат

ПСК(п)П-ин ЂĂВАШ ОПКОМĔ КĂЛАРНĂ
Шупашкар—1928

Типография
«ЧУВАШСКАЯ КНИГА»
Чебоксары, Чувашская, 6

Чузашлит № 93 Зак № 431. Напечат. 2000 экз.

# Пĕтĕм Сойусри Комуниссен (полђшевиксен) Парттин XV-мĕш Сиесĕн ĕçĕсем.

*ЙУЛТАШСЕМ!*

Пуринђен малтанах акă мĕн çинђен каласа хумалла Хăшпĕр йулташсем, Парттин XV-мĕш Сиесĕн маттериалĕсене пурне те хаçат-шурналсенђе тĕплĕн çутатса паман тесе шутлаççĕ. Çавăнпа та хаçат-шурналсем çине кĕменнисем çинђен каламалла, теççĕ. Ку тĕлĕшрен епĕ малтанах акă мĕн каласа хăварасшăн: XV-мĕш Сиесăн йышăнăвĕсем парттишĕн те, ĕçлекенсен класĕшĕн те питĕ пысăк вырăнта тăраççĕ, çавăнпа та Сиес хăй ĕçĕсем çинђен партти ђленĕсене те, парттире тăманнисене те, пĕтĕм тĕнђери ĕçлекенсен класне те тĕплĕн пĕлтерме тăрăшрĕ. Сиесăн паллăрах ĕçĕсем çинђен пурин çинђен те хаçат-шурналсенђе тĕплĕн çырнă. çавăнпа та хам токлатра епĕ хаçатсем çине ўкмен йапаласем (ĕçсем) çинђен калама пĕлеймĕп, епĕ Сиесăн тĕп ыйтăвĕсем çинђе ђарăнса тăма тăрăшăп.

Парттин XV-мĕш Сиесĕ Октăпĕр Револђутсийĕ 10 çул тултарнă хыççăн пухăннине, тĕнђери патшалăхсен хушшинђи ĕçсем питĕ ђĕрре кĕрсе кайнă вăхăтра пухăннине епĕр пĕлетпĕр. Çакă икĕ сăлтав—пролеттариат тиктаттурĕ вунă çул курăнса ирттерни, тата пĕтĕм тĕнђери патшалăхсен хушшинђи ĕçсем çивĕђленсе çитни—пуринђен ытла, ССРС-не хирĕç контр-револђутсиллĕ вăрçă тума хатĕрленни, кăпиталисла патшалăхсен хушшинђи ĕçсем ђĕрре кĕрсе кайни, тата класcен хирĕçўсем ўссе пыни,—пĕтĕм тĕнђери ĕçлекенсен класне пулас вăрçă валђи кирлĕ сăнавсене вĕренсе çитме пулăшрĕç. Ку йапалана пирĕн Партти Сиесĕн асра тытмалла пулђĕ.

Виççĕмĕшĕ, партти Сиесĕ асра тытмалла пулни акă мĕн: Совет Сойусĕнђи ĕçлекенсен класĕ, хресђенсен тĕп массипе пĕрле, партти йертсе пынипе, кирек йепле пулсан та нумай, пысăк ĕçсем тунă. Çакă пирĕн çĕнтерўсене пĕтĕм тĕнђери

ĕçлекенсен класĕ анђах астуса тăмаст, капиталисла патшалăхсем те, ку йапалана курасах килмест пулин те, пирĕн çĕнтерӳсене вĕсем курса, сăнаса тăраççĕ. Епĕр нумай малалла кайнине, хамăр çĕршывра, хулара та, йалта та, сотсиалисăм тумашкăн çирĕп никĕс хунине ĕçлекенсен класĕ калама çук хĕпĕртесе астуса пырать. Çавăнпа та Партти Сиесĕн ĕçĕсем, çак 10 çул хушшинђе анђах мар, пирĕн парттин пĕтĕм историйĕнђе те ăраснах паллă вырăн йышăнса тăраççĕ, мĕншĕн тесен, хамăр ĕçри çĕнтерӳсемсĕр пуçне тата, XIV-мĕш Сиес хыççăнхи икĕ çул хушшинђе пирĕн парттире питĕ хĕрӳллĕ çапăçу пынине епĕр пĕлетпĕр. Сиес умĕн, прокрамă пирки хирĕçӳсем, килĕшменлĕхсем пулнă пирки, партти хушшинђен Тĕп Комиттет ђленĕсенђен хăшне-пĕрне кăларса пăрахмалла пулђĕ, темиçе çул хушши ахаљ партти ђленĕ анђах мар, Тĕп Комиттетăн ђленĕ пулнисене, Тĕп Контрољ Комиççин ђленĕ пулнисене, Политпӳро ђленĕ пулнисене кăларса пăрахрĕç. Ку йапала истори тĕлĕшĕнђен питĕ пысăк вырăн йышăнса тăракан йапала.

Партти политтĕкĕ тĕрĕс иккенне пĕлмешкĕн, Сиес умĕн парттийĕн, тата хуçалăх ĕçĕн ђи паллăрах, тĕпри ыйтăвĕсем пирки пысăк тискуççи туса илђĕç. Çапла вара пирĕн парттин Сиесĕн ĕçĕсене Совет Сойусĕнђи пролетариат анђах сăнаса пыман, вĕсене пĕтĕм тĕнђе сăнаса пынă. Пĕр йенђен, пĕтĕм тĕнђери пролеттариат, калама çук тимлесе, ленинисăм шухăшĕсем çĕнтерессе кĕтсе, пирĕн парттин Сиесĕн ĕçĕсем çине пăхса пынă; тепĕр йенђен, пуршуаçипе унăн майлисем сăнаса пынă, кусем пирĕн парттипе ĕçлекенсен ĕçĕсем сӳтĕлсе кайасса, йе тата пирĕн çул хăш йенелле те пулин пăрăнса кайасса кĕтсе тăнă; паллах, вĕсем пирĕн партти ăшĕнђе криçĕс пуçланасса, пирĕн мĕн пур ĕçсенђе криçĕс пуçланса кайасса кĕтнĕ. Пирĕн тăшмансен шанђăкĕсем вырăна лараймарĕç. XV-мĕш Сиесăн ĕçĕсем çинђен каланă ђух çаксене ĕнтĕ асра тытса тăмалла.

Пирĕн партти Сиесĕн ĕçĕсемпе парттире тăман массăсем те питĕ çывăххăн хутшăнса тăђĕç. Комуниссен парттин ђленĕсем мар пулин те, партти Сиесĕн ларăвĕсенђе пулман пулин те, парттире тăман пролеттариатăн аслă массипе хресђенсен тĕп масси,—патраксем, ђухăнсем, вăтам хресђенсенђен танлăраххисем—пурте вĕсем пирĕн партти Сиесĕн ĕçĕсемпе çыхăнса тăђĕç. Пирĕн парттин хăй хушшинђи ĕçĕсене сӳтсе

йавса, пирĕн хуçалăх ыйтăвĕсене сӳтсе йавса, вĕсем партти Сиесĕн ĕçĕсемпе çыхăнса тăђĕç. Çапла вара Октăпĕрти ђĕнӳ пулса тăђĕ, вăл ђĕнӳ вăхăтĕнђе 100.000 çынна йахăн, ђи çирĕпрех, ĕçре пиçсе çитнĕ ĕçлекенсене парттине кĕртрĕç. Çаксем пурте. тата Сиеса пырса саламланисем пирĕн партти ĕçлекенсен класĕпе, хресђенсемпе çирĕп çыхăнса тăнине кăтартаççĕ, тата Ленин Парттийĕ пĕр шухăшлă пулнине, пĕрле ђăмăртанса тăнине пĕлтереççĕ.

Парттин хăй хушшинђи ĕçсем пирки сӳтсе йавасси Сиесăн тĕп ĕçĕ пулман; партти хушшинђи ыйтусем вĕсем ĕнерхи кунăн ыйтăвĕсем. Партти Сиесĕн тĕп ĕçĕ вăл Совет Сойусĕнђе сотсиалисăм тăвас ĕçĕн ыйтăвĕсене сӳтсе йавасси, тата пĕтĕм тĕнђери револђутсиллĕ хусканăвăн ыйтăвĕсене сӳтсе йавасси пулђĕ; çаксен тĕлĕшĕнђен, мĕн тунă ĕçсене тĕрĕслесе тухса, хамăр ĕçĕн малашнехи çулĕсене татăклăн, уççăн кăтартса хурасси пулђĕ. Рыккăв йулт. каларĕшле, Сиесăн тĕп сатађĕ—пирĕн партти ваљђи, хулара та, йалта та сотсиалисăм тăвас тĕлĕшпе çансене тавăрсах ĕçлемешкĕн майсем тупса парасси пулђĕ.

Хулара та, йалта та сотсиалисăм тăвас ĕçĕн аслă прокрамне пурнăçа кĕртме епĕр тытăнатпăр ĕнтĕ. Кулђтурăлла револђутси ыйтăвĕсем ку сиесра нихăçанхинђен ытла татăклă тăђĕç. Парттин нихăш сиесĕнђе те ку ыйту çакăн пек аслăн, татăклăн тăман.

Пур çак ыйтусем тăрăх та Сиес, сотсиалисăм малалла çĕнтерсе пырассине кăтартакан, паллă, уçă постановленисем йышăнђĕ.

## Партти хушшинђи лару-тăру ыйтăвĕсем.

Халĕ ĕнтĕ епĕ партти хушшинђи лару-тăру ыйтăвĕсемпе оппоçитси ыйтăвĕсем çинђен каласа парăп та, вара епĕр вĕсем пирки сăмах пĕтерсе, вĕсем çинђен текех калаçмăпăр.

Партти хушшинђи лару-тăру ыйтăвĕсем Сиесра иккĕмĕш вырăнта, кĕçĕн вырăнта анђах пулђĕç, хăшпĕр йулташсем шутланă пек, тĕп вырăнта тăмарĕç. Мĕншĕн вăл апла пулђĕ? Мĕншĕн тесен партти хушшинђи лару-тăру ыйтăвĕсене, икĕ çул хушши вырăн йышăнса тăнăскерсене, сиес умĕнхи тискуççи вăхăтĕнђе питĕ тĕплĕн, питĕ тинкерсе пăхса тухнă. Сиес умĕнхи тискуççи вăхăтĕнђе ку ыйтăва, парттири лару-тăрува сăнаса тĕрĕслесе пăхас тĕлĕшрен те, пирĕн çĕршывра

сотсиалисăм тăвас йенђен те, мĕн пур аслăшĕпех лартса сӳтсе йавнă. Çавăнпа та ку ыйту иккĕмĕш вырăнта, кĕçĕн вырăнта анђах тăђĕ. Хăшпĕр йулташсем ку ыйту пирки çапла калађђĕç: тискуççи кирлĕ пулнăши? оппоçитси пирки çавăн ђул вăхăт ирттермелле пулнăши? вĕсене XV-мĕш Сйесра пурĕ пĕр парттирен кăларђĕç, ку ĕç мĕлйунлă парттин ирĕкĕ, ĕçлекенсен класĕн ирĕкĕ, çавăнпа та оппоçитсипе çав тери аппаланмалла та марђĕ, теђђĕç. Ку тискуççи çине çапла пăхни тĕрĕс мар. Оппоçитси ыйтăвĕсем пирки епĕр, оппоçитсийе парттирен кăларса пăрахса, тӳрех те сăмах пĕтерме пултараттăмăр, партти куна тума пултарнă пулĕђђĕ, çапла тунинђен партти хăй те, партти хушшинђи лару-тăру та пăсăлман пулĕђђĕç, анђах пирĕншĕн, çак оппоçитсипе кĕрешнĕ май, партти массине вĕрентсе пыни паха йапала, Ленин çулĕ тĕрĕс иккенне кăтартни, оппоçитсине тĕпĕ-йĕрĕпех парăнтарни, шухăшĕсем тĕлĕшĕнђен те, орканисатси тĕлĕшĕнђен те парăнтарни паха. Çапла оппоçитсин йăнăшĕсене кăтартнă пирки, партти çулне тĕрĕс ăнлантарса панă пирки хамăр ĕçлекенсен класне вĕрентсе пыни паха, мĕншĕн тесен, хамăр çĕршывра сотсиалисăм тăвас ĕçĕн тĕп йăвăрлăхĕсем, парттипе пĕрле ĕçлекенсен класне те тивеççĕ. Акă мĕншĕн, хамăр парттири 2 çул хушшинђи кĕрешĕве пăхмасăрах, Сйес умĕн аслă ĕçлĕ тискуççи тунă. Çаккăн çинђен каланă ђух Сталĕн йулташ: хађхи тискуççи кирлĕ йапала пулнă, иртнĕ тискуççи пирĕн партти вăйлă иккенне кăтартрĕ, терĕ. Ку сăмах питĕ тĕрĕс. Мĕншĕн аплаши? Мĕншĕн апла тискуççи кирлĕ пулнăши? Мĕншĕн тесен пирĕн партти – Совет çĕршывĕнђи пĕртен пĕр партти, совет ĕçне, хуçалăх ĕçне çул кăтартса пыракан пĕр партти. Пирĕн партти хушшинђе тĕрлĕ сийсем пур. Парттийĕн XI-мĕш Сйесĕнђе каланăђђĕ: пролеттариат тиктаттурĕ вăхăтĕнђе тата урăх политтĕк парттийĕсем пулнă пулсан, пирĕн парттин хăшпĕр сийĕсем урăх парттисенђе пулнă пулĕђђĕç, тенĕђђĕ. Анђах, урăх парттисем çук пирки, вĕсем (ытти парттисем) пурте, совета хирĕç ĕçлесе, пролеттариата хирĕç контрреволђутсиллĕ ĕçлесе хăйсен йађĕсене çĕртнĕ пирки, ĕçлекенсен класĕн куçĕ умĕнђе вĕсене пĕтĕмпех мăшкăла кăларнă пирки – комуниссен парттийĕ пĕртен пĕр партти пулса тăраť. Çавăнпа та тĕрлĕ сийсем, сăмахран, уйрăм интеликентсем, тата ĕçхалăхĕн ытти сийĕсем те, мĕнле те пулин усă кăтартас тесе, хăйсен пултаруллăхне ниăçта кăтартма май тупман

пирки, пирĕн парттине кĕреççĕ; çапах та вĕсенђен хăшĕ-пĕри ђăннипех Ленинла пољшевиксем мар. Паллах, кун йышши сийсем пирĕн парттире пиçсе тухса улшăнаççĕ, вĕренеççĕ, партти çул кăтартса пынипе тĕрĕс, Ленинла çулпа пыраççĕ, ђăннипех пољшевиксем пулса кайаççĕ.

Анђах çак сийĕн хăш пайĕ Ленинисăмăн тĕп шухăшĕсене лайăххăн çавăрса илеймест те, çапла вара, майĕпе, сотсиалисăм тăвас ĕç çине ђунсăрла пăхакан сийсем пухăнса пыраççĕ. Вĕсенђен хăшĕ-пĕри ĕçре питĕ аван пăхăнса пыраççĕ, вĕсем, салтаксем пек, хăйсене мĕн хушнине тăваççĕ, електритсă шăнкăравĕ пек, пўрнепе пуссанах хирĕç сасă параççĕ, анђах хăйсен тăн пуçĕ, ĕçе пуçарса йарса пырасси вĕсен çук, пирĕн ĕçе малалла тĕксе йарса пыма вĕсем пултараймаççĕ, йухăм майĕ анђах йухаççĕ. Ку йапала—усал йапала, сотсиалисăм тăвас ĕç çине ђунсăрла пăхакан йапала, пирĕн парттири таса мар лађака. Партти мĕн хушнине туса пынă хушăрах ку лађака опываттĕл *) пулса кайаť, çĕрсе шăршланма пăхаť. Партти пĕрпĕр ыйту кăларса тăратаť пулсан, çула хăш йеннелле те пулин пăрмалла ђух, партти хăйĕн çулне тĕрĕслемешкĕн тискуççи пуçласа йарсан,—вăл вара парттин çав пайĕнђен ыйтни пулаť. Тепĕр йенђен, партти çулне тĕрĕс мар тесе шутлакан оппоçитси те парттин çав пайĕнђенех ыйтаť. Çав лађакаран ђи лайăххисене партти хăй йенне туртса илет, ђи нађаррисем ку лађакаран оппоçитси йенне куçаççĕ, çапла вара лађака хусканма пуçлаť, унти массă тимлĕрех ĕçлеме тытăнаť, лађаки типсе пыраť. Унăн ђи аван пайĕ партти йеннелле кайаť, ђи нађарри оппоçитси йенне куçаť, çапах та çак мĕн пур массă пĕтĕмпех тискуççийе йавăçаť. Çак тĕлĕшрен пăхсан, ку тискуççи усăллă пулђĕ; ку тискуççи сотсиалисăм тăвас ĕçĕн ђи кирлĕрех ыйтăвĕсене, тĕрĕс çул кăтартса пырас ĕçĕн ыйтăвĕсене ăнлантарса пађĕ, ку тискуççи оппоçитçине парттипе ĕçлекенсен класĕнђен уйăрса йађĕ. Мĕнле пулса тăђĕши ку ĕç? Оппоçитсире тăраканнисем хушшинђе пирĕн парттин ђи паллă ĕçлекенĕсем те пур вĕт? Пирĕн партти çеç те мар, ĕçлекенсен класĕ те оппоçитсирен уйăрăлса кайнă ĕç мĕнле пулса тăђĕши? Мĕншĕн тесен, оппоçитсине йертсе пыраканĕсен пĕђĕк ушкăнĕ пурăнăçран

*) Опываттĕл тесе хăйшĕн анђах шухăшлакан, пайан лайăх пултăр тесе тăрăшакан кĕске ăслă çынна калаççĕ.

уйăрăлса кайнă; вĕсен тĕрекĕ—парттин тăнлăрах ђленĕсем пулман, парттири лађака пулнă, вĕсен куçне пурте хура йенђен курăннă, ѐçĕн аван йенĕсене вĕсем курман. Çавăнпа та XV-мĕш сиесра оппоçитси уйăрăлса тăни курăнђĕ, ку тĕлĕшрен XV-мĕш сиесĕн ĕçĕ оппоçитси пирки парттипе ĕçлекенсен класĕ пурăнăçа кĕртнĕ йапалана саккуна кĕртни анђах пулђĕ.

## Парттипе оппоçитси хушшинђи хирĕçӳсем çинђен.

Çак йулашки вăхăтра парттипе оппоçитси хушшинђе мĕнле хирĕçӳсем пулнăши? Тĕп хирĕçӳсем çинђен епĕ пĕтĕмпех каламăп, çавах та тĕп хирĕçӳсенђен çиђђĕшне кăтартни кирлĕ. Пуринђен малтан, пирĕн çĕршывра сотсиалисăм тăвас ĕç çĕнтерсе пырасса ĕненменни. Кун çинђен, оппоçитси пирĕн çĕршывра сотсиалисăм тума май пуррине йышăнманни çинђен, йулташсем пĕлеççĕ. Оппоçитси пролеттариат тиктаттурĕ пуррине йышăнмасть, çавăнпа та пирĕн парттипе влаç урăхланса кайни çинђен пуплет. Кусене пурне те оппоçитси пĕтĕм тĕнђери ĕçсемпе çыхăнтарнă, ун пирки пĕтĕм тĕнђери ĕçлекенсен класĕ хушшинђе калаçать, çапла туни револютси ĕçне ђăрмантарса пырать. Оппоçитси ĕçлекенсен класĕпе вăтам хресђен хушшинђи çыхăнăва йышăнмасăр çапла калать: „Епĕр акă мĕнле калатпăр: пирĕн патшалăх пӳтшетне çĕнĕрен пăхса тухса, пирĕн 5 мĕлйартлă пӳтшетăн ытларах пайне промышлĕннăç çулĕпе йамалла, мĕншĕн тесен, пĕтĕмпех пĕтсе ларас йеннелле кайађђен, вăтам хресђенпе килĕшӳ çухатни авантарах“, теççĕ. (Çмирнов йул. XV-мĕш Сиес умĕн калани). Кунсăр пуçне оппоçитси пирĕн револютси сотсиалисăмла иккенне йышăнмасть. Колоњисенђи револютси ыйтăвĕсем пирки оппоçитси пĕтĕмпех терĕс мар çулпа пырать. Пĕтĕм тĕнђери ĕçлекенсен хусканăвĕнђе пĕр фронт туса пырас çула оппоçитси йышăнмасть, вăл полђшевисăмăн тратитсийĕсене (йăлисене), тата пирĕн полђшевиксен парттийĕн пĕрлĕхне йышăнмасть.

Ку ыйтусем пирки епĕ питĕ вакласах каламăп, вĕсем çинђен епĕр 2 çула йахăн калаçатпăр ĕнтĕ, халĕ вĕсем çинђен епĕ сăмах йĕрки ан пăсăлтăр тесе анђах калатăп. Хăш йенђен оппоçитси парттипе килĕшетши? Пĕр парттире тăман ĕçлекен, хăй парттине кĕнĕ ђух, ку ыйту пирки питĕ çивђĕ каласа хунă. Вăл каланă: „ĕлĕк епĕр оппоçитси парттипе

мӗн пирки килӗшменнине шыраттӑмӑр, халӗ епӗр оппоҫитси парттипе хӑш йенђен килӗшӳллӗ пулнине шыратпӑр", тенӗ. Урӑхла каласан, оппоҫитси Ленин парттийӗнђен уйӑрӑлса кайнӑ, оппоҫитси меншевисӑм ҫулӗ ҫине, парттине хирӗҫ ӗҫлес ҫул ҫине тӑнӑ, ҫапла вара, Сталӗн токлађӗ тӑрӑх Сйес йышӑннӑ постановленире каланӑ пек, тактӗккӑ (ӗҫ майӗсем) пирки пулнӑ хирӗҫӳсенђен прокраммӑ (тӗп ӗмӗтсем) пирки хирӗҫӳсем пулса тӑнӑ. Ҫапла ӗнтӗ оппоҫитси йӑлтах ӑрасна партти, ӑрасна уставпа ӑрасна ӗҫлӗ партти пулса тӑрат.

## Оппоҫитси сйесра мӗн хӑтланђӗ.

Мӗн тумалла пулнӑха оппоҫитсин? Ҫак сйесра оппоҫитсин йе хӑйне пӗтӗмпех салатса йарса парттийе хирӗҫ ӗҫлеме ђарӑнмалла, тата хӑйсен шухӑшӗсене те пӑрахмалла, йе тата, ӑна тумасан, вӗсен парттирен тухса ӳкмелле пулнӑ. Урӑхла тума май килмен. Оппоҫитси икӗ ҫулталӑк хушши парттийе хирӗҫ ӗҫлерӗ. Ҫапах та сйесра пулнӑ, оппоҫитсионерсем оппоҫитси унђен парттийе хирӗҫ ӗҫлени ҫинђен пӗр сӑмах та шарламарӗҫ, ҫав ыйтӑва пытарса хӑварма, унтан пӑрӑнса иртсе кайма тӑрӑшрӗҫ. Оппоҫитси ҫак ыйтуран пӑрӑнса иртсе кайма хӑтланнине кура, вӗсен умне акӑ ҫак ыйтусене лартрӗҫ: парттийе хирӗҫ ӗҫлеме пӑрахатӑри? Хӑвӑр шухӑшсене пӑрахатӑри? Оппоҫитси ҫак ыйтусене хирӗҫ Камӗнӗв йулташ сӑмаххисемпе ҫапла каласа пађӗ:

„Пире епӗр халђђен Анклипе Совет Сойусӗнђи профсойуссен комиттеђӗ ҫине мӗнле пӑхнине пӑрахма хушма йепле май пултӑр вара? Пире епӗр халђђен Киттайри револђутси ҫине мӗнле пӑхнине пӑрахма хушма ӑҫтан май пултӑр вара? Пире епӗр халђђен хресђен халӑхӗ сийсене уйӑрӑлни ҫинђен мӗнле шухӑшланине пӑрахма хушма ӑҫтан май килтӗр вара? Шухӑшсене пӑрахма хушнине тума май ҫук, вӑл курӑнсах тӑрат ӗнтӗ. Шухӑшсене пӑрахма хушни пирӗн парттире нихӑҫан та пулман".

Ҫак сӑмахсем Камӗнӗв йулташ анђах ҫавӑн пек шухӑшланине кӑна мар, пӗтӗм оппоҫитси ҫавӑн пек шухӑшланине кӑтартаҫҫӗ. Партти сйесӗ ӗҫленӗ вӑхӑтра та оппоҫитси парттийе хирӗҫ ӗҫленӗ; пирӗн сйес ӗҫленӗ вӑхӑтра оппоҫитси хӑйӗн сйесне туса иртернӗ. Оппоҫитсионерсен, партти сйесӗ

мĕн туни çинђен вĕсене пĕлтерсе тăракансем пулнă. Вĕсем хăйсен ђленĕсене сĭес мĕн туни çинђен систерсе, пĕлтерсе тăнă. Çапла вара оппоçитсионерсем хăйсен сĭеса панă сайавленийĕсене сĭес мĕн тунине, мĕнле шухăшланине кура çыра-çыра панă. Сайавленийĕсене вĕсем теккапĕрĕн 3-мĕшĕнђе пĕр майлă, теккапĕрĕн 10-мĕшĕнђе тепĕр майлă çырса панă. Оппоçитси нихăш тĕлте те, пĕр утăм та кайалла ђакасшăн пулман. Камĕнĕв вара хăйсен оппоçитси пĕрлĕшĕвĕ мĕнле шухăшлани çинђен каланă.

Шухăшсене пăрахма хушнине Камĕнĕв тĕп ыйту, варринђе тăракан ыйту вырăнне хурат; шухăшсене пăрахма хушни полђшевиксем хушшинђе нихăçан та пулман, Ленин пурăннă ђух ун пек пулман, хаљ ĕнтĕ шухăшсене пăрахма хушаççĕ, терĕ вăл хăйĕн сăмахĕнђе. Оппоçитси хушнипе çав сăмахсене каласа, Камĕнĕв йулташ парттин сĭесне улталасшăн пулђĕ. Çавăн пек каланийех тата оппоçитси хăй шухăшĕсене пĕтĕм партти умне кăларни, вĕсем тавлашуллă ыйтусене татса парасса кĕтни пулат. Парттин ăшĕнђи темократтине пĕрсе лартнă та, парттин уйрăм ђленĕсене хăйсен шухăшĕсене пăрахма хушаççĕ, вăл—парттийĕн ăшĕнђи темократти çуккине, тата ленинисăмран пăрăнса кайнине кăтартат, тесе ĕнентересшĕн тапаланђĕ оппоçитси. Камĕнĕв каланинђе самай çавă тĕп вырăн йышăнса тăрат.

Партти сĭесĕн çакна хирĕç мĕнле каламалла пулнă? Партти сĭесĕ, Рыккăв йулташ каланă сăмахсемпе,—Камĕнĕв калани сĭесшăн çителĕклĕ мар, парттишĕн çителĕклĕ мар, терĕ,—мĕншĕн тесен Камĕнĕв калани оппоçитси парттипе кĕрешнийех пулат вăл. Камĕнĕв пирĕн парттире шухăшсене пăрахма хушни нихăçан та пулман тени, вăл ђăнахах та суйни, тата оппоçитси пирĕн парттипе тивĕççĕр, йурăхсăр майсемпе кĕрешни пулат. Сĭесра, оппоçитси сĭес çинђен елекленине кăтартса пама, ун пек ĕç çинђен 10-мĕш сĭес йышăннине аса илтермелле пулђĕ. 10-мĕш сĭесăн постановленинђе çинтиккалисăмпа анарххисăм йенне сулăнакансем çинђен çапла каланă:

„РКП-ĕн сĭесĕ, çав çинтиккалисăмпа анарххисăм йенне сулăнакан шухăшсене хыттăнах сирсе йарса, çапла йышăнат: 1) çав шухăшсемпе пĕрмайах, ним туртăнса тăмасăр кĕрешмелле тăвас; 2) çав шухăшсене сарма тăрăшакансем РКП ђленĕнђе тăма пултараймаççĕ“, тенĕ.

Ҫак ресолҌутсийе ҫырнӑ Ҍухне Ленин йулташ та вирлӗ ӗҫленӗ; ҫак ресолҌутсире калани— полҌшевиксен йӑли пулаҭ, полҌшевиксем ҫавӑн пек ӗҫлеме хӑнӑхнӑ. Оппоҫитси йаҌӗпе сӑмах калакан Камӗнӗв йулташ ӑна маннӑ, вӑл ӗнтӗ, полҌшевиксен йӑлисене, хӑнӑхуне манса, малашне те парттийе хирӗҫ ӗҫлеме маневӑр туни пулаҭ.

## Оппоҫитсии ХV-мӗш Сйес умӗнхи ӗҫӗсем.

Парттин 15-мӗш сйесӗ умӗн оппоҫитси: „Устрйалӑв майлӑ кайакансем тӗп пулҌҌӑр“. „термигор тӗп пултӑр“, тесе ҫырнӑ йалавсемпе парттийе хирӗҫ тӑнӑ; 14-мӗш сйес умӗн оппоҫитси фракси туса парттипе кӗрешнӗ; 14-мӗш сйес иртсен тепӗр куннех Ленинкрат орканисатси парттин сйесӗ йышӑннисене ан пӑхӑнтӑр тесе тӑрӑшнӑ. Вара вӑрмансенҌе пухусем тума тапратаҫҫӗ; оппоҫитси пуҫлӑхӗсем, вӗсене ҫӗнтерсе арпа пекех салатса пӑрахнӑ хыҫҫӑн, савӑтран савӑта, Мускавран Ленинкрата, Ленинкратран Мускава Ҍупма тытӑнаҫҫӗ. Октӑпӗр уйӑхӗнҌе пулнӑ пленӑмра, фраксийе салатса йаратпӑр та, парттипе кӗрешме пӑрахатпӑр, тесе сайавлени панӑ вӗсем. АнҌах та вӗсен фраксийӗ кайран каллех парттипе кӗрешме тытӑнҌӗ. Йарославски ваксалра темонстратси тӑваҫҫӗ. Авкуст уйӑхӗнҌе пулнӑ пленӑмра Тӗп Комиттетпа Тӗп КонтролҌ Комиҫҫи, оппоҫитсийе тӗрӗс ҫул ҫине кӑларса тӳрлетес шутпа, мӗн тума май килнине пӗтӗмпех тунӑ. Оппоҫитси, ТК-па ТКК ҫавӑн пек килӗшӳллӗ пулнине курнӑ та Тӗп Комиттетпа Тӗп КонтролҌ Комиҫҫи вӑйсӑр, оппоҫитсийе тивме хӑйаймӗҫ, ӗҫлекенсен класӗ оппоҫитсипе пӗр майлӑ, тесе шутланӑ.

Унтан вара вӑрттӑн типпокрафисем тума пуҫлаҫҫӗ, ҫав типпокрафисем тавра тӗрлӗрен шурӑквартейтсӑсем пухӑнаҫҫӗ.

Типпокрафине тупсан Преопрашенскипе Шарӑвран, тата ыттисенҌен те, вӗсем мӗн хӑтланни ҫинҌен каласа пама ыйтнӑ та вӗсем: ку ӗҫшӗн политтӗк йенҌен епӗр ответ тытатпӑр, ҫавӑнпа ҫак ӗҫшӗн тӗрмене хупнисене ирӗке кӑларма ыйтатпӑр, тенӗ.

Ун хыҫҫӑн вара Мускавра, тата ытти хуласенҌе те вӑрттӑн пухусем туса иртерме пуҫлаҫҫӗ. Вӑрттӑн пухусене хӑйсемпе пӗр майлисене Ҍӗнеҫҫӗ, майлӑ маррисене, Политпӳро Ҍленӗсене те кӳртмеҫҫӗ. ЙулашкинҌен вара оппоҫитси пур

ђикĕсенђен те иртсе кайат, нойапĕрĕн 7-мĕшĕнђе куҫа кĕретĕнех Совет влаҫĕпе кĕрешме тухат. Ăна урăхла ăнланма май ҫук, мĕншĕн тесен кирек йепле ăрасна лосăнксемпе темонстратси тума тухни те—хаљхи влаҫпа, парттипе кĕрешме ђĕнсе темонстратси туни пулат. Иртнĕ ҫулсенђе Колђака хирĕҫ ҫапăҫнă Мрађковски халĕ парттине хирĕҫ мĕн пур вăйпа кĕрешме тытăнат. Мĕн тумалла пулнăха вара парттин? Пур ђикĕсенђен те иртсех парттипе Совет влаҫне хирĕҫ кĕрешме тытăннисене тĕрмене хупса лартмалла пулђĕ. Оппоҫитси ун хыҫҫăн хăйĕн нойапĕрĕн 26-мĕшĕнђе тухнă ҫĕнĕ хыпарсем пĕлтерсе тăракан кĕнекине кăларса йарат. Унта ҫапла ҫырнă:

„Кусовниккăв улталани пирĕн йулташсен ĕҫне питĕ шутсăр йăвăрлатрĕ пулин те, ҫапах та, вĕсем парттин пур ђленĕсем патне ђĕнӳ кăларса йама пултарђĕҫ, унта Мрађковскийе тĕрмене хупни ҫинђен пĕлтерсе ҫырнă. Ăна никамран та хăрамасăр, Ленин ĕҫĕшĕн тăнăшăн, пролеттариат хутнекĕнĕшĕн тытса хупнă... ...Йулташсем! Парттипе револђутси хăрушлăх умĕнђе тăраҫҫĕ! Полђшевиксене—ленинтсăсене пусмăрланисене хирĕҫ тăрăр!" тенĕ.

Нойапĕрĕн 26-мĕшĕнђе оппоҫитси акă йепле ҫĕнĕ хыпарсем пĕлтерекен кĕнеке ҫапса кăларнă, ăна вара рапођђисем хушшине вăрттăн салатнă. Вăл Совет влаҫĕпе парттийе сирпĕтсе йама ђĕнни пулат. Империалисла патшалăхсем пире тапăнма хатĕрленеҫҫĕ, пирĕн хамăр ҫĕршыва тăшмансенђен сыхлама пĕтĕм парттийе ура ҫине тăратмалла, пур оркăнсене те йĕркелесе ҫитермелле, ҫав вăхăтрах оппоҫитси парттийе те, влаҫа та сирпĕтсе йама ђĕнет, ҫапла вара оппоҫитси пролеттариат тиктаттурине ҫирĕплетме тăрăшса мар, ăна ҫемҫетме, салатса йама хăтланса ĕҫлет. Ленин йул. ҫапла каланă:

„Парттипе пĕтĕҫсе тăни кирлĕ мар. партти ђленĕсем партти тисђиплинине пăхăнни те кирлĕ мар, тени пулса тăђĕ оппоҫитсин. Вăл ĕнтĕ, пролеттариат хăй тивĕҫлĕхĕшĕн кĕрешме пăрахса, пуршуаҫийе парăннипе пĕрех пулат. Вăлах тата, вĕтĕ пуршуаҫи пурăнăҫĕнђи сапăнђăкпа пĕрех пулат, унталла та кунталла сулăнмасăр тăма пултарайманнипе. ђăтăмлă пулса, пĕрлешсе, ушкăнĕпе пĕр пек тикĕс ĕҫлеме пултарайманнипе пĕрех

> пулаҫ. Ҫак асӑнни вара, ӑна ирӗк парсан, пролеттариатӑн кирек те йепле революутсилле йухӑмне те пӗтерсе лартма пултарат"... „Шултра, тата пӗтӗҫнӗ пуршуаҫийе ҫӗнтерме, мӗлйун мӗлйуншар вӗтӗ хуҫасене ҫӗнтерессинџен, пин хут ҫӑмӑлтарах. Вӗтӗ хуҫасем, кашни кунах куҫа курӑнман, асӑрхамалла та мар, анџах ҫӗртекен, хавшатакан ӗҫ туса, пуршуаҫийе мӗн кирлинех тӑваҫҫӗ. Пуршуаҫийе кайалла тавӑрӑнма мӗн кирлине тӑваҫҫӗ вак хуҫасем. Кам та кам пролеттариат парттин тимӗр пек, хытӑ тисџиплинине кӑшт та пулин ҫемҫетет (унӑн тиктаттури вӑхӑтӗнџе пушшех), ҫав ҫын, џӑннипе каласан, пуршуаҫийе пулӑшса, пролеттариата хирӗҫ тӑраҫ".

Ленин йулташӑн ҫак шухӑшӗ хаљ те тӗрӗсси курӑнат, вӑлах тата оппоҫитси ӑҫта ҫитсе тӑнине кӑтартаҫ. Парттин ҫавнашкал џленӗсемпе мӗн тумалла пулнӑха? Парттирен кӑларса пӑрахмалла пулнӑ, урӑх нимӗн те тума май килмен.

Тӗп Контроль Комиҫҫи преҫитиумӗ, Ҫиновйӗвпа Тротскийе, парттийе хирӗҫ ӗҫленӗшӗн, парттирен кӑлараџџен, питӗ ҫӑмӑл условисем лартнӑ: вӑрттӑн пухусем тума џарӑнӑр, тенӗ,— фраксине салатса йарасси ҫинџен, парттире тӑма май паман шухӑшӗсене пӑрахтарасси ҫинџен каламан та. Йаџейккӑсен пуххисенџе, тата савӑтсенџи орканисатсисен пуххисенџе туха-туха калӑрах, хӑвӑр шухӑшсене (платформӑна) каласа кӑтартӑр, анџах та вӑрттӑн пухусем ан тӑвӑр, тенӗ. Ӑна хирӗҫ вара вӗсем ҫапла каланӑ: есӗр пире вулверпе тӗлленӗ пекех хӑтланатӑр, пире канашлама, шухӑшласа пӑхма вӑхӑт парӑр, тенӗ. Ҫакӑнтан ӗнтӗ оппоҫитси парттипе кӗрешсе ӑҫта ҫитсе тӑни аванах курӑнаҫ. Ҫапла хӑтланнӑ хыҫҫӑн оппоҫитси партти сйесне пыраҫ те, нимӗн именмесӗр пӑркаланса, ҫапла калаҫ.

> „Епӗр нихӑҫан та пирӗн партти, тата пирӗн парттин Тӗп Комиттеџӗ термиторланса (улӑшӑнса) кайнӑ тесе, йе тата пирӗн патшалӑх хаљ ӗнтӗ рапоџџисен патшалӑхӗ мар тесе шутламан, хаљ те апла шутламастпӗр." (Оппоҫитси 8/XII-27 ҫ. панӑ сайавленийе пӑх).

Пӗр-ик уйӑх, уйӑх та мар—пӗр-ик ерне малтан мӗн пур парттире тӑман рапоџџисене парттипе Совет влаҫне хирӗҫ кӗрешме џӗннӗ, сйесра вӗсем пӑркаланса ҫырнӑ сайавлени параҫҫӗ, хӑйсем мӗн-мӗн хӑтланни ҫинџен пӗр сӑмах шарламасӑрах иртерсе йама шутлаҫҫӗ. Сйес: оппоҫитси ҫапла хӑтланни—маневӑр туни, вӑрттӑн ӗҫленине пытарма тӑрӑшни пулаҫ.

партти сиесӗнђе оппоçитси, малтанхи пекех, хӑй тӗллӗн пӗрлӗхлӗ пулђӗ, вӗсем сиесра парттийе хирӗç пыракан шухӑшсене пӑрахнӑ уйрӑм парттийгсӑсем пек мар, иккӗмӗш партти пек пулђӗç, терӗ. Çакнашкал сайавлени панӑ хыççӑн, тата тротскиссемпе çиновйӗвтсӑсем теккапӗрӗн 10-мӗшӗнђе пӗр йенђен, хӑйсен йӑнӑш шухӑшӗсене пӑрахманни çинђен, тепӗр йенђен, хӑйсен йӑнӑш шухӑшӗсене сарма тытӑнса тӑма сӑмах парса, хӑйсене парттирех хӑварма ыйтса сайавлени панӑ хыççӑн—çавӑн хыççӑн мӗн тумалла пулнӑха оппоçитсипе? Тепӗр йенђен тата тротскиссем, епӗр хамӑрӑн тӗп шухӑшсене пӑрахмаспӑр, вӗсене уставран иртмесӗр партти ђленӗсем хушшинђе сарма сӑмах паратпӑр, тесе сайавлени параççӗ. Çакӑнтан ӗнтӗ, оппоçитси хӑйӗн йӑнӑш шухӑшӗсене пӗрне те пӑрахманнине, хӑй партти сиесӗ умӗн парттийе хирӗç ӗçленине, йӑнӑшӗсене—йӑнӑш ӗç вырӑнне шутламанине куратпӑр.

### Оппоçитси пирки Сйес мӗн каларӗ?

Оппоçитси хуђӗсене, оппоçитси иртнӗ икӗ çул хушшинђе тунӑ ӗçсене пӑхса тухма, сйес комиççи уйӑрђӗ. Комиççи ку ӗçе пур йенђен те тӗрӗслесе пӑхнӑ, пур пек хутсене пурне те пӑхса тухнӑ, вара оппоçитси ђӑнахах иккӗмӗш партти пулса кайни, тактӗккӑ (ӗç майӗ) ыйтӑвӗсем пирки тухнӑ тавлашусем прокрамӑ (тӗп ӗмӗт) ыйтӑвӗсем çине кӗрсе кайни, оппоçитси, парттипе кӗрешсе, парттийе хирӗç, совет влаçне те хирӗç пыракан çул çине тӑни, оппоçитси парттипе совет влаçӗшӗн тӑшман пекех пулса кайни курӑннӑ. Комиççи хаçатоппоçитсионерсен (йађӗсене каласа тӑман епӗ, вӗсен йађӗсене сенђе çапнӑђђӗ), вирлӗ ӗçленӗ тротскиссенђен 75 çынна, татӑ сапронӑвтсӑсене 23 çынна, парттирен кӑлармалла тесе Сйеса сӗнђӗ. Комиççи сӗннине партти сйесӗ пӗр саслӑ пулсах çирӗплетрӗ, çапла вара пирӗн партти хӑй ретӗнђе пулнӑ лађакана тасатрӗ. Çакна йышӑннӑ хыççӑн, самай сйес хупӑнас умӗн, Камӗнӗвпа Çиновйӗв ушкӑнӗ, 23 çын, партти сйесӗ хушнисене пурне те йышӑнатпӑр, ӗçленӗ ђух парттипе совет ђиккисенђен тухса карӑмӑр, епӗр парттийе, тата Совет влаçне те хирӗç ӗçлерӗмӗр, епӗр хађ ӗнтӗ çавсене пурне те йӑнӑш ӗç вырӑнне шутлатпӑр, тата партти пур ыйтусем тӑрӑх йышӑннӑ постановленисене те тӗрӗс тесе шутлатпӑр, пире парттирех хӑварма ыйтатпӑр, тесе сайавлени пађӗ. Сйес çак сайавленине пӑхмарӗ, Тӗп Комиттета пађӗ, Тӗп Комиттета

ăна пăхса тухма, кама илмеллине—илме, кама илмелле мар—çавсене парт ги тулашĕнђех хăвармалла тума хушрĕ; ушкăнпа панă сайавленисене илмелле мар, кашни оппоçитсионер уйрăмăн çырса парсан анђах илмелле турĕ; панă сайавленисене 6 уйăх иртсен тин пăхма хушрĕ; оппоçитси пуçлăхĕсене парттийе хирĕç ĕçлеме ђармалли майсем тупма хушрĕ; хăйсем йăнăшнă пирки оппоçитсионерсен ретне ленкнĕ рапођђисене тўрлетме тăрăшма, тўрленменнисене, тўрлетме май çуккисене пĕтĕмпех парттирен тасатса кăларма, партти вăйне пĕтĕмпех ĕçе йама майлă тума хушса хăварђĕ. Кунта ыйту тухса тăрать: Камĕнĕв, тата ыттисем те вĕсене йертсе пыракан оппоçитсионерсен ушкăнĕ хăйсене парттире хăварма ыйтса панă сайавленийе сиес пăхманни тĕрĕс пулђĕши? Сиес йышăннă постановлени питĕ тĕрĕс. Мĕншĕн? Ђи малтанах акă мĕн каламалла: Тĕп Комиттет политтĕк ĕçĕсем çинђен тунă отђот тăрăх йышăннă ресолђутсире çапла каланă: парттипе оппоçитси хушшинђе тактĕккă (ĕç майĕ) ыйтăвĕсем пирки тухнă тавлашусем прокрамă ыйтăвĕсем çине кĕрсе кайнă, оппоçитси сарма тăрăшакан шухăшсем—меншевикла, парттийе хирĕç пыракан шухăшсем, пролеттариат тиктаттуришĕн тăшманлă шухăшсем пулаççĕ, ун пек шухăшсене саракансем парттире тăма пултараймаççĕ, тенĕ. Çакăн çинђен оппоçитси 2 ерпене йахăнах шухăшлама пултарнă. Çав 2 ерне хушшинђе оппоçитсин, ђăннипе каласан, вĕсем ĕнтĕ партти тулашĕнђе тăнине ăнланса илмеллеђђĕ, мĕншĕн тесен оппоçитси шухăщĕсене сиес парттийе хирĕçле пыракан, меншевикла шухăшсем вырăнне хурса пахаланă. Оппоçитси хăйĕн йăнăшĕсене пăрахмарĕ, вĕсене парттирен кăларса пăрахни çинђен татăклă йышăнсан тин сайавлени пађĕ. Çакă ĕнтĕ оппоçитсионерсем партти ђленĕсем пек шухăшлама манса кайнине, парттирен татăлса, уйăрăлса кайнине, хăйсем парттийе йертсе пыракансенђен пĕрисем пулнă та, çавăнпа пире парттирен кăларма хăйаймĕç, тесе шухăшланине кăтартать. Хăйсене парттирен кăларса пăрахсан тин вĕсем çавнашкал сайавлени параççĕ. Партти сиесĕ çав сайавленийе пăхнă пулсассăн мĕн пулађђĕши вара вăл? Вăл вара Комиççи токлађĕ тăрăх, вĕсене парттирен кăлармалла туса йышăннă постановленийе ђиперех улăштарни пулађђĕ, вăлах тата Тĕп Комиттет политтĕк ĕçĕсем çинђен тунă отђот тăрăх йышăннă ресолђутсине те тивеђђĕ. Тепĕр йенђен тата, партти сиесĕ оппоçитсионерсене

парттире хăвармалла туни, вĕсене малашне те парттийе хирĕç ĕçлеме сăлтав параҫҫĕ. Çавăнпа та сиес: оппоçитси çинҫен татăклă постановленийех йышăннă, терĕ. Оппоçитсионерсене парттирен кăларнă, урăх нийепле халап-йумах та пулма пултараймасть. Çакна ĕнтĕ парттин пур ҫленĕсене те ăнлантарса парас пулать, вĕсем ку ыйтăва тĕрĕс ăнланҫҫăр.

## Оппоçитсийе парттирен кăларса пăрахни пирĕншĕн хăрушă мар.

Пурне пĕрле пĕрлештерсе каласан мĕн каламалла пулатьха? Пирĕн парттире пĕр кана питĕ вирлĕ ĕçлесе тăнăскерсен ушкăнне парттирен кăларнă. Сталĕн йулташ çапла калать: унашкал тунинҫе тума май çукки, халҫҫен нихăçан та пулманни, тата хăрамалли нимĕн те çук, пирĕн партти историнҫе, ĕçсене питĕ трук урăх майсемпе тума тытăнмалла пулнă тапхăрсенҫе, парттийе йертсе пыракансенҫен хăшпĕрисем, ушкăнĕ-ушкăнĕпе те тухса ӳкнисем пулнă, партти унталла та, кунталла та пăркаланакансенҫен, лаҫакаран тасалать те, ҫĕрĕ йапала пек, малалла кайать. 1903 мĕш çулта парттин иккĕмĕш сиесĕ пулнă. Унта липералсемпе килĕшсе ĕçлеме пăрахса, çав липералсемпе питĕ хытă кĕрешмелле туни кирлĕ пулнă, патша влаçĕпе кĕрешме хатĕрленесси çинҫен сăмах татмалла пулнă. Парттийе вăл вăхăтра М а р т т ă в, С а с с у л и ҫ, П о т р е с с ă в, А к ç е л р о т, тата Л е н и н йертсе пынă. Трук пăрăнмалла пулнă та, труках 5 çын тухса ӳкнĕ, Л е н и н пĕҫҫенех тăрса йулнă. Парттийе ҫылайранпа йертсе пынăскерсем тухса ӳкнĕ, парттин çамрăк ҫленĕ Л е н и н йулнă. Партти пĕтрĕ, револҫутси пĕтрĕ, Ленин—тиктаттăр, пирĕнтен ирĕке, парттийе йертсе пырас ĕçе туртса илҫĕ те, пĕтерме илсе кайать, тесе хурах кăшкăрашма тапратаççĕ. Анҫах партти Ленин йертсе пынипе малаллах кайнă, унăн тĕп çулĕ те тĕрĕс пулнă.

1907—1908-мĕш çул. Куçа кĕретĕнех хĕçпăшалпа çапăçма пăрахса вăрттăн ĕçлеме тытăнмалла, анҫах куçа кĕретĕн мĕн тума май килет, çав майсемпе пуринпе те усă курмалла, кĕрешмелли çĕнĕ майсем тупмалла, куçа кĕретĕн мĕн тума май килнисемпе йепле усă курасси çинҫен халап татмалла. А л е к ç и н с к и, П о х т а н ă в, тата Р о ш к о в тухса ӳкнĕ—вĕсем çав вăхăтра парттийе йертсе пыракансем, питĕ паллăскерсем, пулнă, вара партти, лаҫакаран тасалнă та малалла кайнă.

Хаҙ ӗнтӗ епӗр тепӗр пӑрӑну тӑватпӑр—хулари, тата йалти кӑпиталисла йапаласене пур йенҙен те хытӑрах хӗстерме тытӑнатпӑр. Ҫак пӑрӑнува трук тумалла пулҙӗ—партирен пӗр пӗҙӗк пайӗ тухса ӳкрӗ, кӗсен-сурансем хӑйпӑнса ӳкрӗҫ. Пирӗн мӗлйун йышлӑ партти, ӗҫлекенсен класӗпе пӗрле, ӗҫсене тӗрӗс туса пырса, малаллах кайаҭ. Вӑл ӗнтӗ кивелсе, ватӑлса, ҫӗрсе кайнисем тухса ӳкнине, ҫӗнӗ вӑйсем ӳссе ҫитӗнсе пынине, пирӗн партти, ҙӗрӗ ҙунлӑ йапала пек, Ленин вӗрентсе хӑварнӑ тӑрӑх ӗҫлесе пырса, малалла кайнине кӑтартаҭ. Пирӗн партти 15-мӗш сйес пухӑннӑ тӗле питӗ пысӑк ӑнӑҫусем тума пултарҙӗ. Пирӗн партти 15-мӗш сйесра хӑйӗн Ленинла тимӗр пекех хытӑ пӗрлӗхне кӑтартрӗ. Вӑл ӗнтӗ пирӗн партти сйес йышӑннӑ постановленисене ҫанӑсене таварсах пурӑнӑҫа кӗртме тытӑнассине кӑтартаҭ. Анҙах та, вӑл пирӗн ӗҫре ҫитменлӗхсем пӗртте ҫуккине кӑтартмасҭ, ӑна апла ӑнланмалла мар. Ҫитменлӗхсем нумай. Ӑна епӗр хамӑрах пӗлетпӗр, ӑна епӗр хамӑр орканисатсин ӗҫӗсем ҫине пӑхсанах куратпӑр.

Сталӗн йулташ хӑйӗн токлатӗнҙе виҫӗ тӗрлӗ ҫитменлӗхсем ҫинҙен каларӗ: пӗрӗмӗшӗ—партти орканисатсисем тӗрлӗрен ӗҫсене йертсе пынӑ ҙух пулакан ҫитменлӗхсем, иккӗмӗшӗ—атминистратсиллӗ майпа ӗҫлес йӗркене парттийе куҫарни, виҫҫӗмӗшӗ—малашне мӗн пуласси ҫинҙен пӗртте шухӑшламасӑр йухӑма майлӑ шуса пыни. Пӗрӗмӗш ҫитменлӗх мӗнлескерши вӑл?

Сталӗн йулташ ҫапла калаҭ:

„Пирӗн ҙасҙасах, вырӑнсенҙе ҫеҫ мар, ҙенттӑрта та... ӗҫсене пӗр килйышӗнҙи ҫынсем пек, килти ӗҫсене тунӑ майлӑ тӑваҫҫӗ“.

Мӗн пулаҭха вӑл? Вӑл акӑ мӗн пулаҭ: пирӗн хушӑмӑрти пӗрпӗр ӗҫе йертсе пыракан йулташ йӑнӑш ӗҫ тусан, куракан-пӗлекенсемех ӑна тишкӗрмеҫҫӗ, унӑн йӑнӑшӗсене кӑтартса памаҫҫӗ, пытарса тӑраҫҫӗ, пӗрпӗринпе тӑшмансем пек пулса кайасран хӑраҫҫӗ. Епӗ ӑна тишкӗрмесессӗн, епӗ унӑн йӑнӑшӗсене кӑтартса памасассӑн, вӑл та вара мана тишкӗрмӗ. Вара пирӗн латсӑр лайӑх пӗтӗҫӳ, пӗрпӗринпе килӗштерсе пурӑнни пулӗ.

Партти ӗҫӗсене ҫавнашкал пӗр килйышӗнҙи етемсем пек пулса тума йурамасҭ. Пирӗн парттире ӗҫсене ун пек туни—киресӗр, ниме йурӑхсӑр хӑтланни пулаҭ.

Сталён йулташ çав киресёр йапала çинђен çапла калаť:

„Епёр, пољшевиксем, пётём тёнђене тишкёрекенсем, Маркс сăмаххисемпе каласан, пёлёте те тапăнакансем, хăшпёр йулташсем лăпкă пурăнђăр тесе, хамăр тунă ёçсене хамăрах тишкёрме пăрахсассăн—ун пирки вара епёр тăвакан питё пысăк, ђаплă ёç пётсе ларассинђен пуçне урăх нимён те пулма пултарайманни курăнсах тăмасти вара вăл?“

Малалла Сталён йулташ калаť

„Çав опываттёлле йапаласене, пысăк ёçсенех пёр килйышёнђи етемсем пек тăвас йăлана хамăр хушăран тасатса кăларса пăрахмасассăн, епёр вара пролеттариат револђутсионерёсен шутёнђен тухса ӳкёпёр, ђăнђăннипех пётёпёр—çавă курăнсах тăмастиха вара вăл?“

...Вăл та анђах мар, кăштах ăнăçусем пулни курăнсанах çитменлёхсене манса кайаççё, лăпланаççё, мăн кăмăлланаççё.

Ик-виç ăнăçу пулнă—вара тинёс лăпланаť те. Тата тепёр ик-виç ăнăçу пулђё—вара мăнкăмăлланса та кайаççё, çёлёкпе персех айала тăватпăр. Анђах йăнăшсем çаплах йулаççё, çитменлёхсем те пурнаççё, кёсен-сурансем пирён парттин ӳтпёвё ăшне сăрхăнса кёреççё.“

Çак киресёр йапала пётём партти ёретёнђе пур пулсан, пирён орканисатсире ун пек йапала тата та ытларах. Çав киресёр йăлана пётерессн çинђен пăрмайах шухăшламалла, тата вирлё, ђăтáмлă пулса ёçлесе, ăна пётерсе пымалла.

Партти хушшинђе атминистратсилле майсемпе ёçлеме пуçлани—ёнентерес вырăнне пусмăрлама пăхни иккёмёш çитменлёх пулаť. Ку çитменлёх питё хăрушăскер вăл. Вăл кашни хăй пуçăнса ёç тăвас йăлана пётерсе лартма, пӳроктаттисăм кăларса пыма пултараť. Парттин шалти темократтине аслăрах та аслáрах сарса пырса, çав çитменлёхпе питё хытă кёрешес пулаť. Тата пирён парттин ђленёсенђен пёр касси лăпкăн, ӳрёк-сӳрёкленсе, праçник ђухнехи пек кăмăлланса, малалла пăхмасăрах йухăма майлă шăваççё. Вăл ёнтё ним çинђен те каллă-маллă шухăшламасť. Ёçлессе те вăл, так ёçшён ёçлет, мёншён тесен ёçлес пулаť. Пирён хуçайствă ăçталла кайаť, мёнле çулсемпе ӳссе малалла кайса пыраť вăл, пулма пултаракан йăвăрлăхсене мёнле майпа сирсе йама

май пурши—çавсем çинђен, тата ыттисем çинђен те вăл шухăшламасť, хыпмасť вăл.

„Йухăма майлă шума, йухма май килнĕ ђух йухас килни, ăçталла йухса кайни çине çавăрăнса та пăхманни“... „мĕн пулаťха унтан? Мĕн пулни курăнсах тăраť: малтанах вĕсем пăнтăхса кайаççĕ, унтан кăвакараççĕ, вара вĕсене лађака, опываттĕл йăли хăй ăшне ĕмсе кĕртет, хайхисем вара ђипђипер опываттĕлсемех пулса кайаççĕ. Çавă ĕнтĕ самай улшăнса, урăхланса кайса револютси çинђен шухăшлама, револютсишĕн хыпăнма пăрахмалли çул пулаť“. (Сталĕн йулташ каланинђен).

Ман шутпа çакăн çумне урăх нимĕн те хушса каламалли çук, кунтан аванрах, лайăхрах калаймăн. Самай çак çитменлĕхсене вĕсемпе питĕ хытă кĕрешсе пĕтерсе пырас пулаť, мĕншĕн тесен пирĕн умра сотсиалисăм тăвас ĕçĕн питĕ пысăк ыйтăвĕсем тăраççĕ, вĕсене тумашкăн вăйлă, вирлĕ ĕçлес пулаť, вăй кирлĕ.

## Хуçалăх ыйтăвĕсем.

Халĕ епĕ хуçалăх ĕçĕн ыйтăвĕсем çине куçатăп. Парттин 15-мĕш сиесĕнђе пилĕк çуллăх план çинђен ыйту тăни çеç те пирĕн çитĕнўсене кăтатаť. Иртнĕ вунă çул ђылайрах вăрăм вăхăтсем хушши план тăрăх ĕçлесе пырас йĕрке çине куçма пĕтĕмĕшпех май панине, тата çĕршыва интустрилес ыйтăва, парттин прокрамми пек, татăклăнах лартма май панине пĕлтерет ку. Пилĕк çуллăх планăн тĕп шухăшĕ вăл интустрилес шухăш, урăхла каласан, пирĕн хамăр патра, халăх йаланах илсе тăракан йапаласене çеç туса кăларса пырасшăн тăрăшмалла мар, çитсă, тата ытти йапаласене туса кăларакан машшинсене туса кăларса пырассишĕн çеç те мар, пирĕн, халăх йаланах илсе тăракан йапаласене туса кăларакан машшинсене тăвакан машшинсем тăвассишĕн тăрăшмалла, урăхла каласан, массăна йаланах кирлĕ йапаласене туса кăлармалли машшинсене тăвакан происвотствăн хатĕрĕсене тăвассишĕн тăрăшмалла, çапла вара йут патшалăхсен аллинђен вĕçерĕнсе, йалхуçалăхне сотсиалисăм çулĕпе тата çирĕпрех йертсе пырассишĕн тăрăшмалла.

Пилĕк çуллăх плана тунă ђухне, çĕршыва интустрилес тĕп сатађсăр пуçне çитес çывăх вăхăтсенђе хамăр промышлĕннăçăн ўсĕмне кăпиталисла патшалăхсен промышлĕннăçĕнђен ўсĕмлĕрех туса, кăпиталисла патшалăхсенђен иртсе

кайма кирлине те асра тытмалла пулнă. Пирĕн çĕнĕ строиттĕлствă çĕнĕ технĕккăн никĕсĕ çинђе çеç, тата хамăр укçатенкĕпе çеç пулса пымаллине асра тытни кирлĕ. Урăх машшинсем лартса çĕнетес ĕç, урăхла каласан, ĕçе çĕнĕ майсемпе туса пырас ĕç науккăпа технĕккăн хаљхи вăхăтри шухăшĕсем тăрăх пулмалла. Пирĕн ума çак çĕнĕ строиттĕлствă ĕçĕнђе мĕн тери йăвăр сатађсем тухса тăни çакăнтан паллă. Тăваттăмĕшĕ, халăх йаланах илекен тĕрлĕ йапаласене, тата тĕрлĕрен машшинсене туса кăларса пырассине çеç асра тытмалла мар пирĕн, сотсиалисăм пайĕсене промышлĕннăçра ӳстерме çех мар (унта вăл ĕç ăнăçуллă), йалхуçалăхĕнђе те ӳстерес сатађа асра тытни пулмалла пирĕн. Çапла вара пилĕк çуллăх планăн ыйтăвĕсем йалхуçалăхне тĕпĕ-йĕрĕпех сотсиалисăм çулĕ майлă урăхлатас ыйтусемпе çыхăнса тăраççĕ. Анђах ку çителĕклĕ пулнă пулмĕђђĕ. Ку тĕлĕшпе, ĕçлекенсемпе хресђенсен пурнăçне аванлатса, промышлĕннăçăн таварĕсене йӳнетсе, йалхуçалăхне хăпартса, т. ыттисемпе те вĕсен пурнăçне пурлăх тĕлĕшĕнђен аванлатас тĕп сатађа лартмалла пирĕн. Пирĕн, хамăрăн класла тăшмансене кирек хăçан та çапса çĕмĕрме пултарма, Совет çĕршывĕн сыхлăхне кирлĕ таран çирĕплетмеллине асра тытмалла.

Малалла—илекен укçа-тенкĕпе хатĕрсене йăвăр промышлĕннăçпа çăмăл промышлĕннăç, урăхла каласан, тĕрлĕрен машшинсем тăвакан—йăвăр промышлĕннăçпа халăха ваљљи кирлĕ йапаласем хатĕрлекен—çăмăл промышлĕннăçăн пайĕсем тăрăх тĕрĕс пайласа валеçни кирлĕ. Кунта çирĕп, тĕрĕс хисепе илни кирлĕ, мĕншĕн тесен, укçа-тенке йăвăр промышлĕннăçа ытла нумай йарсан, çăмăл промышлĕннăç йăвăрлăх тӳсме, промышлĕннăç таварĕ çителĕклĕ маррине курса тӳсме пултарaт, çавнашкалах укçа-тенке çăмăл промышлĕннăçа ытлашши йарсан—йăвăр промышлĕннăçра йăвăрлăхсем курса тӳсме пултаратпăр.

Епĕ сире çак теçĕс майлă каласа панисем промышлĕннăçра та, йалхуçалăхĕнђе те план тăрăх ĕçлес ĕçре тĕп вырăнсем пулса тăраççĕ. Вĕсем пит те тĕплĕ хисепре пулмалла.

### Иртнĕ çĕнтерӳсемпе малашнехи ĕмĕтсем.

Мĕн туса çитернĕха епĕр иртнĕ вăхăтра хамăр хуçалăхра, тата сотсиалисăм строиттĕлствине вăйлăн туса пыма мĕнле майсем пурха пирĕн.

Иртнĕ икĕ çул хушшинђи çитĕнӳсем пирĕн çаксем (епĕ ђыхвăрсене пит те сахал кăтартса парап). Промышлĕннăçăн пĕтĕм протуксийĕ 1924—25 мĕш çулта вăрçăђђенхи çумĕнђе 63,7 прођђăн пулнă; 1926—27 мĕш çулта — 100,9 прођђăн, 1927—28 мĕш çулта 114,4 прођђăн пулмалла. Йалхуçалăхĕн пĕтĕм протуксийĕ 1924-25-мĕш çулта вăрçăђђенхи çумĕнђе 87,3 прођђăн пулнă, 1926—27-мĕш çулта—108.3 прођђăн, 1927—28 мĕш çулта—111,8 прођ. пулмалла. Пирĕн малтанрах йалхуçалăх протуксийĕ хăвăртрах ӳссе пынă, халĕ промышлĕннăç хăвăртрах ӳснине куратпăр, йалхуçалăхĕ кайа йулса пыраť. Ку мĕншĕн апла пулса пыни паллах: пире пирвайхи вăхăтра промышлĕннăçа йусаса йама йăвăр пулнă пулсан, йусаса çитерне хыççăн промышлĕннăçăн малалли ӳсĕмĕ вăйланса пыраť, йалхуçалăхĕ, сапаланђăклипе, тата кайа йулнипе вăрахăнтарах ӳссе пыраť. Анђах йалхуçалăхĕ кайа йулса пынă йапала вăл йĕркеллĕ мар.

Халĕ пирĕн çитĕнӳсене кăтартакан урăх ђыхвăрсене илер, вăл патшалăх тупăшлăхĕ. 1924—25 мĕш çулта патшалăх тупăшлăхĕ 15589 мĕлйун тенкĕ пулнă; 1925—26 мĕш çулта вăл 29,9 прођђăн ӳснине куратпăр; 1926—27 мĕш çулта 11,4 прођ. ӳснĕ, 1927—28 мĕш çулта 7,8 прођ. ӳсмелле, вара 24 мĕлйарт тенкĕрен те иртет. Патшалăхăн пĕтĕмĕш тупăшлăхĕ кăпиталисла патшалăхсеннинђен пирĕн хăвăртрах ӳсет. Амерĕкĕн патшалăх тупăшлăхĕ çулсерен 3—4 прођђăн хутшăнса пыраť, Анклин --1,8 прођ. Ак сире, ӳсĕмĕн утăмĕсем тĕлĕшĕнђен епĕр, кăпиталисла патшалăхсенђен малта пынине кăтартакан ђыхвăрсем. Çак çитĕнӳсене, пирĕн хуçалăх йĕркеллĕ, план гăрăх ĕçлесе пыракан хуçалăх пулнипе туса çитернĕ.

Промышлĕннăç протукси халăх хуçалăхĕн пĕтĕм протуксин хисепĕнђе (çулйĕрпе електрификкатсийе шутламасан) 1924-25-мĕш çулта 32,4 прођђăн пулнă, иртнĕ çулта 38 прођ. 1926-27 мĕш çулта промышлĕннăçăн пайĕ 6 прођ. таран ӳсет, йалхуçалăх протксийĕ çавнашкалах 6 прођ. йахăн ђакаť, 1927—28 мĕш çулта йалхуçалăхĕ 59,8 прођђăна çитеђђен ђакмалла, промышлĕннăç 40,9 прођђăна çитеђђен ӳсмелле. Ку, пирĕн промышлĕннăçăн халăх хуçалăхĕнђи вырăнĕ хăвăрт ӳснине кăтартаť. Çапла ĕнтĕ оппоçитси пирĕн промышлĕннăç кайа йулса пыраť, тени тĕрĕс мар.

Сутуилӳ çинђен епĕ нумайах каласшăн мар, кунта та пирĕн тавар çавăрнăçĕнђе опђĕствăлатнă пай хăвăрт ӳссе

пыраԏ. 1924—25 мĕш çулта курттăм сутуилӳре опђĕствăлатнă пай 90,6 прођ. пулнă, вак-тĕвек сутуилӳре—57,3 прођ., 1926—27 мĕш çулта курттăм сутуилӳре—94,9 прођ., вак-тĕвек сутуилӳре—67,4 прођђăн. 1927—28 мĕш çулта татах малаллла йарса пымалла. Патшалăх аллинђи шултра промышлĕннăçĕн протуксийĕ пĕтĕм çĕршыври промышлĕннăçăн протуксийĕ çумĕнђе 77 прођ. пулаԏ, çапла ĕнтĕ патшалăх аллинђе мар промышлĕннăçпа вак промышлĕннăç 23 прођ. çеç туса кăларса тăраççĕ. 1924—25 мĕш çулта, унђђенхи çултипе танлаштарсан, протукси 42,2 прођ. ӳснĕ, 1926—27 мĕш çулта 18,2 прођ. ӳснĕ, 1927—28 мĕш çулта 15,8 прођ. ӳсмелле. Пилĕк çуллăха тунă план тăрăх промышлĕннăç протуксийĕ 76,7 прођ. ӳсмелле,—кашни çулта вăтам шутпа 15 прођ. ӳссе пымалла. Пилĕк çул хушшинђе пирĕн промышлĕннăçăн протуксийĕ вăрçăђђенхинђен икĕ хут ытларах нумайланмаллине пĕлтерет ку. Пирĕн промышлĕннăçăн пур йенĕсенђе те епĕр протуксийе икĕ хут вăйлатсан, вăл пысăк çитĕнӳ пулмалла. Çĕршывăн, тата пĕтĕм промышлĕннăçăн пур протуксийĕ, кунта патшалăх, вак, тата усламçăсен аллинђи промышлĕннăça та кĕртсе шутласан, кашни çул протукси 12 прођ. хутшăнса пымалла, пилĕк çул хушшинђе промышлĕннăç протуксийĕ 70 прођђăн нумайланмалла. Амерĕкре промышлĕннăç протуксийĕ кашни çул 3 прођђăнран 8 прођђăна çитеђђен ӳсет. Раççейре ĕлĕкхи саманара 8—10 прођђăна çитиђђен ӳснĕ. Çапла ĕнтĕ, ђылай йăвăрлăхсем пулсан та, ӳсĕм тĕлĕшĕнђен пирĕн çĕршыв ытлата малта пыракан кăпиталисла патшалăхсенђен те маларах пыраԏ. Çакăнтан пирĕн план тăрăх ĕçĕн аван йенĕсем те паллах.

Çĕршыва интустриленине кăтартакан, машшинсемпе станuксене хăй туса кăларакан машшинсене тăвас происвотствă пĕтĕм промышлĕннăçра мĕнле выранта тăраԏха? 1924—25 мĕш çулта вăл 34,1 прођђăн пулнă, 1927—27 мĕш çулта—37,6 прођ., 1927—28 мĕш çулта 38,6 прођ. пулмалла. Çакăн пек, машшинсемпе ĕç хатĕрĕсене туса кăларакан пирĕн йăвăр промышлĕннăç ђĕрин выранĕ. Çитес пилĕк çул хушшинђе хамăр промышлĕннăç ӳсĕмне вăйлатма шутлатпăр, промышлĕннăç протуксийĕ вăрçăђђенхи çумĕнђе икĕ хут майлах нумайланаԏ, анђах çапах та промышлĕннăçăн хăвăрт вăйланса пыракан протукси таварĕсем халăх мĕн ытнă

таранах çителёклĕ пулса пыраймĕç. Çакăнтан паллах, йăвăрлăхсем пулаççĕ, вĕсене пирĕн пит те тĕплĕн хисепе илсе пырса, çак йăвăрлăхсене асра тытса план тăрăх ĕçе туса пымалла. Йăвăр промышлĕннăçăн хăш йенĕсене вăйлатмалла пулаť пирĕн. Пирвайах пирĕн електрофиккатси планне ĕçе кĕртесси çине, хура, тата тĕслĕ (цветная) тимĕр-тăмăр промышлĕннăçне, хими промышлĕннăçне вăйлатасси çине, çĕре минерал çăнăхĕсемпе çемçетесси, нехтĕ, торф тупса кăларасси çине, йалхуçалăх машшинĕсене тăвасси çине, карапсем тăвасси çине, електритсă тата ылттăнпа платтинă промышлĕннăçĕ çине, тата тĕрлĕрен машшинсем тăвасси çине çаврăнса пăхмалла пулаť. Çак уђђаскăсем çине пирĕн пит те тинкерсе пăхмалла, савăтсене тăвасси çине çеç те мар, йурăхлă туса лайăхрах усă курма май пултăр тесе, сырйо (ђĕрĕтавар) саппасĕ пуррине, протукси хакне йӳнетме, çĕршывăн сыхлăхне çирĕплетме кирлине хисепе илсе, вăл савăтсене ăçта лартсан аванрах пулмалли çине те пит те асăрхаса пăхмалла.

### Пирĕн умри йăвăрлăхсем.

Тĕп строиттĕлствăра пирĕн çитменлĕхсем пит те нумайха' кунта пит те пысăк йăвăрлăхсем тухса тăраççĕ, вĕсене ним тытăнса тăмасăр çĕнтерсе пымалла пулаť. Пирĕн çĕнĕ строиттĕлствă халĕ йĕркесĕр пулса пыраť, пит те хакла лараť— вăрçăђђенхипе танлаштарсан иккĕ çурă хут ытларах хаклă.

Сиесра Рыккăв йул. халĕ хăшпĕр ђух хапрăк-савăтсене тунă ђух пулакан паллăрах ĕçсем çинђен кăтартса пађĕ. Савăтсене тума тытăннă ђух 7 мĕлйунпа туса пĕтерме шутлаççĕ, туса пĕтериђђен 20 мĕлйун тенкĕ пĕтереççĕ, йе 8 мĕлйун тенкĕпе туса лартмалла пулнă савăт 10 мĕлйун тенке ларнă, т. ыт. те.

Йăнăшса ĕçленипе, асăрхаса пыманнипе, ĕçе пăхса йĕркелесе пыманнипе хамăр çĕнĕ строиттĕлствăна шутласа хунă укçа-тенкĕ çитмиђђенех вăйлатса йарсан, епĕр пилĕк çуллăха тунă пĕтĕм плана пăсма пултаратпăр. Тĕп строиттĕлствă ĕçне 20 мĕлйарт йама шутлаççĕ.

Тума тытăннă претпрйаттисене тунă ђухне, вĕсене тума тытăнас умĕн панă укçа-тенкĕ çитмест пулсан, вĕсем укçа-тенкĕ татах ыйтаççĕ пулсан, тата епĕр пур çĕртре те хапрăк-савăтсене тума тытăннă хыççăн вĕсене тунă ђухне строиттĕлствă прокраммине çуррине хăпартсан, вара татах 10 мĕлйарт тенкĕ кирлĕ пулаť. Çакăн ђул укçана пирĕн ниçтан та

тупма çук, йут патшалăхсенђи кăпиталиссем пире укçа парас çук, парсан та вĕсемшĕн пысăк прођђăнсем тӳлемелле пулаť.

Çавăнпа пирĕн тĕп строиттĕлствăна пĕтĕм вăйран йӳнĕ хака лартма тăрăшмалла, ăçта, мĕнле савăтсем тумаллине, строиттĕлствăн планĕсемпе проекђĕсене пит те асăрхаса тумалла.

Сйесра Рыккăв йул. Ферканра пиравăр хапрăкне туни çинђен илсе кăтартса пађĕ: ђукун çулран 4—5 километтăр, ĕçмелли шывран 17 çухрăмра, происвотствă вађђи шывран 14 çухрăмра, тата ĕçлекенсем вађђи пурăнма çуртйĕр çук вырăнта. Йури пекех, пирĕн Сойусри ђи усал, халăх пурăнман вырăна тĕлленĕ. Çапла вара, вырăнĕ йурăхлă мар пиркийех çĕрĕçĕн кашни купĕ, 4 т. те 50 пус вырăнне, 14 тенке ӳкет те ĕнтĕ.

Кунсăр пуçне хăшпĕр туса çитернĕ хапрăксемпе савăтсем тулли вăйпа ĕçлемеççĕ, промышлĕннăçăн ђи кирлĕ пайĕсем те, сăмахран, електритсă стантсисем, мĕн ĕçлеме пултарнă таран ĕçлени çук,—çав вăхăтрах çав вырăнсенђех çĕнĕрен стантсăсем лартасшăн тăрмашаççĕ.

Епĕр хамăр хуçалăха çакăн пек туса пырсан, ырриех пулас çук. Хамăр Ђăваш респуплĕкĕнђе те çĕнĕ савăтсем лартма шутлатпăр епĕр, сăмахран, Çĕмĕрле компинађĕ, Шупашкарта, т. ыт. те. Туса çитернĕ савăтсем хупăнса ан ларђђăр тесен, вĕсенђе хуçалăх ĕçне пĕлсе туса пыни кирлĕ, ĕçе аван пĕлсе ĕçлекенсем кирлĕ пулаççĕ. халĕ мĕн куратпăрха епĕр? Пирĕн вак претприйаттисем, хăма çуракан савăтсем, т. ыт. те ĕçлеме пултарнă таранах ĕçлемеççĕ. Епĕр халĕ пĕђĕк претприйаттисенђе те кирлĕ таранах ĕçлейместпĕр, сырйо кирлĕ таранах тăратаймастпăр, компинатсем туса лартма ĕмĕтленетпĕр тата. Епĕ компинатсене хирĕç мар, вĕсене тумаллах, анђах хуçалăх ĕçне аван туса пыма вĕренмелле.

Пирĕн хамăр çĕнĕ строиттĕлствăна йепле те пулсан йӳнĕ хака лармалла тумалла. Строиттĕлствăна пилĕк çул хушшинђе 10 прођђăнлăх йӳне ӳкерсен, 2 мĕлйарт тенкĕ укçа тирпейленет, 15 прођђăнлăх йӳнетсен – 3 мĕлйарт тенкĕ перекетленет; 10—15 прођђăн таран перекетлесен, епĕр 2—3 мĕлйарт тенкĕ укçа хăварма пултаратпăр, вăл укçа-тенкĕпе татах темиçе хапрăк-савăт тума, йе ăна йалхуçалăхне йама пулаť.

Ҫак кăтартса панă йăвăрлăхсемсĕр пуҫне пирĕн хуҫалăхри ђăрмавсем ђылай, вĕсем: тавар ҫителĕклĕ марри, промышлĕннăҫпа йалхуҫалăх протукси хакĕсем йĕркеллĕ, пĕр пек марри, ҫĕр хĕсĕкки, йăвăр промышлĕннăҫ ваљљи сырйо ҫителĕклĕ марри, тырпул нумай тăвакан районсенђе йалхуҫалăхĕ, пуринђен ытла, тырпул тăвас ĕҫ кайра пыни, сотсиалисăм строиттĕлствине хăвăртрах вăйлатса йама тĕрлĕрен таварсене йут патшалăхсене йарас ĕҫ кирлĕ таранах пулса пыманни, пире кирлĕ таран укҫа тенкĕ ҫукки. Пилĕк ҫуллăха тунă план тăрăх ҫак йăвăрлăхсене ҫемҫетмелле, анђах вĕсене пĕтĕмпех пĕтерме пултараймастпăрха. Ҫĕршывăн хуҫалăх пурнăҫне ҫителĕклĕ пĕлсе йертсе пымасан, ҫак йăвăрлăхсем пĕтĕмĕш йăвăрлăх патне илсе ҫитерме пултараҫҫĕ. Ҫак йăвăрлăхсене пирĕн кирлĕ таранах хисепе илсе, асра тытса пымалла.

Халĕ таварсене укҫа пур пирки ыйтни тата промышлĕннăҫ таварĕсем ҫителĕклĕ марри пирĕн ума ђылай йăвăрлăхсем кăларса тăратаҫҫĕ. Мĕнтен килет ҫакăн пек йапала? Кăтартса панисем тăрăх, укҫа-тенкĕ халăх аллинђе 400 мĕлйун тенке йахăн, таварсем ҫитмеҫҫĕ. Мĕншĕн ҫитмеҫҫĕ таварсем? 1926—27 мĕш ҫулăн 4-мĕш кварттăлĕнђе (ийуљ, авкуст, ҫентăпĕр) тавар туса кăларнине 1925-26-мĕш ҫулта ҫав кварттăлтах туса кăларнипе танлаштарсан, епĕр ҫакна куратпăр: туса кăларнă тĕрлĕрен таварсен хисепĕ, хака йӳнетнĕ тăрăх 300 мĕлйун тенке шута кĕртмесен, пурĕ те ҫур прођђăн ытларах ҫеҫ ӳснĕ. Патшалăх промышлĕннăҫĕнђи ĕҫлекенсен ĕҫ укҫийĕ пĕтĕмĕшпе 16 прођђăн ӳснĕ, хресђенĕн тупăшлăхĕ, налоксене шутламасан, 31 прођђăн ӳснĕ, йалпа хула тавара илме пултарни пĕтĕмĕшпе 20 прођђăн ытла ӳснĕ. Ҫак ђыхăрсем тен ытлах тĕрĕс мар пулĕ те, анђах вĕсем пĕтĕмĕш карттина кăтартса параҫҫĕ.

Промышлĕннăҫ таварĕсем ҫителĕклĕ маррипе хресђен халăхĕ тырпул сутасран тытăнкаларах тăрать, ăна укҫа-тенкĕ кирлĕ пулсан, вăл хăйне тупăшсăртарах йапаласене сутма тăрăшать. Халĕ хресђене выљăх-ђĕрлĕх йапалисене, техниђĕски куљттурăсене, ҫу вăррисене, т. ыт. сутни тупăшлă, мĕншĕн тесен, ку йапаласен хакĕсем тырпулăнђен ҫӳлĕрех тăраҫҫĕ, сăмахран: вăрҫăђђенхипе танлаштарсан ырашăн интĕксĕ (халђхи хак вăрҫăђђенхи хак ҫумĕнђе) 101 прођђăна, туллăн — 113 прођђăна ларать, техниђĕски куљттурăсен (йĕтĕн,

кантăр, т. ыт. те)—135 проҫ., выҫăх-ҫĕрлĕх йапалисен—186 проҫ., ĕне çăвĕн—171 проҫ., çăмартан—215 проҫҫăна ларат̆.

Çакăнтан, хресҫен халăхне тырра мар, ытти çимĕçсене сутни тупăшлăраххи уççăнах курăнат̆, çапла вара Камĕнĕвăн „кулак йĕркеленĕ“ тенĕ сăмаххисем тĕрĕс мар. Кунсăр пуçне хресҫен халăхĕ айăккалла ĕçлеме çӳресе тупăшлăх курат̆, ун пек çĕре вуншар пиншерĕн кайса хутшăнса çӳреççĕ. Йалхуçалăхĕн тĕрлĕрен тырпуллисен хакĕсем хушшинҫе çакăн пек ăрасналăх пурри, тырпулпа йалхуçалăхĕн ытти çимĕçĕсен хакĕсем хушшинҫе çакăн пек пысăк ăрасналăх пурри тĕрĕс йапалаи?

Пĕтĕмĕшпе илсен хаксенҫи кун пек ăрасналăх вăл тĕрĕс. Кун пек пулни хресҫенсене техниҫĕски кулҫтурăсене, çу вăррилле тырпулла нумайрах акса тума, выҫăх-ҫĕрлĕхе ĕрҫетме хушат̆, анҫах ку ăрасналăх халҫхи вăхăтра мĕн тери тĕрĕссине тĕплĕн калама йăвăр. Ăна сăнаса тĕрĕслесе пăхас пулат̆.

Халҫхи вăхăтра хаксем çавăн пек ăрасналлă тăни тырпул пухса хатĕрлес ĕçе пит те ҫăрмантарса тăрат̆, 1925-мĕш çулхи пилĕк уйăхрипе танлаштарсан, кăçал çав уйăхсенҫех ун ҫухнехинҫен 25 проҫ. сахалтарах пухнă. Ку йăвăрлăхсене тĕрĕс ăнласа илсе, вĕсене пĕтерсе пымалли майсене кăтартса хумалла.

## Йăвăрлăхсене пĕтерме мĕн тумалла.

Мĕн тумалла? Таварсем хуласенҫе пăҫланса выртмалла мар, Ҫăваш респуплĕкне нарет тăрăх килекен таварсене тырпул нумай акса тăвакан районсене тăратмалла, хресҫен халăхĕ тырпулла нумайрах сутма пултартăр. Тырпул пухакансен çивĕҫ пулмалла, аппарат ĕçлетĕр, кирлĕ таранах çивĕҫ ĕçлесен, тата ку ĕçе халăх массине хутшăнтарсан çеç епĕр ĕçе аванлатма пултаратпăр. Тырпул пухса хатĕрлес кампаҫи çине ку таранҫҫенхинҫен вирлĕрех çаврăнса пăхмалла. Пĕтĕмĕшпе илсен, тырпул пухас ĕçе йепле иртернинҫен тырпулла йут патшалăхсене сутасси те палăрса тăрат̆, пирĕн ăна йаланах асра тытмалла.

Кунсăр пуçне, пирĕнпе кăпиталисла патшалăхсем хушшинҫи ĕçсем йăвăрлансан та, выçлăх мĕн пулсан та пире саппас кирлĕ.

Оппоçитси хӑтланнӑ пек калаçмаллӑх йӑвӑрлӑхсемех çук пирӗн хуçалӑхра. Çавӑрнӑç укçа-тенкӗ çителӗклӗ маррипе йӑвӑрлӑхсем пур, укçа-тенкӗ парса илес йӗркере уйрӑм хӗсӗк вырӑнсем пур, мӗншӗн тесен, промышленнӑçпа финанс планӗсене укçа-тенкӗ мӗн ђул çитмеллине, тата мӗн таран тума пултармаллине хисепе илмесӗр туса пынӑ. Çавӑнпа сйес постановлени плана укçа-тенке хисепе илсе тӑвасси çинђен калаӑ. Малалла, таварсен хакӗсене йӳнетнӗ, анђах таварсен хӑйсене ларнӑ хакӗсем малтанхи пекех йулнӑ, урӑхла каласан епӗр тавар хакӗсене йӳнетнӗ, анђах таварсен хӑйсене ларнӑ хакне йӳнетмен, кунтан услам сахалланни пур, тата хӑшпӗр çӗрте упыткӑсем те пулаççӗ. Усламçӑсене тырпул пухас çӗртен сирпӗтсе кӑларма, тырпул пухас ӗçе укçа-тенкӗ хушса памалла пулђӗ, тата сутуилӳпе тырӑ пухакан орканисатсисен хисепне вырӑнсенђе пысӑклатмалла пулђӗ. Çак икӗ йапала укçа-тенкӗ йӗркине вӑхӑтлӑха йӑвӑрлӑхсем кӳђӗç, анђах ку йӑвӑрлӑхсем çитес ик-виç çул хушшинђе те пулма пултараççӗ, мӗншӗн тесен çӗршыва интустрилеме пилӗк çул хушшинђе тухса пымалли 20 мӗлйарт тенкӗ укçа тӳрех хӑй уссине параймасӑ, мӗншӗн тесен ӗçлекенсенђен пӗр пайӗн, халӑх йаланах илсе тӑракан таварсене туса кӑларас çӗрте мар, çӗнӗ хапрӑк-савӑтсем тунӑ çӗрте ӗçлемелле пулаӑ. Малалла, пирӗн çӗршывӑн сыхлӑхне те манса хӑвармалла мар, унта та укçа-тенкӗсӗр пулмасӑ. Çаксем пурӗшӗ пӗрле, пӳтшет тистсиплинипе çыхӑнса тӑракан ӗçсене вӑхӑтра туса пыма хушаççӗ. Парттин 15-мӗш Сйесӗн постановлени тӑрӑх пуйан пурӑнакансенђен налоксене, тата й.-х. налокне те нумайрах илмелле, ђухӑн хресђенсемпе вӑйсӑр хуçалӑхсене 35 прођ. налокран хӑтармалла. Пирӗн пӳтшетӑн тупӑшлӑх пайӗнђе сайом пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраӑ. Кунтан сайомсем çине, тата патшалӑхӑн кивçен парса илекен орканисатсийӗсене сарасси çине вирлӗн пӑхма кирли курӑнса тӑраӑ. Интустри сайомӗ тӑрӑх сӑнанине уйрӑмах хисепе илсе, çӗнӗ сайомсем кӑларса пырас политтӗке малашне те туса пымалла.

Хресђен сайомне кӑлармалла. Вӑл хресђен халӑхӗшӗн çывӑх та, ӑнланмалла та пултӑр. Выђаса илекенсене йалхуçалӑх машшинӗсем памалла, выђаса илни ытлах хаклӑ йапалах мар пулсан та, выђаса илекенсем нумай пулаççӗ. Пирӗн çӗршыва интустриленӗ çӗре халӑхӑн хӑйӗн укçи-тенкине йертме пур майсене те тупмалла. Халӑх хӑй перекетлесе

пухнӑ укҫи-тенкине перекет кассисене, укҫа-тенкӗ кивҫен парса илекен уђрештенисене хума кирли ҫинђен, сайомсене илмелли ҫинђен пирӗн пӗрмайах каласа ӑнлантармалла, мӗншӗн тесен апла туни Совет влаҫне йут патшалӑхсенђи кӑпиталиссемсӗрех майлашма май парать. Совет влаҫӗ ирӗксӗрех йут патшалӑхсене кирек мӗнле те пулин, таварсем кивҫен илнипеи, укҫа-тенке кивҫен илнипеи, кивҫене кӗрсен— вӗсемшӗн пит те пысӑк прођђӑн тӳлемелле пулать. Апла тусан епӗр кӑпиталиссене Совет Сойусӗнђи ӗҫлекенсемпе хресђенсен шутӗнђен пуйма май паратпӑр.

Совет Сойусӗнђи ӗҫхалӑхӗн тупӑшӗ йут патшалӑхсене каймалла мар, ӑна хамӑр патрах хӑварасшӑн тӑмалла пирӗн. Анђах ӑна тума пушӑ укҫа-тенке уйрӑм кӑсйасенђе тытса усрамалла мар. Вӑл укҫа-тенке пӑтшалӑха усӑ курма памалла. Вӑл укҫа-тенкӗ вырӑнсӑр вытађђен хамӑр ҫӗршыва ингустрилес ҫӗре кайтӑр. Вӑл патшалӑхшӑн та, ӗҫхалӑхӗшӗн те усӑллӑ, тата хамӑрах йут патшалӑхсен аллине кӗрсе ӳкесрен те хӑтарать.

Йут патшалӑхсене тӗрлӗрен тавар сутас ӗҫ ҫине пирӗн кунђђенхинђен вӑйлӑрах ҫаврӑнса пӑхмалла. Ку ӗҫ пирӗн ытлах аван пыраймасть, пӗрђӗллӗ тырпула сутас ӗҫре ђӑрмавсем пулаҫҫӗ пулсан, иккӗмӗш вырӑнта тӑракан турпулсене сутас ӗҫе вӑйлатмалла. Тулӑ акса тӑвассине ӳстермешкӗн пӗрђӗллӗ тырпулсене, пуринђен ытла Украйнӑра, Атӑл тӑрӑх, ҫурҫӗр йенђи Капкасра, Ҫӗпӗрте акса тӑвасси ҫине ҫаврӑнса пӑхни кирлӗ.

Ак мӗнле сатађсем тухса тӑраҫҫӗ пирӗн пилӗк ҫуллӑха тунӑ планран, тата сутуилӳн халђи ӗҫӗнђен. Ҫакӑнтан ӗҫре йертсе пыракан ӗҫлекенсен ӗҫе хӑвӑртрах туса пырасси, тӗрӗслетсе аван татасси, тата кашни харпӑр хӑйне панӑ ӗҫшӗн ответ тытма кирлине ӑнласа илесси ҫинђен тепӗр хут каласси тухса тӑрать. Вӑл тӗлӗшпе пирӗн кашнийех сиссе ӑнласа илни ҫук.

Ӗҫӗн палӑртса хунӑ майӗсенђен мӗн кӗтсе илмеллине пӗлни, кашни ӗҫлекенех—парттире тӑраканни те, тӑманни те ӗҫшӗн ответ тытнине тавҫӑрса илни пирӗн ҫук. Сӑмахран, халӗ ушкӑнлӑ килӗшӳсене пӑхса тухса ҫӗнӗрен тӑваҫҫӗ, ӗҫ уксахлать. Тӗрлӗрен пӗђӗк ыйтусем пиркийех тавлашусем пуҫланса кайаҫҫӗ, вара ӗҫе треттейски сута параҫҫӗ. Мӗне пӗлтерет ку? Ку, пирӗн хуҫалӑх ӗҫӗнђе ӗҫлекенсенђен хӑшпӗрисем ђи хӑйсен ӗҫӗнђенех пӑрӑнасшӑн, хӑйсем ҫине ответлӑх

илесшĕн мар.—Третгейски сут ĕçе татса парат̆ те, ĕçлекенсем умĕнђе те, партти умĕнђе те, çÿлти пуçлăхсем умĕнђе те мана ответ тыттарасран хăтарат̆, тенĕ пек. Кун пек хăтланнипе вăл хăйĕн пуçлăх сăнпиђне çухатнине хисепе илсе çитерейместь. Çакăн пек йапаласене епĕр кашни утăмрах куратпăр, ун пирки пирĕн ушкăнлă килĕшÿсене тунă ђух хирĕçусем ђылайах пулаççĕ. Çакăнтан, паллах, кашниннех хăй ĕçĕшĕн ответ тытма кирли çине çаврăнса пăхмалла. Епĕр хуçалăх ĕçне ђи аван ĕçлекенсене лартатпăр, анђах çапах та вĕсем пĕђђенех ĕçе туса çитереймеççĕ, йăвăрлăхсем нумай, паллах криттĕклени кирлĕ, епĕр йăнăшсене палăртса пыратпăр, çитменлĕхсем çине кăтартатпăр, ĕçе пĕлсе криттĕклени мĕн ђул нумай, пурĕ пĕрлешсе криттĕклени мĕн ђул нумай пулса пырат̆, çавăн ђул хăвăртрах епĕр хамăр çитменлĕхсене пĕтерсе пырăпăр. Епĕр уйрăм ĕçлекенсем çине тăрăнма шутламаннине, хамăра хамăр çех криттĕкленине кашни ĕçлекенĕнех ăнласа илмелле.

Рыккăв йул. хуçалăх ĕçĕнђе ĕçлекенсенпе ĕçре пуçлăх пулса ĕçлекенсен ответлăх çинђен каланă ђух, çапла каларĕ: ...епĕ тăтăшах пĕр-пĕр ĕçшĕн кам ответ тытнине тупаймастăп. Хаљхи вăхăтра хуçалăх оркăнĕсен пуçлăхĕсенђе пур çĕрте те пекех комуниссем лараççĕ. Вĕсенђен ђылайĕшĕ технĕккă ĕçĕсене вĕренмен, вĕсем тĕхнĕккă тĕлĕшĕпе кирлĕ таран пĕлни çук. Анђах çапах та вĕсем технĕккăпа тата хăшпĕр ытти ыйтусем тăрăх йышăннисемшĕн те тăтăшах хăйсем çине ответлăх илеççĕ. Ку, ĕçе самай ответсăрлăх кÿрекен ђылайах май пулĕ, тесе шутлатăп епĕ".

Малалла Рыккăв йул., пĕр-пĕр ĕçшĕн, йе проектăшăн Йевроппăпа Америкри пур патшалăхсенђе те тума хушнă çпетсиалиссем ответ тытни çинђен калат̆. Пирĕн ответлăх комунис çине тийенет, мĕншĕн тесен пур хутсем çине те комунис ал пусат̆. Çакăн пек йапалана малашне çине тăрсах пĕтермелле. „Ĕçре пуçлăх пулса ĕçлекенсене, тата пур ĕçлекенсене те вĕсем ыттисен шухăшĕсем, сĕннисем хыççăн миçе хутђен ал пусни тăрăх мар, ĕçе хăйсен шухăшĕсем тăрăх, хăйсен сотрутнĕкĕсене мĕнле пĕрлештернĕ тăрăх, вĕсем çине мĕнле ответлăх хуни тăрăх хак памалла." Ак мĕн каларĕ Рыккăв йул. кашни ĕçлекенĕнех хăйне тума панă ĕçшĕн ответ тытасси, тата уйрăм ĕçлекенсем хушшинђе ĕçе мĕнле валеçсе парасси çинђен каланă ђухне.

Çак шухăш çинђен пур халăха та пĕлтермелле, ăна уђрештенисен алăкĕсем çине çырса çапмалла, тесе шутлатăп епĕ. Ĕçре кашни пуç пулса ĕçлекенех, кашни ăрасна ĕçлекенех ун çине сăмсапа пырса тăрăнтăр. Кашнийех хăй çинђе мĕнле ответлăх выртнине систĕр. Хуçалăх ĕçне туса пырасси вăл пит те йăвăр ĕç. Вăл ĕçе туса пыма хăнăху та, пĕлни те, тĕрĕс-тĕкĕл ĕçлени те, ĕçе халăха хутшăнтарни те кирлĕ. Хамăр çеç епĕр ку ĕçе туса çитерейес çук, пилĕк çуллăха тунă план тавра пĕтĕм ĕçхалăхне пĕрлештерни кирлĕ. Сиесра, пилĕк çуллăха тунă план хăй тавра ĕçлекенсен класĕпе парттин пĕтĕм шухăшĕсене пĕрлештерекен вăй пулса, пĕтĕм ĕçлекенсен класĕн, парттин, тата хресђен халăхĕн хăйсен шухăшĕсене пилĕк çуллăха тунă плана ĕçе кĕртес тавра йавăçтарђђăр, пурте çак тĕле тăрăнса ĕçлеђђĕр, терĕç. Ку, халăха ĕçе хутшăнтарса пырассине вăйлатма хушать. Мĕнле йăвăрлăхсем пурха кунта? Çарлă комунисăмпа хуçалăха йусаса пынă тапхăрта хуçалăхра пулса йулнă йĕрке хаљхи вăхăтшăн йурăхлă мар. Кĕçĕн оркăнсем çӳлтисене пур йенђен те пăхăнса тăнипе, харпăрхăй шухăшне ĕçре туса пыма пултарманнипе, вырăнти орканисатсисен прависене пĕђĕклетнипе тĕрлĕрен йурăхсăр йапаласем пулса пыраççĕ. Çакăнтан орканисатсиллĕ йĕркесене тĕрĕс тăвас, тата вырăнти оркăнсене, орканисатсисене, претприйаттисене пысăкрах правасем парас ыйту тухса тăрать. Хамăр претприйаттисене çĕнĕ майсемпе тунă çĕрте харпăрхăй тĕлĕн ĕçлеме пĕлни кирлĕ. Пирĕн массăсен хастарлăхĕ ӳссе пынипе, тата йулашки вăхăтра хăнăху пухăнса пынипе вĕсене ĕçе хутшăнтармалла, анђах хаљхи вăхăтри майсем тăрăх ăна тума çук. Палăртнă ĕçсене туса пыма халăх хушшинђи орканисатсисене майласа хутшăнтарса пирĕн халĕ ăна тумаллах. Профсойуссене, халăх хушшинђи орканисатсисене, тĕрлĕрен çексисене, т. ыт. илер, вĕсен малтанхи ĕçĕн меслеђĕ актива кирлĕ таран ĕçе хутшăнтарма май памасть. Епĕр ăна хамăрăн кулленхи ĕçре куратпăр. Çавăнпа кунта, пирĕн парттин, советсен, темократтине сарма май паракан ĕçсене туса иртерни кирлĕ пулать.

Ĕçе тĕрĕс йĕркелесе, ăна тĕрĕс туса пырасси çине, умри сатађсене пурнăçа кĕртсе пынă ђух ĕçе пуçарса йама пĕлни çине, пуçарса йаракансене пулăшса пырасси çине питĕ асăрхаса пăхмалла, пур çитменлĕхсене сирсе пымалла.

„Хуçалăхпа кулҍттура ĕçне тăвас çĕрте пĕрпĕр аван ĕçе пуçарса йанине пур йенҍен те ырлани кирлĕ. Сотсиалисăм опҍĕствине оркарисатсилес çĕрте епĕр унсăрăн пултарайас çук,“ тенĕ Рыккăв йул.

Малалла Рыккăв йул. калаť: „Епĕ пирĕн оркарисатсисен ĕç йĕркипе меслетне улăштарма кирли çинҍен каламастăп та. Пирĕн пысăк çĕршывăн талккăшĕпе ĕçлесе тăракан, айалтан çўле пăхăнса тăракан пысăк оркарисатсисем пур. Çак оркарисатсисен çўлтисем хапрăкран, савăтран, йалтан çав тери инçетре тăраççĕ, паллах, айалта мĕн тунине пĕлеймеççĕ. Çак оркарисатсисенҍе, çулсем пынăçемĕн, ирĕксĕрех пĕрре тĕлленĕ çул, тĕлленĕ май йаланхи йапала пулса кайаť, çав вăхăтрах айалта пысăк утăмсем, улшăнусем пулса пыраççĕ, кашни кунах çĕнĕлле майли палăрса ўссе пыраť. Совет патшалăхĕн пурнăçĕнҍе пит те пысăк вырăн йышăнса тăракан, çак йĕркеленсе çирĕпленнĕ оркăнсем, пĕрре тĕлленĕ çулпа, майпа ĕçлесе пырса, Совет патшалăхĕпе хуçалăхĕнҍе шăтса тухса пыракан çĕнĕлле, револҍутсилле майлисене, малалла пусăм тумаллисене пусса лапҍăтса, ҍарса пыма пултаракан хăрушлăх умĕнҍе тăратпăр епĕр,“ тет.

Çак хамăр умра тăракан çитменлĕхсемпе сатаҍсене пирĕн хиселе илмелле.

Ку çитменлĕхсене епĕр халăха сотсиалисăм тăвас ĕçе нумай хутшăнтарса пынипе çеç пĕтерме пултаратпăр. 15-мĕш сйес пилĕк çуллăх планăн çак пур ыйтăвĕсем тăрăх та уçăмлă кăтартусем паҍĕ. Партти умĕнҍи сатаҍ—ĕçхалăхĕн шухăшне çак план тавра пĕтĕçтерсе, плана ĕçре пурнăçа кĕртсе пырасси.

## Парттин йалти ĕçĕ çинҍен.

Халĕ хам токлатăн виçĕмĕш пайне—парттин йалти ĕçĕ çине куçатăп. Мĕн куратпăрха епĕр кунта?

Сотсиалисăм тăвас ĕçре, промышлĕннăçра та йалхуçалăхĕнҍе те пур пĕтĕмĕш çитĕнўсем тăрăх, хресҍенсен уйрăмăн сапаланса тăракан хуçалăхĕсенҍен шултăра пĕрлешўсем тума тытăнса, йалта та сотсиалисăм тăвас ĕçе вăйлăн тытăнма май пур пирĕн. Ăна тума май пур, мĕншĕн тесен пĕтĕм халăх хуçалăхне оркарисатсилекен, тата ăна йертсе пыракан тĕп вырăнсем пролеттарилле патшалăх аллинҍе, вĕсем: шултăра промышлĕннăç, панксем, укçа-тенкĕ ĕçне тăвакан уҍрештенисем, копператсиі, çулйĕр, патшалăх аллине куçнă

çĕр. Çаксем пурте йалхуçалăхне сотсиалисăм çулĕпе илсе пырса, унăн ĕçне туса, йала урăх йĕрке çине тăратма ĕçлеççĕ. Вĕсем халĕ çирĕпленсе çитнипе план тăрăх ĕçлесси çине куçма пит те май параççĕ, мĕншĕн тесен промышлĕннăçăн йертсе пырас вырăнĕ вăйланђĕ. Халĕ епĕр йалта сотсиалисăм тăвас ыйтăва татăклăнах лартрăмăр. Анђах пирĕн кунта ђылай йăвăрлăхсем пур, — пĕрремĕшĕ — йалхуçалăхĕ ўссе пырасси, кайа йулнă майсемпе ĕçленĕ пирки тытăнарах пырать, пирĕн йалхуçалăхĕ çав тери кайра пырать, сакăр мĕлйун ђухăн хресђенсен хуçалăхĕнђе лаша тытса усрани те усăсăр. Çакăнтан ыйту тухса тăрать: çак сапаланса тăракан хуçалăхсене сотсиалисăм тăвас ĕçе мĕнле йертмелле, вĕсене шултăра хуçалăхлă пĕрлешўсем туса мĕнле пĕрлештермелле? Лаша тытса усрани те усăллă мар пурнăçран хăтарма мĕнле пулăшу памалла ђухăн хресђенсене? Ку ыйтăва, йалхуçалăхне опђĕствăлатас, çĕршыва интустрилес пĕтĕмĕш сатађсемпе çыхăнтармасăр, уйрăм пăхса тухма çук. Лашасăр, йалхуçалăх хатĕрĕсемсĕр пурăнакан ђухăн хресђенсене, çав хатĕрсене парса çитерес пирки татăклă сруксем кăтартса пама, пултариймаст пăр. Ђухăн хресђенсем пĕрпĕр срукран лашасем, йалхуçалăх хатĕрĕсем, т. ыт. те. илђђĕр тесе, йал сийсем çине уйăрăлнипе кĕрешес ыйтăва уйрăмах кăларса лартма пултараймастпăр епĕр. Ун пек майсемпе епĕр ђухăн хресђенсен пурнăçне аванлатайас çук, сапаланса тăракан хуçалăхсене те пĕрлештерме пултарайас çук. Кунсăр пуçне, нăрçăђђенхи виçене çитсе иртсе кайнă вăхăтра, уйрăм вак хуçалăхсене копператтивсене, ертелсем, т. ыт. те туса пĕрлештерсен çеç йалсенђи кăпиталисла пайсене епĕр çĕнтерме пултаратпăр. Çак çулпа пырсан çеç лашасăр, йалхуçалăх хатĕрĕсĕр пурăнакан ђухăн хресђенсем вĕсене илесси çинђен, йал сийсем çине уйăрăлнине те пĕтересси çинђен каласма пулать.

## Йал ăçталла ўссе пырать.

Халĕ йал ўсĕмĕ икĕ çулпа пулса пырать: пĕри сотсиалисăмла, тепри кăпиталисла çул. Йала пĕтĕмĕшпе илсен, вăл халĕ çĕн екгономĕк политтĕкĕн йĕрки тăрăх вак уйрăм хуçалăхсемпех ўссе пырать, анђах çав вăхăтрах сотсиалисăмла пай та ўсет пирĕн, вĕсем: совхоссем, ушкăнлă хуçалăхсем, ертелсем, т. ыт. те. Кунсăр пуçне, йалхуçалăх протуксине тăвас йенђен, йал сапаланса тăракан хуçалăхсемлĕ пулсан, промышлĕннăç таварĕсене илсе тăрас йенђен вăл 50 прођăн

ытла копператсиленнĕ. Йалхуçалăх протуксине пухса хатĕрлесси вичĕ пайран иккĕшĕ копператсипе патшалăх оркăнĕсен аллинђе тăрать. Çак çитĕнўсем вĕсем пĕђĕк мар. Хресђен халăхне промышлĕннăç таварĕсене оркаписатсиленсе парса тăнипе йалхуçалăх протуксине копператтивсемпе патшалăх оркăнĕсем пухса хатĕрлени—йалхуçалăхне ушкăнлатас ĕçре ђи кирлĕ рыђаксем пулаççĕ.

Ку ĕç малалла ăнăçуллă пырасси план тăрăх пĕлсе йергсе пынинђен, пирĕн ĕç йĕркеллинђен, тата хаксен политтĕкĕ тĕрĕссинђен килет. Промышлĕннăçпа йалхуçалăх протуксийĕсен хакĕсене йĕркелес ыйтусем тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ, мĕншĕн тесен халăх хуçалăхĕ, промышлĕннăçпа йалхуçалăх таварĕсен хакĕсем мĕн пек килĕшсе пынă тăрăх ўссе пырать. Халĕ пирĕн промышлĕннăçпа йалхуçалăх таварĕсен хакĕсем йĕркеллĕ мар. Тырпул хакне те, промышĕннăç таварĕсен хакĕсене те епĕр йĕркелесе тăнине хресђен пĕлет. Хресђентен ăна пытараймăн. Ун çинђен калаçнă ђух аплакапла калаçнипех иртерсе йама хăтлансан, тĕрĕссине каламасан, епĕр унăн умĕнђе шанђăка пĕтеретпĕр. Ăна тивĕçлисем çине çитсе перĕнсен, вăл вара пĕтĕçтерсе шутласа хурать те, пĕрпĕр ђăрмавсем тума пăхать, мĕншĕн тесен ку ĕç унăн тивĕçлĕхĕсене перĕнет. Ăна хисепре тытса пырас пулать, йалхуçалăх протуксин хакĕсене çирĕп тытса пырса, промышлĕннăç таварĕсен хакĕсене ђакарсах пыни кирлĕ. Апла туни ĕçлекенсен ĕç укçине хăпартать, хресђенсен пурнăçне те економĕк тĕлĕшĕнђен аванлатать.

Йалхуçалăхĕнђе ушкăнпа ĕçлемелле тăвас çул çинђе пирĕн умра йалхуçалăхĕн происвотствине ўстерес пысăк ĕç тăрать. Сакăр мĕлйун хуçалăхра лаша тытса усрани те усăсăр терĕмĕр маларах. Пилĕк мĕлйун хуçалăха йахăн тырпулла сухапуçпе акса тăваççĕ. Хамăр Ђăваш респуплĕкне илес пулсан, кунта пирĕн çĕрĕçне 85 прођђăн хуçалăх сухапуçпе тăваççĕ. Паллах, çакăн пек йалхуçалăх хатĕрĕсемпе йалхуçалăхĕнђе ушкăнпа ĕçлесе пыма май çук. Ун пек хуçалăхсене пĕрле ĕçлеме пĕрлештерсен те, вĕсем йалхуçалăх происвотствине хăпартма пултараймаççĕ, çавăнпа ушкăнпа ĕçлемелле тăвассине йалхуçалăх ĕçне машшинсем кĕртсе туса пымалла.

Пĕрле ĕçлени усăллине хресђен аван пĕлет, пуринђен ытла ăна ђухăн хресђен сисет, мĕншĕн тесен ђухăн хресђене кашни утăмрах кулак пусмăрлать. Йалти кулаксен, пуйансен

шултра хуçалăхсен вăйне, ун пек хуçалăхсем йалта ђухăнпа вăтам хресђене хĕснине ђухăн хресђен курат̆. Хулара шултăра промышлĕннăç патшалăх аллинђе пулнипе епĕр усламçăсене хĕсетпĕр, йалта ђухăнпа вăтам хресђенсене кулака хĕсме пулăшатпăр, çавăн тăрăх вара ђухăнпа вăтам хресђенсем хушшинђен кулака сирсе йама пулăшатпăр. Анђах йалта кулакшăн усăллă тĕп йапаласене епĕр пĕтерейменха. Епĕр ђухăнпа вăтам хресђенсене пулăшатпăр, кăпиталисла пайсене сахаллатса пыратпăр, анђах хăшпĕр ђух хамăрах хĕсекен, кăпиталисла пайсене усă кӳрекен уйрăм йапаласене епĕр пĕтерейменха. Хресђен халăхĕн тĕп масси пурнăçра урăх çулсем шырат̆, вăл хĕсĕк пурнăçра пурăнса иртерет, çавăнпа хăй те хресђен хуçалăхĕнђе пĕрлешсе ĕçлемелле тăвасси çинђен ыйту кăларса тăратат̆. Вĕсен çакăн пек шухăшне пирĕн хисепре тытмалла, йалхуçалăхĕнђе пĕрле ĕçлемелли ушкăнсене туса пымалла. Пирĕн копперативсемпе патшалăх оркăнĕсен ку ĕçре ђи малта пырса пулăшса пымалла. Ку ĕçĕн çулĕсемпе майĕсем мĕнле пулмалла? Йалхуçалăхне йĕркеленме пулăшас май вăл контрактатси (тырпулла токăвăр тăрăх акса тăвасси). Контрактатси вăл питĕ кирлĕ йапала, ун çинђен епĕр нумай калаçнă. Мĕншĕн кирлĕ вăл контрактатси?—Контрактатси вăл промышлĕннăçпа йалхуçалăх хушшинђи çыхăну. Вăл çĕнĕ йапала, ăна совет йĕркинђе пурнăç хăй кăларса тăратнă. Контрактатси вăл йалхуçалăхĕ промышлĕннăç вађђи тырпул акса туса ђĕр тавар тăратма килĕшӳ туни. Контрактатси, йе йалхуçалăхĕпе промышлĕннăç, урăхла каласан, кăпиталиссемпе кулаксем хушшинђе тавар тăратма тунă токăвăрсем ĕлĕк те пулнă. Халĕ ăраснах урăхла. Халĕ токăвăрсене патшалăх оркăнĕсемпе, претприйаттисемпе, йалхуçалăх копператсипе тумалла. Вăхăтра, килĕшнĕ хакпа йалхуçалăх çимĕçне промышлĕннăç вађђи хатĕрлемелле. Йалхуçалăхĕпе промышлĕннăç хушшинђи çак çыхăнăва пирĕн пит те сармалла, мĕншĕн тесен вăл йалхуçалăхне те, промышлĕннăçа та усăллă, лайăхрах ђĕр тавар туни, çĕр ĕçне аван туни, лайăх вăрлăх хатĕрлени, çĕре çемçетни, йалхуçалăхне машшинлатни, т. ыт. те йалхуçалăхĕшĕн те, промышлĕннăçшăн та паха. Анђах токăвăрсене уйрăм хресђенсемпе тумалла мар, ушкăнлă хуçалăхсемпе, ертелсемпе, тата ыттисемпе тумалла. Уйрăм хресђен хуçалăхĕсемпе токăвăр туни кулаксене вăйлăланма май парат̆. Промышлĕннăç претприйаттисем токăвăрсене

йалхуçалăх копператсипе, йе пĕтĕм йалти халăхпа туса пырсан, епĕр пĕтĕм йалсене сотсиалисăм тăвас ĕçе хутшăнтаратпăр. Сиесра Паумăн йул. контрактатси урлă пĕтĕм йалсене ушкăнпа ĕçлес çул çине тăратни ђăнах та пулнисем çинђен каларĕ. Контрактатси урлă 900 пин хресђен килçурђĕ копператсийе кĕрсе сахăр савăђĕсене сахăр кăшманĕ тăратса пырат̆, 750 пин хуçалăх пирĕн хапрăксене çĕр мамăкĕ тăратат̆, т. ыт. те. Пирĕн шултăра промышлĕннăç йалхуçалăхĕпе пĕрлешсе, а́на хăй хыççăн йертсе пырса хуçалăха план тăрăх туса пыма пулăшат̆. Контрактатси йалхуçалăхне, ăна ушкăнпа ĕçлемелле тăвассине план тăрăх илсе пыма пит те пулăшат̆. Контрактатси пирĕн респуплĕкре тĕп вырăн йышăнса тăмалла, мĕншĕн тесен вăл йалхуçалăхĕнђе ушкăнпа ĕçлемелле тăвас ĕçĕн ђи çăмăл майĕ, тата пирĕн хамăр респуплĕкри ђĕр таварпа ĕçлекен претприйаттисем те ђылай: Йетĕрнери çу савăђĕ, çпирт савăђĕсем, т. ыт. те.

## Копператсипе пĕрлепурнăç тăвас ыйтусем.

Йалхуçалăхне (уй-хирсене, пахђасене ĕçлесси, выљăх-ђĕрлĕх, ђăхђĕп усраса вĕсен протукђĕсене сутасси т. ыт). копператси туса пĕрлешсе ĕçлес, йе пĕрлепурнăç туса ĕçлес ыйтусем—партти орканисатсийĕсем питĕ астуса пăхма тивĕçлĕ ыйтусем. Ку тĕлĕшрен епĕр ђасђасах постановленисем çырнипехирттерсе йараттăмăр, пур пек ушкăнлă пĕрлешӳсенĕн (коллективсенĕн) ĕçĕсенђе пайтах çитменлĕхсем пур. Çапах та, çитменлĕхсем нумай пулсан та, ку тĕлĕшрен пирĕн пысăк çĕнтерӳсем те пур, ĕçе тума хăнăхнисем пур. Йалхуçалăхне ушкăнлă, пĕрлешсе ĕçлес тĕлĕшрен çав ĕçе хăнăхнисемпе çĕнтерӳсем пулман пулсан, епĕр пилĕк çуллăх плана та татăклăн туса хума пултарайман пулĕђђĕ. Пĕтĕм Совет Сойусĕпе илсен, йалхуçалăх копператтивĕсен аллинђе 16 пине йахăн вактĕвек претприйатти пур, 6 пине йахăн çу çапакан, ђăкăт тавраш тăвакан савăтсенђе копператсине кĕрсе пĕрлешнĕ пĕр мĕлйун хресђенĕн протуксинђен кирлĕ çимĕç хатĕрлеççĕ. Çапла пĕђĕккĕн копператсире пĕрлешни хресђен хуçалăхне ушкăнлă, пĕрлешсе ĕçлес тĕлĕшрен малалла йарса пымалли ђи кирлĕ хатĕр пулса тăрат̆, ăна халђ кăтартнă çĕнтерӳсем аван пĕлтереççĕ. Кунсăр пуçне тата йалхуçалăх протуксинђен тĕрлĕ çимĕç хатĕрлекен копператтивсемпе токăвăрсем (килĕшӳсем) туса ĕçлени тепĕр йенђен

пит паха: ку ĕçе хресђен хушшинђи ытлашши укçа-тенке йама пулаť, мĕншĕн тесен хресђенсемшĕн хăйсен хуçалăхне аванлатни, унăн тупăшлăхне ўстерни усăллă йапала. Ку йеннелле епĕр кирлĕ таранах çавăрăнса пăхайманха. Копператтивсен аллинђи претприйаттисем çинђен Ленин йул. хăйĕн копператси çинђен çырнă статйинђе çапла каланă: „пирĕн Совет йĕркинђи копператси аллинђи претприйаттисем уйрăм кăпиталисен аллинђи претприйаттисенђен уйрăм тăраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем ушкăнлă (коллективлă) претприйаттисем, анђах вĕсем патшалăх аллинђи çĕр çинђе ĕçлеççĕ пулсан, происвотстvă хатĕрĕсем патшалăх аллинђе, урăхла каласан, ĕçлекенсен класĕн аллинђе пулсан,—вĕсем сотсиалисăмла ретприйаттисенђен пĕртте уйрăм мар,“ тенĕ. Копператси ĕçне епĕр астусах тăнă пулин те, ку таранђђен епĕр копператтивсен аллинђи претприйаттисем çине кирлĕ таранах тинкерсе пăхман, ку тĕлĕшпе Ленин йул. хушса хăварнине лайăхах тавçарса илеймен. Копператси туса пĕрлешес, пĕрлепурнăç тăвас тĕлĕшрен кирлĕ таран çул кăтартса парайман пирки, пирĕн тĕрлĕ ĕçе пăсса пыни курăнаť, хăшпĕр ушкăнсем (коллективсем) ђейе кулаксен ĕçĕсене хўтĕлесе тăракан йапала пулнисем пур, хăшпĕр ушкăнсемпе ертелсем уйрăм усламçăсем вађђи ĕçлени, кулаксен хуçалăхне вăй илме пулăшни пур. Çул кăтартса пырас ĕç нађартарах пулнă пирки ку таранђђен те хăшпĕр ушкăнлă хуçалăхсем йалхуçалăх копператсипе пĕрлешсе тăмаççĕ, хăйсене хăйсемех пурăнкалаççĕ. Ђасђасах тата патшалăхран паракан укçатенкĕ кирлĕ вырăна çитеймест. Ђасђасах аван пĕрлешўсем ним пулăшусăр тăрса йулаççĕ.

Çак çитменлĕхсене пурне те питĕ çине тăрсах пĕтермелле.

### Совхоссем çинђен.

Халĕ тата совхоссем (совет хуçалăхĕсем) çинђен пĕрик сăмах калам. Кусем çинђен нумайах каламастăп та, мĕншĕн тесен ку ыйту пирки йышăннă постановленисем нумай, вĕсене хытă тăрăшса пурнăçа кĕртмелле. Пĕр йапала çинђен анђах каласа хăвармалла: совхоссем вĕсем йалхуçалăхне йĕркелес тĕлĕшрен тĕслĕх (пример) пулса тăмалла. Йалхуçалăхне машшинлас тĕлĕшрен, ĕçе тупăшлăрах туса пырас тĕлĕшрен вĕсем ђи малта пыракансем пулмалла. Пирĕн условисене

илсен, епӗр совхоссене нумайлатасси ҫинҙен калаҫма пултараймастпӑр. Пуринҙен ытла пирӗн хаҙ пур пек совхоссен хуҫалӑхне аванлатасси ҫинҙен шутламалла, пирӗн совхоссем шултра хуҫалӑх тӗслӗхӗсем пулҙҙӑр. Нушаллӑ хресҙенсене пулӑшас ӗҫ, пуринҙен ытла ҙухӑнсемпе ҫитиҫитми хресҙенсене пулӑшас ӗҫ—пирӗн совхоссен ҙи пысӑк ӗҫӗ пулмалла. Ку тӗлӗшрен вӗсем машшинсем вӑхӑтлӑх паракан, ҫӗр ӗҫне тума вӗрентекен пунктӑсем (вырӑнсем) туса, ҫӗр ӗҫлемелли машшинсене йусамалли маҫтерскойсем т. ыт. туса ӗҫлемелле. Йалхуҫалӑхне вӑйлӑлатмашкӑн 1927—28 ҫулта йалхуҫалӑхӗн тӗрлӗ пайӗсене патшалӑхран 704 мӗлйун тенке йахӑн памалла, пилӗк ҫуллӑх план тӑрӑх йалхуҫалӑхӗ ваҙҙи мӗн пурӗ 2 мӗлйарт тенке йахӑн памалла. Ку йапала —йалхуҫалӑхне шултралатса пӗрлештерес тӗлӗшрен—Совет влаҫӗн питӗ вӑйлӑ хатӗрӗ пулса тӑраӗ.

## Йалта пирӗн мӗн тумалла?

Йалта сотсиалисӑм тӑвас ӗҫе пурнӑҫа кӗртсе пырасси, патшалӑхран паракан укҫа-тенкӗпе тӗрӗс усӑ курасси, хресҙенсен хӑйсен пурлӑхӗсене йалхуҫалӑхне лайӑхлатмашкӑн йарас тӗлӗшпе пӗлсе ӗҫлесси—парттипе влаҫран питӗ тӑрӑшса ӗҫлессе кӗтсе тӑраҫҫӗ. Йалта сотсиалисӑм тӑвас ӗҫ ҫав вӑхӑтрах кӑпиталисла елементсем ҫинелле ҫӗмӗрсе кӗрсе пырас тенине пӗлтерет, кулакпа непман ҫине ҫӗмӗрсе кӗнине пӗлтерет, кулакпа непмана хресҙенсен тӗп массинҙен уйӑрнине пӗлтерет, вӑл йалхуҫалӑхне патшалӑх промышлӗннӑҫӗпе сыпӑнтарасса, йалхуҫалӑх протуксипе патшалӑх промышлӗннӑҫӗ хушшинҙи уйрӑм усламҫӑсене пӗтерессине пӗлтерет. Ҫакна пирӗн асра тытмалла. Ҫавӑнпа та йалта сотсиалисӑм тӑвас тени—йалти классен кӗрешӳвӗ ҫивҙӗленсе кайасса пӗлтерет. Ку ӗҫре кулак мӗн пур вӑйпа хирӗҫ тӑрӗ. Пире хирӗҫ кӗрешес ҫӗрте кулакла сийсем пур хатӗрсемпе те, пур ҫулсемпе те, епӗр кӑӗ те пулин йунӑшнипе те, пирӗн йывӑрлӑхсемпе те усӑ курма тӑрӑшӗҫ. Куна пирӗн лайӑх тавҫарса илмелле те, манмалла мар.

Ҙухӑнсемпе вӑтамсен хушшинҙи ӗҫе вӑйлӑлатасси, ӑна лайӑхлатасси мӗн таран кирлӗ пулни ҫакӑнтан паллӑ ӗнтӗ. Ҙухӑнсен ушкӑнӗсене ҫул кӑтартса пырас ӗҫ ҫине халҙҙенхинҙен ытларах асӑрхаса пӑхмалла. Пӗр токлатсем тунипех,

са̌махпа каланипех ирттерсе йамалла мар, ђуха̌нсен инттересе̌сене (ве̌сене киле̌шӳлле̌, ве̌семше̌н уса̌лла̌ е̌ҫсене) ђа̌ннипех сыхласа пыни кирле̌, ђуха̌нсемпе патраксене те̌рле̌ орка̌нсене—советсене, копператсине, хала̌х хушшинђи ытти орканисатсисене—ха̌йулла̌рах суйлани кирле̌, ђуха̌нсен инттересе̌сене ва̌тамсен инттересе̌семпе ке̌ле̌штерсе пыма пе̌лни кирле̌, т. ыт. Йалхуҫала̌хне ушка̌нла̌, пе̌рлешсе туса пырас те̌ле̌шрен е̌ҫлмешке̌н ме̌н пур ђуха̌нсемпе ва̌тамсен ве̌реннե̌рех (та̌нланарах паракан) ва̌йе̌сене пе̌рлештерме пе̌лес пулат̆. Кунта ка̌т̆ „куљттурла̌ ва̌тамсем" тейекенсем ҫинђен каласа ха̌вармалла. Ку те̌ле̌шрен пире̌н ђасђасах е̌ҫе лайа̌х а̌нласа ҫитейменнисем пулкалаҫҫе̌. Куҫ уме̌нђе ҫук кулаксене тем те пе̌р каласа ва̌рҫна̌ ва̌ха̌трах, ђа̌ннипе ҫурри-кулакла, ха̌ш ђух пе̌те̌мпех кулакла хуҫала̌хсене „куљттурла̌" хуҫала̌хсем тени пулкалана̌, кун пирки вара политте̌к йенђен те̌ре̌с мар е̌ҫсем пулса та̌на̌. Йалта ве̌ренне̌ ва̌тамсем, хала̌х хушшинђе вирле̌ е̌ҫлекенсем, ха̌йсен хуҫала̌х е̌ҫне куљттура̌ ве̌рентне̌ пек туса пыракансем пулсан,—ве̌семше̌н, шултра хресђен хуҫала̌хе̌сене ушка̌нла та̌вас те̌ле̌шрен е̌ҫлеме теме̌н асла̌ше̌ ҫул уҫа̌лат̆. Ве̌сене ертелсене, ушка̌нсене (коллективсене) т. ыт. ке̌рмелле, унта ве̌сем ха̌йсем ме̌н пе̌лнипе пе̌те̌м ушка̌на пула̌шса пыма пе̌лђђе̌р.

## Йа̌ва̌рла̌хсем пыса̌к, е̌ҫлекенсем сахал, ве̌сене хате̌рлес е̌ҫе ва̌йла̌латмалла.

Сотсиалиса̌ма пе̌те̌м асла̌ше̌пе пурна̌ҫа ке̌ртсе пырас ҫул ҫинђе теме̌н ђухле̌ пыса̌к йа̌ва̌рла̌хсем та̌раҫҫе̌, пе̌рлешсе та̌ра̌шса е̌ҫленисе̌р пуҫне тата е̌ҫе а̌ста пе̌лекен е̌ҫлекенсем кирле̌. Е̌ҫхала̌хе̌н куљттурла̌хне малалла йарса пымалла, ку те̌ле̌шрен пире̌н е̌ҫе мухтамаллах мар. Мола̌тта̌в йулт. ха̌йе̌н йалта е̌ҫлесси ҫинђен калана̌ токлате̌нђе... „епе̌р пура̌на̌ҫран кайа йулна̌, епе̌р хале̌ пире̌н йалсенђе ӳссе пыракан сотсиалиса̌мла йе̌ркесем хыҫҫа̌н ҫитсе пыраймастпа̌р", тере̌. „Пире̌н ке̌неке-хаҫатсем ҫине, пире̌н акиттатси ҫине, пире̌н литтераттура̌ ҫине, пире̌н парттийе̌н, советсен, копператсин орка̌не̌сем ҫине па̌ха̌рха. Сотсиалиса̌мла хунхвсем ҫинђен, пуринђен ытла йалта ҫе̌не̌рен ӳссе пыракан шултра, пе̌рлешӳлле̌ (коллективла̌) хуҫала̌хсен елеменђе̌сем ҫинђен епе̌р нумай шуха̌шлатпа̌ри? Шултра пе̌рлешӳлле̌ хуҫала̌хсем ҫинђен ве̌ренгекенсем пире теме̌н ђухлех кирле̌; сотсиалиса̌мла хуҫала̌ха̌н йалти хунаве̌сене пите̌ та̌ра̌шса ве̌ренсе (са̌наса) пыракан ха̌йне а̌расна

кӗнеке-хаҫатсем кирлӗ. Пире литтераттура кирлӗ, вӗреннӗ комуниссем, комунис маррисем те, ҫӗр ӗҫӗнђе шултра пӗрлешӳллӗ хуҫалах тӑвас ӗҫе ђӑннипех ӑста пӗлсе тӑракансем кирлӗ. Пирӗн ђасђасах лапах тепӗр майла пулса тӑрат. Сӑмахран, манӑн пӗрре пӗр пӗђӗкҫеҫ шурнал пӑхса тухмалла пулђӗ, вӑл шурнала Ленинкратри Политтехниђђески Инҫтиттутӑн интустрилле ҫӗр ӗҫне вӗрентекен факкулттеђӗ кӑларнӑ пулнӑ. Ҫак факкулттетра вӗренекенсен ушкӑнӗ, хӑйсене вӗрентекенсемпе пӗрле, пӗр 3 ҫул ӗлӗк „Интустрилле ҫӗр ӗҫӗ" йатлӑ шурнал кӑларма шухӑш тытнӑ мӗн. Мӗн пулнӑха ку ӗҫрен? Пӗр номӗр тухнӑ та, ку ӗҫе никам та пулӑшман пирки, ҫак ҫӗрӗҫне интустрилес тӗлӗшрен пире тем пек кирлӗ ӗҫ, пӗђӗк ӗҫ те пулин,—лайӑх ӗҫ—пӗтсе ларнӑ. Акӑ ӑҫта пирӗн инкек, акӑ ӑҫта епӗр кайа йулса пыратпӑр!"

...„Йалти шултра, сотсиалисӑмла елементсене хӑвӑртрах ӳссе пыма ђӑннипех пулӑшма пултаракан ҫынсене хатӗрлеме тӗрӗссипех тытӑнмалла; вӑл сотсиалисӑмла елементсем пирӗн пур, вӗсем ӳссе пыраҫҫӗ, ку ӗҫе епӗр сахал пулӑшатпӑр пулсан та, ку ӗҫ мӗн ђухлӗ кирлине нађартарах ӑнланатпӑр пулсан та, йал малалла кайса пынӑ ҫӗрти ҫӗнӗ елементсенђен нумайӗшне епӗр ђасђасах тем таранђђен асӑрхамасӑрах иртеретпӗр пулсан та, хамӑр пӗлменлӗх пирки, култтуралла мар пирки, хамӑр оркӑнсем, ӗҫлекен ҫыннисем, т. ыт. пӳрократла пулнӑ пирки асӑрхамастпӑр пулсан та,—вӑл сотсиалисӑмла елементсем пирӗн ӳссе пыраҫҫӗ... Ҫӗнӗ сатађсене пурнӑҫа кӗртсе пынӑ ђух пирӗн йӑла (правӗлӑ) акӑ ҫак пулмалла: йал тӗлӗшӗнђен пурнӑҫа кӗртме май ҫук нимӗнле шухӑш та ан пултӑр; хулари, советсенђи, парттири, тата ытти ӗҫлекенсем ку тӗлӗшрен, „ҫӗнӗрен туртса кӑларни" ан пултӑр, хӑйсен шухӑшӗсене пусмӑрласа пурнӑҫа кӗртни ан пултӑр; епӗр екконмӗккӑн ҫӗнӗ политтӗкӗн малтанхи ҫиђӗ ҫулӗ хушшинђе нумай вӗреннӗ йапала кунта пире питӗ те кирлӗ пулат, вӑл—йалта сотсиалисӑм тунӑ ђух питӗ кирлӗ йӑласем, сыхланса вӑраххӑн, васкамасӑр, майпе ӗҫлесе пырас йӑласем.

Анђах йалта пӗрлепурнӑҫ тӑвас ӗҫе пулӑшас тӗлӗшрен пирӗн халӗ ӗҫе ҫине тӑрса, хӑйуллӑ туни ҫитмест, пуринђен ытла епӗр ку ӗҫе сахал пӗлнӗрен ҫитмест."

Акӑ ӑҫта пирӗн инкек, сотсиалисӑм тӑвас ӗҫре пирӗн парттин, ӗҫлекенсен класӗн, тата хресђенсен тӗп массин шухӑшӗсене, вӗсен ирӗкне пӗрле пухас тӗлӗшрен акӑ хӑш йенелле

пăхмалла ĕнтĕ пирĕн. Кунта питĕ тăрăшса ĕçлени кирлĕ, анђах унпах сахал. Çĕнĕ сатађсемпе пĕрле, куљттурă ĕçне хăпартас ыйтусем ниxăçанхинђен те ытларах мала тухса тăраççĕ.

## Йал куљттурлăхне вăйлăлатасси.

Халĕ йал куљттурлăх çитменни çине пырса такăнаť. Йалта сотсиалисăм тăвас ĕçе пуринђен ытла куљттурă тĕлĕшĕнђен кайа йулни ђарса тăраť. Пирĕн 43 прођђăн хут пĕлмен арçын, хĕрарăмсенђен виçĕ пайĕнђен икĕ пайĕ хут пĕлменнисем. Оќтапĕр Револютсийĕ 10 çул тултарнă çĕре хуг пĕлменлĕхе тĕп тăвас тенĕ плана 20 прођђăн анђах пурнăçа кĕртнĕ, кĕçĕн шкулсенђе вĕрентес ĕç нађар пыраť. Ђухăнсем куљттурă тĕлĕшĕнђен калама çук кайа йулса пыраççĕ, ђасђасах ђухăнсен ађисем, укçа-тенкĕ çук пирки, йе ĕçлекен çын çук пирки, шкула çӳреймеççĕ. Вуламалли çуртсем ђухăнсене çителĕклĕ пулăшса пыраймаççĕ. Пуйанраххисем кĕнекесем илме те, хаçат çырăнса илме те т. ыт. пултараççĕ, пирĕн вуламалли çуртсем, клупсем т. ыт. ђухăнсемпе вăтамсене çителĕклĕ пулăшаймаççĕ. Вăтам шкулсемпе аслăрах шкулсем çителĕклĕ мар, çав вăхăтрах ĕçлекенсемпе хресђенсем тем пекех вĕренесшĕн çунаççĕ. Лунађђарски йулт. сйесра: пирĕн аслă шкулсем пур вĕренес текенсене те илме пултараймаççĕ, çавăнпа та вĕренес ĕç хуйхăллă ĕç пулса тăраť. аслă шкулсене вĕренме кĕрес текенсене илмесĕр ђарăнса тăмалла пулаť, терĕ

Ĕçе ăста пĕлекен çынсем хатĕрлес ĕç çине, тата халăх куљттурлăхне хăпартас ĕç çине пирĕн хуçалăх ыйтăвĕсем çине пăхнă пекех астуса пăхмалла, унсăран хуçалăх шайĕпе куљттурлăх шайĕ хушшинђе пирĕн пысăк уйрăм пулма пултараť, вара ку йапала сотсиалисăм тăвас ĕçе ђăрмантарса тăракан тĕп вырăн пулса тăраť. Промышлĕннăç комантирĕсене хатĕрлес ĕçпе хăйсен ĕçне ăста пĕлекен ĕçлекенсене хатĕрлес ĕç çине питĕ тинкерсе пăхмалла. Пирĕн шкулсемпе рапфаксем пирĕн промышлĕннăçа пролеттариата килĕшӳллĕ çул кăтартса пыракансене хатĕрлемелле. Епĕр хамăр шкулсенђе пур вĕренес текенсене вĕрентсе çитерейместпĕр пулсан, политçут уђрештенисен ĕçне вăйлăлатмалла; ку тĕлĕшрен пирĕн тем тĕрлĕ майсем те пур: шкулсăрах тĕрлĕ майпа вĕренмелли майсем, килтех вĕренмелли тĕрлĕ курссем т. ыт.; кунта ĕçе пуçарса

йама пĕлни анђах, пуçсăрланса хăйуллăн ĕçлени анђах кирлĕ. Пирĕн куљттурă тĕлĕшĕнђен тем ђул паха ĕçсем пур, иртнĕ 10 çул хушшинђе пухăннă тем ђухлĕ сăнавсем пур, çавсенђен пирĕн ĕлĕкхи йĕркерен йулнисене, сотсиалисăм тăвас ĕçре кирлисене, хаклисене суйласа илме пĕлни анђах кирлĕ. Ленин йулт. 1923 çултах çапла каланă: „пире малтанлăха пуршуалла куљттурă пулсан та çитĕђђĕ, тўрех сотсиалисăма куçма пире вĕренни (ђивилисатси) çитмест,“ тенĕ.

Пирĕн куљттурă ĕçĕ пĕтĕмпех сотсиалисăм тăвас ĕçе пăхăнса тăмалла. çак сатађсене мĕн кирлине кура, пирĕн хамăр куљттурă ĕçне çавсемпе килĕштерсе пымалла. Ку ĕçе тумашкăн куљттурă ĕçĕ йенелле партти хăйуллăн çавăрăнни кирлĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ куљттурăна хăпартас ыйту XV-мĕш Сйесра çав тери çивђĕ тăђĕ, акă мĕншĕн Сйес йышăнăвĕсенђе те ку ыйту кирлĕ таран вырăн йышăнђĕ.

## Пўрократтисăмпа кĕрешесси çинђен.

Епĕр куљттурă тĕлĕшĕнђен кайа йулни сотсиалисăм тăвас ĕçĕн ăнăçлăхĕ çинђе çеç те сисĕнмест, ун пиркийех тата пўрократтисăм пулса тăрать. Ленин йулт. темиçе хут та: лайăх саккунсем çырнипех çитмест, пирĕн лайăх саккунсем нумай, анђах ку саккунсемсĕр пуçне тата куљттурă пур, вăл нађар пулсан, лайăх саккунсем кăларнипех пўрократтисăма т. ыт. ђирђĕрсене йусаса пĕтерес çук, тенĕ; куљттурăна вăйлăлатса пымалла, ĕçхалăхĕн ђи аслă массисене патшалăх ĕçне туса пыма вĕрентмелле, вара тин епĕр пўрократтийе пĕтерĕпĕр, тенĕ. XV-мĕш Сйесра пўрократтисăмпа кĕрешес ĕç çине питĕ тĕплĕн пăхрĕç. Пўрократтисăмпа, тата патшалăх аппаратĕнђи тĕрлĕ пăсăксемпе кĕрешес ĕç сотсиалисăм тăвас ĕçри тĕп сатађсенђен пĕри пулмалла. Ку тĕлĕшрен Тĕп Контрољ Комиççийĕ, тата Ĕçлекенсемпе Хресђенсен Инçпексийĕ темĕн пек пысăк ĕçсем тунă: тĕрлĕ аппаратсене йусаса, кĕскетсе çитернĕ, отђотсене, вырăнсăр тăкаксене сахаллатас ĕçе т. ыт. тунă. Ку тĕлĕшрен малашне те темĕн ђухлĕ ĕç курăнса тăрать. Ку тĕлĕшрен Партти Сйесĕ татăклă кăтартусем пађĕ, вĕсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пымалла, ĕçхалăхĕн аслă сийĕсене хăмăрăн патшалăх аппаратне йусас ĕçе тума ђĕнсе пымалла.

Патшалăх аппаратĕнђи пăсăксемпе кĕрешмешкĕн ĕçхалăхĕн ђи аслă сийĕсене ђĕнессисĕр пуçне, XV-мĕш Сйес тата

ĕçлекенсемпе хресҍенсем çине сиввĕн, улпутла пăхакан çынсене пурне те, партти ҍленĕсене те, парттире тăманнисене те ответ партарма кирли çинҍен каласа, çапла хушса хăварҍĕ: „...пÿрократтисăмпа кĕрешес тĕлĕшрен сутсен ĕçне лайăхлатасси, çăмăллатасси шанҍăклă ĕç пултăр тесе парттин пур орканисатсийĕсем те тăрăшмалла. Атминистратси, йе хуçалăх аппараҍĕсенҍе ĕçлекенсене, хуçалăхшăн сийенлĕ ĕçсем тусан, ытлашши иртĕнсе пурăнсан, ĕçе ҍиновникле туса пырсан,— халăх суҍĕ аллине памалла; кун пек ҍух айăпа тухнă çын ĕçлекен йе хресҍен пулнă тесе, ĕлĕк нумай усăллă ĕç тунă тесе, унăн тусĕсем-мĕнсем пур тесе, т. ыт. сутсен прикăварĕсене çăмăллатма, йе сут йĕрлесе тупас ĕçе ҍарса лартма памалла мар. Патшалăх аппаратĕнҍе ĕçлекенсемшĕн ăрасна çăмăллăхсем ан пулҍҍăр тесе, тистсиплинарнăй сута пĕтермелле те, патшалăх аппаратĕнҍи ĕçлекенсен ĕçĕсене пуриншĕн пĕр сутах пăхмалла тумалла“. (XV-мĕш Сйес Т.К.К.-пе Ё.Х.И. отҍоҍĕ тăрăх йышăннă постановленирен).

Çак XV-мĕш Сйес йышăннисем хут çинҍе анҍах йулмалла мар, вĕсене ним пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пымалла. Çапла туса пырсан анҍах епĕр хамăр ĕçри уйрăм çитменлĕхсене пĕтерсе пыма пĕлĕпĕр.

Çав вăхăтрах тата акă мĕне астуса тăмалла: пирĕн патшалăх аппараҍĕ вăл Совет влаçĕн оркăнĕ, вăл пролеттариат тиктаттурине пурнăçа кĕртсе пырать, вăл пуршуалла патшалăхсенҍен тĕпĕ-тымарĕпех ăрасна йапала. Çавăнпа та уйрăм çитменлĕхсемпе кĕрешес ĕç совет аппаратне çĕмĕрес ĕç пулса тăмалла мар, кашни уйрăм усалпа, парттипе Совет влаçĕн класла тĕрĕс çулне пăсса пыракансемпе уйрăмăн кĕрешсе пымалла.

Халĕ ĕнтĕ хам токлатăн йулашки пайĕ çине, тĕнҍери лару-тăру ыйтăвĕсем çине куçатăп.

## Тĕнҍери лару-тăру ыйтăвĕсем.

Тĕнҍери лару-тăру халҍхи вăхăтра мĕнле иккенне акă çак паллăсем кăтартса пĕлтерессĕ: пĕрремĕшĕ—кăпиталисăм пăртакках хăй картне ларса (стапилисатсиленсе) пыни, тата унпа пĕрлех çав стапилисатсиленсе пынă пирки тухакан хирĕçÿсем ÿссе пыни; иккĕмĕшĕ--вăрçă хăрушлăхĕ, пуринҍен ытла ССРС-не хирĕç пулас вăрçăн хăрушлăхĕ вăйлăланни. Виççĕмĕшĕ—револҍутсиллĕ хумсем пĕр ҍарăнмасăр ÿссе пыни,

ĕçлекенсен класĕпе пуршуаçи класĕн хушшинђи кĕрешӳ ђĕрре кĕрсе, çивђĕленсе пыни, тата колоңи пулса тăракан çĕршывсенђи халăхсен ирĕке тухас хусканăвĕ пур çĕрте те ӳссе пынипе Киттайри револђутси малалла кайса пыни. Тăваттăмăшĕ—кăпиталисла патшалăхсенђе комунисла парттисемпе сотсиал-темократти массăсене хăйсем йенне çавăрасшăн кĕрешес ĕç ђĕрре кĕрсе пыни, тата, йулашкинђен, Совет Сойусĕн хуçалăхĕ пĕр ђарăнмасăр ӳссс пынипе ССРС-ђе сотсиалисăм тăвас ĕçе мĕн пур аслăшĕпех туса пыма тытăнни. Акă çак тĕп паллăсем çинђе епĕ кĕскен çеç ђарăнса тăрас тетĕп.

Йулашки икĕ çулталăк хушшинђе кăпиталисла патшалăхсем хăйсен унђђенхи йăвăрлăхĕсенђен (криçĕсран) тухса, пĕтĕмĕшпе илсен, вăрçăђђенхи картран иртсе кайрĕç. Промышлĕннăçра ђукун, хурçă, кăмрăк питĕ пысăк вырăнта тăраççĕ, мĕншĕн тесен шултра промышлĕннăç, тĕрлĕ машшинсем тăвас ĕç, тĕрлĕ пăрахутсем, карапсем, йеропламсем т. ыт. тăвас ĕç, тата çĕршыва тăшмансенђен сыхлама кирлĕ хатĕрсене тăвас ĕç—пурте вĕсем ђукун, хурçă, кăмрăк мĕн ђухлĕ кăларса хатĕрлененђен килеççĕ. Ку тĕлĕшрен кăпиталисла патшалăхсен ĕçĕсем мĕнлеши? Вăрçăђђенхи картпа танаштарсан, пĕтĕм тĕнђипе ђукун тупас ĕç 1925 çулта 97,6% пулнă, 1926 çулта 100,5% çитнĕ; хурçă тупас ĕç 1925 çулта 118,5%, 1926 çулта—122,6% пулнă; кăмрăк кăларас ĕç 1925 çулта 98% йахăн (97,9%) пулнă, 1926 çулта—96,8% пулнă. Кунта кăмрăк кăларас ĕç 1925 çултинђен ђакни курăнаť, ку йапала Анклири кăмрăк кăларакансен постовкки пирки пулнă пумалла. 1927 çулта пĕтĕм тĕнђипе çĕрмамăкĕ мĕн ђухлĕ пĕтернине илсен, вăл, вăрçăђђенхипе танаштарсан, 112,5% пулаť. Тĕнђери сутуилӳ ĕçĕ те, тавар хатĕрлессинђен майперех пулин те, çапах вăрçăђђенхи карта çывăхарса пыраť. Ку фактăсем (тĕрĕс йапала) кăпиталисла патшалăхсем ку тĕлĕшрен хăйсен хуçалăхне тĕреклетнине кăтартаççĕ. Кусемсĕр пуçне тата кăпиталисла промышлĕннăçа йĕркелес (ратсионалисатсилес) тĕлĕшрен те пысăк çĕнтерӳсем пур, вăйлă, шултра трестсем, карттелсем туса ăрасна пĕрпĕр çĕршыври промышлĕннăçа çеç мар, пĕтĕм тĕнђипе пĕрлешсем те пур. Происвотствăна технĕккă тĕлĕшĕнђен авантернисем т. ыт. те пур. Çаксем пурте кăпиталисăм хăй картне

ларса пырас ĕç пăртакках ÿснине кăтартаççĕ. Анђах, кăпиталисăм çирĕп, тĕреклĕ хăй картне кĕрсе ларнă (стапилисатсиленнĕ) теме йуратши? Çук, мĕншĕн тесен ку стапилисатси пирки, кашни уйрăм патшалăх ăшĕнђе те, кăпиталисла патшалăхсен хушшинђе те темĕн ђухлĕ хирĕçÿсем пулса тăраççĕ. Кăпиталисла патшалăхсен хуçалăхĕ тата сутуилÿ ĕçĕ пур çĕрте те пĕр тикĕс ÿссе пымаççĕ, хăш çĕрте хăвăрт ÿсеççĕ, тепĕр çĕрте кайарах йулса пыраççĕ, виççĕмĕшĕсенђе пĕтĕмпех ђарăрса, ÿсмесĕр тăраççĕ. Промышлĕннăç хăвăртрах ÿссе пыракан, тем пысăккĕш трестсемпе карттелсем пур патшалăхсен, хăйсен таварĕсене сутмашкăн çĕнĕ рынăксем шырамалла пулаť. Ку ĕç пирки кăпиталисла патшалăхсем хушшинђе питĕ вăйлă хирĕçÿсем тухса кайаççĕ, вĕсем пирки вара çĕнĕрен вăрçă тухасран нимĕнле те хăтăлмалла мар пулса тăраť. Çавăнпа та таварсем хатĕрлес ĕç мĕн ђухлĕ вăйлăланса пыраť, çавăн ђухлех, тĕнђене çĕнĕрен валеçес шутпа, кăпиталисла патшалăхсен хушшинђи кĕрешÿ те çивђĕленсе, ђĕрре кĕрсе пыраť. Кăпиталисла патшалăхсенђи происвотствă (тĕрлĕ тавар хатĕрлес ĕç) вăрçăђђенхи картран иртсе кайнă майĕпе, таварсене сутас вырăнсемшĕн, ђĕрĕ таварсем хатĕрлемелли вырăнсемшĕн кăпиталисла патшалăхсем пĕрпĕринпе кĕрешес ĕç çивђĕленсе пыраť, мĕншĕн тесен империалисăм вăрçи хыççăнхи йĕркесем халĕ ĕнтĕ таварсем сутма тăвăр. Çавăнпа та çĕнĕрен çитĕнсе тухакан хирĕçÿсене килĕштерсе пырас тесе хăтланнисенђен, вăрçă хатĕрĕсене ђакарас тенĕ сăмахсенђен нимĕнле ĕç те тухас çук, вĕсем вăрçă тума хатĕрленнисене пытарма анђах кирлĕ.

## Кăпиталисла патшалăхсенђи хирĕçÿсем

Кăпиталисла патшалăхсем ÿссе пыни пĕр тикĕс мар иккенне кăтартма, пăртакках стапилисатсиленнипе пĕрлех хирĕçÿсем те ÿссе пынине кăтартма епĕ темиçе тĕслĕх (пример) кăтартса парăп. Йевроппа илсен, епĕр кунта мĕн куратпăр? Кермађи питĕ хăвăрт ÿссе пыраť, Анкли кайалла ђакса пыраť, Канатă, Австраљи, Аркенттинă, Киттай малалла тухса пыраççĕ, Франтсипе Иттаљи çирĕпленеççĕ, Америк, ун хыççăн Йаппођи питĕ хăвăрт малалла ыткăнаççĕ. Тĕслĕхшĕн ђи паллăрах патшалăхсен йут çĕршывсемпе сутуилÿ тăвас ĕçне пăхăпăр. Вăрçăђђенхипе танаштарсан Америк сутуилÿвĕ 1925 çулта 134% ытла пулнă, 1926 çулта—143% çитнĕ; Йаппођи сутуилÿвĕ 1925 çулта 177% йахăн, 1926 çулта – 170%

пулнă; Франтсин 1925 çулта 98%, 1926 çулта—99% пулнă, т. ыт. Ку ђыхвăрсемпе фактăсем кăпиталисла патшалăхсем пĕр пек тикĕс ÿсменнине, тата, ÿснĕ май, хирĕçÿсем тухса пынине кăтартаççĕ. Малалла тата стапилисатси ÿснĕ пирки пулса тăракан хирĕçÿсем пур. Ку тĕлĕшрен епĕ Кермађи çинђе ђарăнса тăрас тетĕп, унта ку хирĕçÿсем—ытти кăпиталисла патшалăхсенђе те пур хирĕçÿсем—пуринђен ытла ÿççáн курăнаççĕ. Происвотствăна йĕркелес (ратсионалисатсилес) тĕлĕшрен, технĕккăна лайăхлатса ĕç ÿсĕмне вăйлăлатас тĕлĕшрен Кермађире питĕ пысăк çĕнтерÿсем пур. Тавар хатĕрлес ĕç Кермађире ăраснах питĕ йÿне лармалла тунă, çавăн пирки Кермађи тĕнђери сутуилÿре ыттисемпе тавлашма (конккурентси тума) пултарать. Анђах çав вăхăтрах Кермађи умĕнђе çĕнтерсе илме çук йăвăрлăхсем тăраççĕ, вĕсем Версаљри токăвăр пирки пулса тăраççĕ. Кермађи умĕнђе хăйне çĕнтернĕ патшалăхсене контрипутси тÿлес ыйту тăрать. „Рейн Вестфаљ Хаçађĕ“ 1927 çулăн октăпĕрĕн 14-мĕшĕнђе акă çапла çырать: „1928 ç. çенттапĕрĕн 1-мĕшĕнђен пуçласа çĕнĕ пÿтшетран 1250 мĕлйун тÿлемелли укçана епĕр ăçтан тупма пултарасса Кермађире пĕр çын та пĕлмест“, тет. Кунсăр пуçне тата Кермађи 10 мĕлйарт маркка йахăн парăм тÿлемелле, тата вĕсем тăрăх прођђăн тÿлемелле. Ку парăмсем Кермађишĕн, пуринђен ытла ĕçлекенсемпе хресђенсемшĕн, мăйран пăвакан пăйав пекех пулса тăраççĕ. Ку парăмсене тÿлемешкĕн Кермађин йут патшалăхсене ытларах тавар сутмалла, анђах тавар ытларах сутас тесен, ытти патшалăхсемпе тапăçмалла пулнă пирки, тĕрлĕ хирĕçÿсем тухаççĕ. Происвотствă тĕлĕшĕнђен Кермађи темĕн ђухлех малалла кайма пултарать, анђах çав вăхăтрах ăна, Версаљри килĕшÿ тăрăх касса вакласа, пĕђĕклетсе пăрахнăскерне, хăйĕн происвотствă вăйĕсене кирлĕ таран вăйлăлантарса йама памаççĕ, 1914 çулти вăрçăђђенхи пек, хăй мĕн тăвас тенине тутарма памаççĕ. Çаккăн пирки Кермађири классен кĕрешĕвĕ вăйлăланнăçем вăйланса, ÿссе пымалла. Акă сире тепĕр фактă, кăпиталисăмăн хирĕçÿсем çинђен калакан фактă. Анклийе илсе пăхăпăр. Анкли кайалла ђакса пыни çинђен епĕ каланăђђĕ. Анкли халĕ, пуринђен ытла, кăпиталăн (укçа-тенкĕ) прођђăнĕпе пурăнать. 1925-мĕш çулта таварсем сутса Анкли мĕн пурĕ 100 мĕлйун çтерлĕнк услам илнĕ, çав çулах укçа-тенкĕ кивçен панипе, тата ытти панксен ĕçĕсенђен 420 мĕлйун çтерлĕнк

услам илнĕ. Ку мĕне пĕлтерет? Ку йапала акă мĕн çинђен калаť: Анклири промышлĕннăç кайалла кайса пыраť, кăпиталиссем промышлĕннăç çине пăхасшăн та мар, мĕншĕн тесен вĕсем урăх майпа услам тăваççĕ. Çапла вара... мĕн пур тĕнђешĕн маçтерской пулса тăнă Анкли укçа кивçен парса тупăш тăвакан хуçасен (рантйесен) патшалăхĕ, ĕçлекенсем ваљљи ĕç çук патшалăх пулса тăраť.

Тата епĕр Америкпе Йевроппă хушшинђе шалах кайнă хирĕçўсем пуррине куратпăр. Америк хуçалăхĕ хаљ ĕнтĕ Йевроппăри патшалăхсен хуçалăхĕнђен вăйлăрах, мала иртсе кайнă. Пĕтĕм тĕнђере хаљхи вăхăтра шăратакан хурçăн 60 прођђăнне Америк шăратаť. Пĕтĕм тĕнђере кăларакан нефтăн—72 прођђăнне, пăхăрăн—53 прођђăнне, çĕркăмрăкĕн—43 прођђăнне Америк кăлараť. Тĕнђери мĕн пур пек ылтăнран çурри Америкре пухăннă. Америкĕн хуçалăх çавăн пек вăйланса Йевроппăннинђен мала иртсе кайни кăпиталисăмăн ĕçĕсене татах та йăвăрлатаť, майсăр нумай пысăк шарсем тума пултараť. Çак йăвăрлăхсене, тата империалисăм вăрçи пулассине кăпиталисла патшалăхсем таса пĕлсе тăраççĕ, май килнĕ таран ытларах та ытларах хĕçпăшалланма, çар вăйне ўстерме тăрăшаççĕ, анђах та хирĕçўсене, вăрçă вăрçма хатĕрленнине ĕçхалăхĕнђен пытарма хăтланаççĕ.

## Хуçалăха пĕтĕçтереççĕ—вăрçма хăтĕрленеççĕ.

Пĕтерме май çук хирĕçўсем ўссех пынине кура, тата вăрçă пулассине кура кашни çĕршыври пуршуаçи хăйсен патшалăхĕнђи хуçалăха пĕр ђăмăра пĕтĕçтерме тăрăшаť. Кашни патшалăхри пуршуаçи хăйĕн хуçалăхне пĕр ђăмăра пĕтĕçтересшĕн те, патшалăх влаçĕпе пĕр пулса, ытти патшалăхсене тапăнма майлă тăвасшăн. Вăйлă патшалăхсем ытти патшалăхсене тапăнса, колоњисем, рынăксем (тавар сутмалли вырăнсем) туртса илме, пĕђĕк патшалăхсем хăйсене тапăнакансем пулсан хирĕç тăма хатĕрленеççĕ. Тепĕр йенђен, хуçалăха çавнашкал майпа пĕтĕçтерсе туни ĕçлекенсен класне хирĕç тăма, револљутсисене пĕтерме майлă туни пулаť. Çавăнпа хаљ претприйаттисене питĕваскасах шултра трестсене пĕрлештереççĕ, тата çав трестсемпе тĕрлĕрен хуçасен претприйаттийĕсене патшалăх аппарађĕ çумне, пуршуаçи тиктаттурин аппарађĕ çумне çыпăçтараççĕ. Ку тĕлĕшпе епĕ виç-тăват тĕслĕх илсе кăтартăп. Кермањийе илсе пăхăпăр. Унти мĕн

пур аксионерлă опђĕствăсен тĕп кăпиталĕ 18 мĕлйарт маркка ситет. Çав 18 мĕлйарт маркkăран 2 мĕлйарт çурă марккă химипе хурçă тресђĕсен тĕп кăпиталĕ пулаť. Хурçă тресђĕ Кермаңире шăратакан хурăçăн виçĕ пайĕнђен икĕ пайне шăратаť, пурне те хăй аллинђе тыткалаť, Кермаңи правиттĕлствине мĕнле политтĕк тытса пымаллине кăтартса параť. Хими тресђĕ хими происвотствин 80 прођђăнне хăй аллинђе тытаť. Електритсă вăйĕн 5 пайĕнђен 4 пайĕ патшалăх аллинђе тăраť. Çапла вара Кермаңин пĕтĕм промышлĕннăçĕ пĕр ђăмăра пуçтарăннă, вăл вара, хăй майĕпе, Кермаңин тулти, тата шалти политтĕкĕпе çыхăнса тăраť. Çакă ĕнтĕ кăпиталисла претприйаттисене пĕр тĕслĕ пĕтĕçтерни пулаť, вăл, кирлĕ ђух, Кермаңи патшалăхĕн влаçне мĕн тумаллине кăтартса, хушса тăма пултараť, кăтартса, тата хушса тăраť те.

Хуçалăха тепĕр тĕслĕ пĕтĕçтернине илсе пăхăр. Вăл Йаппоңире аван курăнаť. Йаппоңи хађ питĕ хăвăрт малалла кайаť. Унта промышлĕннăçпа панккăсен кăпиталĕнђен 30 прођђăнĕ, ђукупçулсене шутламасан, патшалăх аллинђе тăраť. Мĕншĕнха промышлĕннăçа патшалăх аллине пĕтĕçтернĕ? Йаппоңипе Америк хушшинђе сирсе йама май çук хĕрĕçӳсем пур. Америк империалисăмĕ йаланах хăратса тăни Йаппоңийе хуçалăха патшалăх влаçĕн аппараđĕпе çыхăнтарма хĕтĕртнĕ. Америке хирĕç тăма тунă ăна.

Хуçалăха виççĕмĕш тĕслĕ пĕтĕçтерсе тунине илсе пăхăпăр. Ку вара Итталире аван курăнаť. Унта хуçалăха патшалăх аппараđĕ çумне çыпăçтарса тăваççĕ. Муссолини „пĕрлешӳллĕ патшалăх" тунă. Сутуилӳ тăвакансем, промышлĕннăç претприйаттисен, панксен хуçисем, фашшиссем, т. ыт. те уйăрнă çынсене патшалăха тытса тăрас ĕçе хутшăнтарса фашшиссен тиктаттурине тума, çĕршывăн хуçалăхне йертсе пыма, ĕçлекенсен класне нимĕн хĕрхенмесĕр ĕçлеттерсе уссине хăйсене илме тунă çав патшалăха. Итталири фашшисла профсойуссем— фашшиссен тиктаттурин тĕп тĕрекĕ пулса тăраççĕ. Çав фашшисла профсойуссем пулăшнипе рапођђисен шалуне ђакараççĕ, класла кĕрешӳве нимĕн хĕрхенмесĕр пусараççĕ, т. ытти ĕçсем те тăваççĕ.

Йулашкинђен тата, хуçалăха тăваттăмĕш тĕслĕ пĕтĕçтерсе туни Австралире курăнаť. Унти кăпиталисăма--мунитсиппалисла кăпиталисăм, теççĕ: претприйаттисем опщђинă аллинђе тăраççĕ, хуласем хăйсем тĕллĕн промышлĕннăç тăваççĕ.

Хуçалăха ĕнтĕ çакнашкал майсемпе пĕтĕçтерсе тăваççĕ, патшалăх аппараҕĕ çумне çыпăçтараççĕ. Ăна хирĕçӳсем çивĕҕленсех пынă пирки тăваççĕ.

**Хирĕçӳсене вăрçăсăр татма пултараймаççĕ.**

Хирĕçӳсем пуррине, вăрçă пулассине, тата Йевроппă хаҕхи вăхăтра кайалла кайнине пуршуаçин економĕк ăслăлăхне пĕлекен ăстаçăссм те сисеççĕ. Пуршуаçи економисĕ—Вернĕр-Сомпарт йатлă профессăр, хăйĕн „Кăпиталисăм ҕи çӳле хăпарса çитнĕ вăхăтри хуçалăх пурнăçĕ“ йатлă кĕнекин ҕи умсăмахра, çапла çыраť:

«Унпа пĕрле (вăрçăпа пĕрле пулаť ĕнтĕ вăл) кăпиталисăм ҕи çӳле хăпарса çитнĕ вăхăт трукax пĕтсе ларҕĕ. Кăпиталисăм сӳнме пуçлассине кăтартакан паллăсем 1914-мĕш çул умĕнхи çулсенҕех палăрнăҕҕĕ те... Вăл ĕнтĕ... ватлăх çитни палăрни, пĕрĕмĕш шăл тухса ӳкни... ҕи малтан шуралнă çӳç пĕрҕи. Вăрçă хыççăнхи пурăнăçа тинкерсех сăнаса тăракан çын, кăпиталисăм йăвашланмалли тапхăра çитсе кĕнине ĕненмесĕр иккĕленсе тăма пултараймасť. Ҕăн та ĕнтĕ—ку тапхăр ватлăхах марха, анҕах „арçынăн ҕи аван çулĕсен“ тапхăрĕ. Питĕ маттур пулмалли вăхăт иртсе карĕ. Хĕрĕхĕмĕш çулсен йулашки çулĕсем пуçланҕĕç».

Тепĕр питĕ паллă економис, тĕнҕери хуçалăха сăнаканскер—Пернхарт Карнс йатлă профессăр, хăйĕн „Хуçалăхри вăрçă, тата пĕтĕм тĕнҕери хуçалăх конферентсийĕ çинҕен“ йатлá кĕнекинҕе, Сомпарта хирĕç калава, çапла çыраť:

„Ҕăн та ĕнтĕ, кивĕ Йевроппăра пайтах патшалăхсем пур,—унта кăпиталисăм хăйне кайалла кайса пĕтесрен çăлса хăварма тăрăшнине ҕарса тăракан пысăк сăлтавсем пур, йе тата унти çав туртăмсем хăйсем те кайалла кайаканскерсем пулса кайнă. Анҕах ытти тĕнҕери кăпиталисăмăн çав сывлăшĕ ҕĕрехха, унăн ĕçĕсем вăл пуррине кăтартаççĕ... Тĕнҕери кăпиталисăмăн ҕĕри хаҕ ĕнтĕ Йевроппăра мар, Çурçĕрти Америкри Пĕрлешӳллĕ Штатсенҕе тапаť, вĕсем кăпиталисăмăн çитес „ҕи çӳле хăпарса çитнĕ“ тапхăрĕнҕе йертсе пыракансем пулҕĕç, унтанах, çĕнĕ çĕршывсем пулăшнипе, кăпиталисăмăн пухăнса пыракан вăйĕ хăйĕн çĕнтерӳллĕ утăмĕсене пуçласа йарĕ. Вĕсемпе танаштарсан, Йевроппă ватăлса кайма

пуçланӑ Рим пекех туйӑнать. Ватӑлса пыракан Рим ӳссе пыракан йӑвӑрлӑхсенђен халӑха çӑкӑр валеçсе парса хӑтӑлма шутланӑ“.

Çак икӗ çын çырнинђен илсе кӑтартнӑ татӑксем кӑпиталисӑмла патшалӑхсем йепле тытӑнса тӑнине аван кӑтартса тараççӗ, анђах та пурне пӗрле пӗрлештерсе каланӑ ђух, икӗшӗ те йӑнӑш калаççӗ. Совет Сойусӗ вӗт, вӑл—пӗр шӑл анђах мар, çӗрӗн улттӑмӗщ пайне йышӑнса тӑрать. Йевроппӑ та—ђуралӑхлӑ Рим мар, Йевроппӑра Ленинисӑмпа хӗçпӑшалланнӑ пролеттариат пур, пролеттариат—кӑпиталисӑм йӗркине пытармалли шӑтӑка ђавать. Амерӗк вилме пуçланӑ кӑпиталисӑм йӗркине çӑлӗ, тесе шанни те ахалех пулать. Кӑпиталисӑм хирӗçӗвӗсемпе тем ђухлӗ тапкалансан та лӑпкӑ майсемпе тӑма çук. Пуршуаçишӗн пулсан пӗртен пӗр май анђах пур, вӑл— вӑрçӑ.

Асӑннисене хисепе илсе, Сталӗн йулташ 15-мӗш сйесра каларӗ:

Халђхи вӑхӑтри пӗтӗм тӗнђери лару-тӑру, тата „пӗрпӗринпе лӑпкӑ пурӑнни“ пӗтӗмпех саплӑк лартса пӗтернӗ, саплӑксем çинçе çипсем çинђе анђах тытӑнса тӑракан кӗпе пекех. Çав çипрен тытса туртсан, ӑна хӑш тӗлтен те пулин татса пӑрахӗан, пӗтӗм кӗпи саланса кайма пултарать. Халђхи вӑхӑтра „пӗрпӗринпе килӗштерсе пурӑннине“ тытса силлес пулсан, çав „пӗрпӗринпе килӗштерсе пурӑнни“ тенӗ çурт пӗтӗмпех ишӗлсе анма пултарать. 1914-мӗш çулта та çавӑн пекех пулнӑ: Сарайӗвӑра вӗлернӗ те, вӑрçӑ тапранса кайнӑ.

## Колоңисенђи халӑх револђутси йенне сулӑнать.

Çакнашкал хирӗçӳсемпе пӗрлех, колоңи пулса тӑракан çӗршывсенђе те револђутси хумӗ ӳссех пырать. Мароккӑра, Çирире, Интире, т. ыт. колоңисенђе те восстаңисем пулђӗç. Киттайра та револђутси хумӗ ӳссех пырать.

Асӑннисене пурне те пӗрле илсен, вӗсем кӑпиталисӑм йӗркин никӗсӗсене тымарринђен пуçласах силлентереççӗ.

Тем пекех йӑвӑр пулсан та, ӑна сутакансем, улталакансем тупӑнаççӗ пулсан та, Киттайри револђутси сарӑлсах, малалла кайсах пырать, нийепле вӑй та ӑна пӗтерсе хума, тӗп туса лартма пултараймӗ. Вӑхӑтлӑха пыракан йӑвӑрлӑхсем, вӑхӑтлӑха парӑннисем пулма пултараççӗ, анђах та Киттайри револђутси çӗнтерӳллӗ утӑмсемпех малалла кайӗ.

*„Хăвăрах шутласа пăхăр,—тет Сталĕн йулташ,— çĕр çинче 1905 мĕлйун çын пурăнать. Вĕсенчен 1134 мĕлйун çын колоницисемпе çурмалла колоницисенче, 143 мĕлйун çын Совет Сойусĕнче, 264 мĕлйун çын варринче тăракан çĕршывсенче пурăнаççĕ. Колоницисемпе çурмалла колоницисене пусмăрласа пурăнакан, шулăпра империалисла çĕршывсенче мĕн пурри те 363 мĕлйун çын анчах пурăнаççĕ. Паллах ĕнтĕ, колоницисем вăранса революци йенне сулăнни пĕтĕм тĕнчери кăпиталисăм пĕтессине систерет.“*

**Классен хушшинчи хирĕçӳсем те ӳссе, хайарланса пыраççĕ.**

Епĕ асăнтăм: кăпиталисăм йусанса, çирĕпленсе пынинчен тухакан хирĕçӳсемсĕр пуççăр, классем хушшинчи хирĕçӳ те ӳссе, çивĕчленсех пырать, мĕншĕн тесен пуршуаçи хăйĕн промышлĕннăçне ĕçлекенсен йунне ĕмсе, ĕçлекенсен шалуне пĕрмайах чакарса пырса, ĕç кунне вăрăмлатса, тата ытти çавнашкал майсемпе йусать, малалла йарать, йĕркелет. Амерĕкпе оккеан леш йенчи çĕршывсемсĕр пуççăр, урăх ниçта та ĕç укçи вăрçă умĕнхи виçене çитеймен. Промышлĕннăça кăпиталисла майпа йĕркелени пайтах—пайтах çынна ĕçсĕр тăратса хăварать, мĕншĕн тесен пуршуаçи çĕнĕ машшинсемпе ĕçлемелле туса, ĕçлекенсен шутне чакарать. Çитменне тата пуршуаçи ĕçлекенсен класне питĕ хайаррăн пусмăрласа кăпиталисăм çирĕпленнине нумай вăхăта пымалла тума хăтланать. Пуршуаçин шурă террорĕ пур чикĕсенчен те иртсе кайать. Профсойуссене, ĕçлекенсен ытти орканисатçисене тапăнса çĕмĕрни, комуниссене хупăрласа ухтарни, тытни, т. ыт. те фашшисăм йĕрки пулса карĕç, кăпиталисăм йĕркине сыхлама кирлĕ йапаласем пулса тăчĕç.

Кăпиталисăм ĕçлекенсене хытă пусмăрласа çирĕпленнĕ пирки, ĕçлекенсем те пуршуаçийе хирĕç вăйлăрах кĕрешме тытăнаççĕ. Пуршуаçи ĕçлекенсен класне йăвăрах парăнтарнăччĕ, анчах хал ĕнтĕ революци йухăмĕ каллех чĕрĕлме, вăйланма пуçларĕ. Ĕçлекенсен класĕ хал ĕнтĕ сулахай йенне (комуниссем йенне) сулăнать. Классен хушшинчи кĕрешӳ çивĕчленсе пынине, тата ĕçлекенсен класĕ сулахай йенне сулăннине Анклире чаплă, аслă стачкă пулни, Венăри ĕçлекенсем восстани туни, пĕтĕм тĕнчери пролеттариат Саккопа Ванчеттийе вĕлернине хирĕç тăни кăтартать. Чылай патшалăхсенче: Керманире, Франтсире, Чеххословаккире, Итталире,

т. ыт. те стађкăсем пулса иртеççĕ. Кăпиталисла патшалăхсен çарĕсенђе пăлхавсем пулаççĕ: Тулон хулинђи пăлхав, сăппасра тăракансем хушшинђи йĕркесĕрлĕхсем, тата урамсене тухса фашшиссене хирĕç пысăк темонстратси туни—çак ĕçсем пурте Франтсире пулнă. Кермађире те ђылай темонстратсисем туса иртернĕ, хĕрлĕ фронтовиксен кунне иртернĕ, хĕрлĕ фронтовиксем Совет Сойусĕшĕн тăма сăмах панă. Войккăв йулташа вĕлерсен пур патшалăхсенђе те пысăк темонстратсисем тунă. Çаксем ĕнтĕ, ĕçлекенсен класĕ вăй пухнине, хăйĕн вăйне сăнаса пăхнине, пуршуаçипе кĕрешме пуçланине кăтартаççĕ. Çакăн пирки комуниссен парттисемпе сотсиал-темократсем хушшинђи кĕрешӳ вăйланать. Ĕçхалăхне хăйсем хыççăн йертсе пырассишĕн комуниссен парттисемпе сотсиал-темократсем майсăр хытă кĕрешеççĕ, мĕншĕн тесен ĕçхалăхĕ, сотсиал-темократсем тем пекех ђейе, тата путсĕр хăтланаççĕ пулин те, вĕсем классене пĕрпĕринпе килĕштерсе пурăнтарасси çинђен темĕн ђухлех халап йараççĕ пулин те, револђутси йенне сулăнать, сотсиал-темократсенђен уйăрлать. Профсойуссем, ĕçхалăхĕ ытларах та ытларах комуниссем майлă кайма пуçлаççĕ. Ђылай патшалăхсенђе (Кермађи, Полђшшă, Ђеххословакки) суйлавсем вăхăтĕнђе комуниссемшĕн сас пани ӳсет. Çав вăхăтрах тата сотсиал-темократсемшĕн сас пани те ӳсет. Анђах та сотсиал-темократсемшĕн сас пани вĕтĕ пуршуаçиллĕ сийсен, слушăшђисен, тата ытти çавнашкаллисен шуђĕпе ӳсет. Комуниссемшĕн сас пани ĕçлекенсен шуђĕпе ӳсет. Çакă та ĕçлекенсен класĕ сулахайа сулăннине кăтартса тăрать.

## Комунисла парттисен сатађĕсем...

Комунисла парттисен ĕçлекенсен револђутсиллĕ йухăмне йертсе пырас ĕçе вăйлăлатмалла. Комуниссен çак йухăма йертсе пыракансем пулас пулать, ĕçхалахĕпе тађăрах, ытларах çыхăнас пулать те, ĕçхалăхне сотсиал-темократсенђен уйăрса илес пулать. Сотсиал-темократсемпе кĕрешес ĕçре пирĕн пур çĕршывсенђи ĕçлекенсен те пĕр пулса ĕçлемелли фронта тăрăшсах айалтан (профсойуссене йертсе пыракансем урлă) пурăнăçа кĕртсе пымалла. Ку кĕрешĕве нумай майсемпе сарса йамалла. Вăрçă хăрушлăхĕпе кĕрешес ĕç тавра, пуринђен те ытла Совет Сойусне хирĕç пулас вăрçă хăрушлăхĕпе кĕрешес ĕç тавра, тата ĕçлекенсен класне çывратса йама

пултаракан лăпкă самана çинђен халаплакансемпе кĕрешес ĕç тавра ĕçхалăхĕн вăйне пухас пулаť. Парттире тăман ĕççыннисен орканисатсийĕсен ĕçĕсене сарма тăрăшмалла. Совет Сойусĕн тусĕсен, тата империалисăма хирĕç кĕрешекен ликăн ăнăçлă ĕçĕсемпе усă курмалла, Совет Сойусĕпе Киттайри револђутсийе сыхлас ыйтусене сÿтсе-йавма сйессем туса иртерес пулаť. Империалисла вăрçа хирĕç проппакангă тунă ђух, пирĕн претставиттĕлсем Шеневăра каланипе, сĕннипе усă курмалла. Пирĕн пĕтĕм тĕнђери профсойуссене пĕр пулса ĕçлемелле тăвассишĕн хытăрах кĕрешме тытăнмалла. Ĕçлекен кашни кун мĕн ыйтнине аслă политтĕкĕн ыйтăвĕсемпе, вăрçă ыйтăвĕсемпе çыхăнтармалла, вара ĕçхалăхне тĕп лосăнк патне, пролеттариат тиктаттурин лосăнкĕ патне илсе пымалла. Сотсиал-темократсем промышлĕннăçра килĕшÿ тăвасси çинђен, классене пĕрпĕринпе килĕштерсе, туслашса пурăнмалла тăвасси çинђен пуплеççĕ. Сотсиал-темократсен халапписене тăрă шыв çине кăлармалла. Йевроппăра, тата ытти çĕршывсенђе те ĕçлекенсен класне Амерĕкри пек улталама тытăнма хăтланнине хирĕç шутсăрах хытă кĕрешес пулаť.

## Сотсиал-темократсем ĕçлекенсен хускануне Амерĕкри пек туса пыма хăтланаççĕ.

Мĕнре вăл, ĕçлекенсен хускануне америкканисатсилени? —вăл тĕнђе хуçалăхĕнђе Амерĕк хуçа вырăнĕнђе тăнинђе Тĕнђе хуçалăхĕн тĕп вырăнĕ Йевроппăран Амерĕке куçни çинђен епĕ паçăрах каларăм. Çак йапала Амерĕк кăпиталне ĕçлекенсен класĕн çÿлти сийĕсене ыттисенђен уйрăмах аван вырăна лартма май парса, вĕсене тĕрлĕ майсемпе хăйсене майлă çавăрма пулăшаť. Ку, Амерĕкре пĕр йенђен ĕçлекенсен аристократтине туса кăларса пыраť, тепĕр йенђен кунта килсе тулнă ĕçлекен некрсен, т. ыт. мĕлйуншар шутланакан масси ђурасем вырăнђе пурăнаť. Сăмахран, Амерĕкри ĕç фетератсине (сойусне) илер. Амерĕкре ĕçлекенсем 25 мĕлйун çынна йахăн, слушăшђисем ку шута кĕмеççĕ, çак ĕçлекенсенђен орканисатсиленнисем 3—4 мĕлйун. Çак орканисатсиленнисенђен 75 прођђăнĕ Амерĕкри ĕç фетератсинђе тăраť. Çак сойус пĕтĕмĕшпех аристократсен сойусĕ, ăна йертсе пырас ĕçе те пуршуаçи тарçисем туса пыраççĕ. Ак машшиниссен сойусĕн претçетаттĕлĕ Стон хушаматлăскер

çултаlăка 100 пин тенкĕ шалу илсе тăратˇ, йе уйăхра 8 пин те 300 тенкĕ. Ку претçетаттĕл камшăн тăрасси паллах. Çавăнтах „компаниллĕ сойус“ тийекен тепĕр орканисатси пур. Ку сойуссем хапрăк-савăт хуçисемпе вĕсенђе ĕçлекенсене пĕрлештерсе тăраççĕ. Ку сойуссен тĕп лосăнкĕ классен кĕрешўне хирĕç „промышлĕннăçри лăпкă пурнăç“. Ку сойуссене хапрăк-савăт хуçисем хăйсем тытса усраççĕ, ку сойуссенђе классен кĕрешў майлă ĕçлекен нимĕнле орканисатсисем те тума памаççĕ. Ку сойуссен тĕп сатађĕ—„происвотствăна хăпартасси“. Вĕсем нумайĕшне епĕр туса пынинђен илсе пыраççĕ. Происвотствă совешђаңисем пур, сăмахран: Палтимора-Окайо йатлă ђукунçул çинђе йулашки çул хушшинђе 45 претприйаттире тĕрлĕрен претлошенисем (тума сĕнни) 18 пин пулнă, вĕсенђен 15 пинĕшне йышăнса ĕçе кĕртнĕ. Çапла ĕçленĕ хыççăн 1924-мĕш çултан пуçласа 1926-мĕш çула çитеђђен услам икĕ хут нумайланнă. Ĕçлекенсен класĕн виççĕмĕш орканисатсийĕ вăл ĕçлекенсен панккĕсем. Ĕçлекенсен çўлти сийĕсемпе пуршуаçин вĕреннĕ çынĕсем, ĕçлекенсен класĕ хăйсен панккĕсене туса, вĕсенђе питĕ нумай укçа-тенкĕ пухса, кăпиталиссемпе ăмăртса ĕçлесе пырса, лăпкă пурăнсах сотсиалисăм тума пултаратˇ, тесе вĕрентеççĕ. Ĕçлекенсем хăйсен панккĕсене туса, унтан тĕрлĕрен претприйаттисем уçнă хыççăн кăпиталисăм йерипенех сотсиалисăм йĕркине куçатˇ, теççĕ. Çак панксем çинђен Амерĕкĕн паллă пуршуаллă екkономисĕ Харвĕр „Локкомоттивсене тăвакан“ йатлă шурналта çапла çыратˇ: „Ĕçлекенсен панккĕсем—вăл тĕнђере пĕртен пĕр револђутси. Çак панксем мĕн туса лартма пултарни, пирĕн 31.000 панкра выртакан 50 мĕлйарт толлăр укçа-тенкĕрен çуррине йахăн пĕтĕм çĕршыври ĕç укçи вырăн йышăнса тăнине, тата фермă хуçисен çултаlăкри тырпулли çак 50 мĕлйарт толлăрăн тепĕр çуррин ⅔ вырăнне йышăнса тăнине аса илсен, лайăх курăнатˇ. Амерĕкри ĕçлекенсемпе хресђенсенђен ђылайĕшĕ харпăрхăй укçи-тенкине хăйсен панккĕсенђе пĕр çĕре пухса укçа-тенкĕ хисепне вăйлатма пултарсан, вĕсем пĕр çын ĕмĕрĕнђех пĕтĕм тĕнђипе ђи пуйан патшалăхăн кăпиталне контролђ туса тăма пултараççĕ,“ тет. Ĕçлекенсем пĕр çын ĕмĕрĕнђех пуйан çĕршывăн кăпиталне контролђ туса тăма пултараççĕ, тени вăл ултав, мĕншĕн тесен пуршуаçи ăна тума нихăçан та парас çук. Влаç пуршуаçи

аллинђе ђухне, çĕршыври промышлĕннăçăн пĕтĕм вăйĕ кăпиталиссен аллинђе ђухне, ĕçлекенсен пур панккĕсемпе те пуршуаçи хăй промышлĕннăçне вăйлатма усă курат̆. Халĕ ун пек панксем 37. Ĕçлекенсем вăл панксене хăйсем пухнă укçа-тенкине хураççĕ, вăл укçа-тенкĕпе кăпиталиссем усă кураççĕ.

Влаç пролеттариат аллинђе ђухне ĕçсем ăраснах урăхла. Ун ђухне панксене хунă укçа-тенкĕпе халăх хуçалăхне, пролеттарилле влаçа çирĕплетнĕ çĕре йарса усă кураççĕ. Халĕ çак панксем тавра ĕçре туса курса пăхнă пекех пысăк шухăшсем сараççĕ. Ку панксем вĕсем ђăнласах екномĕк революутсине тумалла, ĕлĕкхи политтĕк революутсийĕсем ним те паман, теççĕ, т. ыт. те.

Çак Карвĕрах хăйĕн «Пĕрлешӳллĕ Штатсенђе пыракан економĕк революугсийĕ» йатлă 1925-мĕш çулта кăларнă кĕнекинђе çапла çырат̆: «Пĕртен пĕр економĕк революутсийĕ халĕ Пĕрлешӳллĕ Штатсенђе пырат̆. Ку, ĕçлекенсемпе кăпиталиссем хушшинђи уйрăмлăха пĕтерекен революутси. Ку революутси ĕçлекентен кăпиталис туса хурат̆, кăпиталиссенђен нумайĕшне тĕрлĕрен ĕçлекенсем тăват̆, мĕншĕн тесен вĕсем пĕр хăйсен кăпиталĕпе çеç пурăнма пултараймаççĕ. Ку, тĕнђе историнђе уйрăмах çĕнĕ йапала». Ку революутсин çулĕсене Карвĕр çаксене шутлат̆: «Пĕрремĕшĕ—укçа-тенке панксене хурасси вăйланса пыни, иккĕмĕшĕ — трестсен актсийĕсене илсе пырса ĕçлекенсем укçа-тенке панксене хуни, виççĕмĕшĕ—ĕçлекенсен панккĕсем ӳссе пыни». Ак мĕнле çулсемпе ĕçлекенсен массисен пуçне çавăраççĕ, мĕнле ĕçлекенсене классен кĕрешĕвĕнђен пăрăнтарасшăн тăрăшаççĕ Амерĕк пуршуаçипе ĕçлекенсен аристократтийĕ. Ак мĕн пулат̆ Йевроппăна революутсиллĕ хусканупа Амерĕкре кĕрешекен майсене куçарас тени. Халĕ пĕтĕм тĕнђери сотсиалтемократсем ĕçлекенсен хускануне Амерĕкре кĕрешекен майсемпе çавăрса йама, çакăн хыççăн вара ĕçпе кăпитал хушшинђе, промышлĕннăçра килĕшӳ тума тăрăшаççĕ. Йевроппăра ĕçлекенсен панккĕсем, компаниллĕ сойуссем, т. ыт. те тума, ĕçлекенсен хускануне Амерĕкри пек çавăрса йама пултармаллаи? Çук, Амерĕкре ăна тума май пур, мĕншĕн тесен Амерĕк хуçалăхĕ хăй хуçа пулса тăрат̆, ĕçлекенсен аристократтийĕ кăпиталиссемпе пĕрле, тепĕр йенђен тата пуршуаçипе ĕçлекенсен класĕн çӳлти сийĕ пусмăрласа

ђурара тытакан ĕçлекенсен мĕлйуншар массисем пур. Йевроппăра урăхла. Кунта ĕçлекенсен класĕ сулахай йеннелле сулăнса пырат̆. Киттайра револђутси. Колоњи çĕршывĕсенђе ирĕке тухасшăн хусканусем, тата кăпиталисла патшалăхсем курса иртерекен пысăк йăвăрлăхсем пуррине куратпăр епĕр.

Çавăнпа Амерĕкĕн ĕçлекенсен хусканупе кĕрешес майĕсене Йевроппăра тума çук. Анђах Амерĕкĕн ĕçлекенсен хусканупе кĕрешес майĕсене Йевроппăра тума çук, тесе сотсиал-темократсен промышлĕннăçри килĕшӳ, ĕçлекенсен хусканупе кĕрешес майсене Амерĕкри пек тăвас, тенĕ лосăнкĕсене хирĕç кĕрешме те кирлĕ мар, теме йурат̆и? Çук. Апла шухăшлани тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен сотсиал-темократсем пуршуаçийе пĕтĕмĕшпех парăннă, вĕсем пĕтĕмĕшпех пуршуаçи майлă. Вĕсем промышлĕннăçри килĕшӳ çинђен вĕрентеççĕ, ĕçлекенсен пуçне сĕрĕм тултараççĕ, ĕçлекенсене классен кĕрешĕвĕнђен пăрăнтарса йараççĕ, çапла вара пуршуаçийе ĕçлекенсен класĕ çине тăрса çĕнтерме пулăшаççĕ. Сотсиал-темократсем хăйсен суййипе, ĕçхалăхне пуршуаçийе тытса парас тĕлĕшрен ним умĕнђе те ђаранса тăмаççĕ. Сăмахран: хапрăк-савăт хуçисемпе ĕçлекенсем хушшинђе тăвакан тариф токăвăрне „ĕç укçине сотсиалисăм йĕркипе туни“ теççĕ, „хуçалăхри темократти“ тийекен лосăнка кăларса параççĕ. Ку, хапрăк-савăтсем çумĕнђи комиттетсем, профсойуссем урлă килĕшӳллĕ ĕçленĕ вăхăтрах сотсиалисăм йĕркине куçма май пуррине пĕлтерет. Сотсиал-темократсен ĕçлекенсен класне пуршуаçи аллине тытса паракан ĕçĕсене кăтартса, массăсене ĕçлекенсен класĕн тиктаттури лосăнкăсем тавра пĕтĕçтерсе, çак суйа йумахсене хирĕç пит те хайарăн кĕрешмелле. Ăна тума пирĕн вăйсем пури? 1926-мĕш çулăн иккĕмĕш çур çулĕн пуçламĕшĕђђен йут патшалăхсенђи комуниссен парттисен ӳсĕмĕ ђакса пыђĕ пулсан, унтан вара ĕçлекенсен класĕ сулахайа сулăнса пынипе комуниссен парттисем пĕрмайах ӳссе пыраççĕ. Ĕçлеме питĕ йăвăр пулсан та, йуг патшалăхсенђи комуниссен парттисем ӳссех, вăйлансах пыраççĕ. Кĕрешӳ ĕçĕнђе комуниссем парттире тăман массăсене хăйсене майлă çавăрни те ӳссех пырат̆. Партти ђленĕсем хастарлансах пыраççĕ, итеолоки тĕлĕшĕнђен Ленин çулĕпе пыраççĕ. Ĕçре пиçсе хăнăхнă пирĕн партти те Коминтернра ĕçре кăтартса йертсе пыракан вырăн йышăнса тăрат̆. Йулашки вăхăтра комуниссен парттисене

çирĕплетес, вĕсене поЉшевиксен çирĕп çулĕпе илсе пырас тĕлĕшпе нумай ĕçсем тунă.

Çаксем пурте Коминтерн хăйĕн умĕнЂе тăракан сатаЂсене туса çитересси çине кăтартаççĕ. Кунсăр пуçне тĕнЂери пролеттариатăн тĕнЂери револЂутсин тĕп вырăнĕ—Советсен Сойусĕ пур. Унтан вăл малашнехи кĕрешӳсене ваЉЂи хăнăху илсе пыраť.

## Совет Сойусĕпе кăпиталисла патшалăхсем хушшинЂи лару-тăру.

Халĕ Совет Сойусĕпе кăпиталисла патшалăхсем çине пăхар. Мĕм куратпăр епĕр кунта? Октапĕр РевоЉутси 10 çул тултарни мĕн пур тĕнЂери ĕçлекенсен класĕ Совет Сойусне питĕ йуратса, ăна пулăшса пынине кăтартрĕ. Совет Сойусне сыхлас тенĕ лосăнк тĕнЂери пролеттариат хушшинЂе Ђи паллă лосăнк пулса тăраť. Халĕ, пĕтĕм тĕнЂери пуршуаçипе сотсиал-темократти пирĕн çинЂен темĕн Ђухлĕ суйаççĕ пулсан та, епĕр сотсиалисăм туса пынине тĕнЂери пролеттариат пĕлет, мĕншĕн тесен ĕçлекенсен класĕ ăна хăй куçĕпе курса тăраť. Пирĕн çĕнтерӳсем, тата темиçе мĕлйун ĕçхалăхĕпе пусмăр айĕнЂи халăхсем пире йуратни—пуршуаçипе унăн хӳри хыççăн çӳрекен сотсиал-темократтине канăç памаççĕ. Совет влаçĕ пĕтсе ларасса, йе вăл тепĕр майлă пулса пăсăлса кайасса шанми пулнăскер, вăл (пуршуаçи) Совет влаçне çар вăйĕпе çĕмĕрсе тăкма хатĕрленет.

ХаЉхи вăхăтра Совет Сойусĕпе кăпитал тĕнЂи хушшинЂи лару-тăру питĕ çивĕЂе кĕрсе кайни палăраť. „Килĕшӳллĕ пĕрле пурăнас" вăхăт иртсе кайрĕ, халĕ ĕнтĕ епĕр ССРС-не хирĕç вăрçă хатĕрленĕ вăхăта çитсе кĕтĕмĕр. Темĕн тĕрлĕ конферентсисем, канашлусем пухăнаççĕ, хĕçпăшалсене пĕтересси çинЂен, йе хĕçпăшалсене сахаллатасси çинЂен пуплеççĕ, анЂах çапла „килĕшӳллĕ калаçнă" вăхăтрах кăпитал тĕнЂи пĕрмайах вăрçă тума хатĕрленсе пыраť, пуринЂен малтан ССРС-не хирĕç хатĕрленет. АнЂах, апла пулсан, мĕншĕн Анкли ку таранЂЂен Совет Сойусне хирĕç пĕр вăрçă фронЂĕ туса çитерейменши? Ку йапала империалиссен хушшинЂе Совет Сойусĕ пирки пĕрлĕх çукран килет. Пуршуаçийĕн пирĕнпе екккономĕк тĕлĕшĕнЂен хутшăнса тăракан, пире таварсем сутса, пиртен те таварсем, тырпул т. ыт. илсе тăракан пайĕ, патша парăмĕсене тӳлемен пирки нимĕн те

çухатман пайĕ, пуринђен ытла лăпкă вăхăтра кирлĕ, пур халăха та кирлĕ таварсем хатĕрлекен пайĕ—пирĕнпе килĕшўллĕ пурăннинђен усă курать. Пуршуаçийĕн тепĕр пайĕ, револђутси пирки хапрăк-савăђĕсене туртса илнĕ пайĕ, патша парăмĕсене илеймен пайĕ—пирĕн çине тăшман пулса çĕмĕрсе кĕресшĕн, Совет влаçĕпе нимĕнле килĕшў тумасăр кĕрешесшĕн. Анђах пуршуаçийĕн килĕшўллĕ пурнас тейекен пайĕ Совет влаçĕ пулнипе пĕтĕмпех килĕшнĕ, ĕмĕрех çапла пурăнма хатĕр, тесе шутлама йурамасть.

Пуршуаçи нихăçан та Совет влаçĕ пуррипе килĕшме пултараймасть, анђах унăн хăшпĕр сийĕсем, услам илес шутпа, хаљхи пурнăçпа вăхăтлăха килĕшеççĕ.

Кунсăр пуçне тата, ССРС хăйĕн ĕçĕнђе йаланах килĕшўллĕ политтĕк туса пыни, Совет влаçне хирĕç вăрçă пуçласан револђутси сиксе тухасран хăрани,—пуршуаçийе пĕр вăрçă фронђĕ тума ђăрмантараççĕ.

Çавăнпа та пирĕн умри ĕç—кăпиталисăмăн хирĕçўсемпе мĕн май килнĕ таран усă курасси, вăрçă пуçлама ђарса пырса, Совет влаçне çирĕплетесси пулмалла. Анђах хаљхи вăхăтра, кăтартнă хирĕçўсене пăхмасăрах, кăпитал тĕнђи пире хирĕç паллах вăрçă хатĕрлет, мĕншĕн тесен кăпитал тĕнђи ĕçлекенсен класĕпе пусмăр айĕнђи халăхсене ытларан та ытларах револђутсиллĕ туса пыракан Совет влаçĕ пурăннипе нийепле те килĕшме пултараймасть.

Совет Сойусĕпе мĕнле лару-тăру тăвас ыйту, ССРС-не хирĕç контр-револђутсиллĕ вăрçă тăвас ыйту хаљхи вăхăтра мĕн пур ĕçлекенсен класĕшĕн те, мĕн пур тĕнђери пуршуаçишĕн те ђи тĕпри ыйту пулса тăрать. Нумайах тăмалла мар, Франтсире, Анклире, Кермаңире, Пођшшăра т. ыт. суйлавсем пулмалла. Çак суйлавсен кампаңине ирттернĕ ђух çав патшалăхсенђе пуринђе те Совет Сойусĕпе мĕнле лару-тăру тăвас ыйту ђи паллă ыйтусенђен пĕри пулĕ. Ку ыйту тавра ĕçлекенсен класĕпе пуршуаçи хушшинђе, Коминттернпа сотсиал-темократти хушшинђе, тата пуршуаçийĕн тĕрлĕ сийĕсем хушшинђе хĕрўллĕ кĕрешў сиксе тухĕ.

Влаç кам аллине лекнине кура, кăпиталисла патшалăхсем Совет Сойусĕ çине йепле пăхасси пулса тăрĕ, ку йапала, хăй йенђен, кăпиталисла патшалăхсен шалтипе тулти ĕçсен политтĕкĕ мĕнле пуласса кăтартса пырĕ.

Çитес суйлавсен кампаңийĕ ĕçлекенсен класĕпе кăпитал хушшинђи кĕрешў вăйлăланнă вăхăтра, ĕçлекенсен класĕ

сулахайалла туртăннă вăхăтра, ěçхалăхěн ССРС-не йуратас кăмăлě ÿссе пынă вăхăтра, ěçхалăхěн айалти массисем сотсиал-темократтин пуçлăхěсене питě вирлěн хěсěрлесе пынă вăхăтра, тата, йулашкинђен, уйрăм кăпиталисла патшалăхсен хушшинђи хирěçÿсем вăйлăланса, çивђěленсе пынă вăхăтра пулса иртмелле. Çаксене кура, сотсиал-темократтин, сулахай сăмахсемпе, Совет влаçне кăмăл тăватпăр тенипе витěнсе „маневăр“ тумалла пулаť. Хирěçÿсене çавăн пек сăмахсемпе сапласа пырас тесе, ěçлекенсен класне пуршуаçипе кěрешес ěçрен айаккалла пăрса йарас тесе, халě сотсиал-темократти хăйěн усал сăннине Совет влаçне хирěç тăратмасť, мěншěн тесен ěçхалăхěн Совет Сойусě йеннелле туртăнакан кăмăлне нимěнпе те хавшатас çуккине вăл пěлет. Çавăнпа та хăйěн мěн пур вăйне вăл комуниссене хирěç тăратаť.

Сотсиал-темократсен „Форвěртс“ йатлă хаçађě ку тěлěшрен ěçлеме тытăннă та ěнтě, вăл çыраť: „Раççейри усăллă, тăнлă ěçе епěр кăмăллăнах пулăшнă пулăттăмăр. Вăл ěçе сотсиалисăм йађěпе тăваççě, çавăнпа та вăл ěç пирěншěн те усăллă. Епěр, Кермађири сотсиал-темократсем, Раççейе усал сунатпăр тесе шутлани ађалла йапала вăл. Епěр унти политтěке пусмăрла майсемпе туса пынине йышăнмастпăр. Анђах вырăссем, еккономěк политтěкне хăйсен майěсемпе туса пырса, нумай, уççăн курăнакан ăнăçлахсем тусан, ун пек пулни пиртен ытла камшăн кăмăллăрах пулě? Кун пек пулсан вара Раççей ђаплă сăнавсем туса пăхнă çěршыв пулě. Çитес суйлавсенђе, пěтěм халăхпа сăсăланисем ђухне Кермађири халăхăн калама çук нумайěшě, Раççейре тиктаттурă майěсемпе тунине темократтиллě майсемпе тăвас тесе тăрăшě. Ирěклěхпе темократти çěтсе пыракан кăпиталисăмпа пěрле пыракан, пуршуаçи таçтан шуйттанран шутласа кăларнă йапала мар вěт вěсем. Вěсене сыхласа пырăпăр.“ Мěн çинђен калаť ку статйа? Вăл, Совет влаçěпе кěрешес ěçре сотсиал-темократти шурăквартейтсăсем, йе Анклири конçерваттăрсем хăтланакан майсемпех хăтланни çинђен калаť. Лешсем: „епěр Совет влаçне хирěç мар, епěр комуниссене хирěç,“ теççě. Ку статйана сотсиал-темократтийěн çěленěнни пек мěн пур ђейелěхěпе суйине пытарса çырнă. Пирěнни пек çилтăвăлпа çапăçу витěр тухса курман ěçлекен, кашни кунах çавăн пек ирсěр сăмахсене вуласа пынипе, хăйěн умěнђи satађсене йаланах тěрěс тавçарса илме те пултараймасť. Совет Сойусě çинђен

сотсиал-темократти сарса пыракан çавăн пек ирсĕрлетсе, пăсса йаракан суйана хирĕç Комунисла Инттернатсионалăн мĕн пур вăйпа, пĕр шеллемесĕр кĕрешмелле. Çавăн пек Совет Сойусне кăмăллатпăр тенĕ сăмахсен суйине тăрă шыв çине кăларса пымалла, вĕсем, темĕнле темократтиллĕ лосăнк-семпе витĕнсе тăраççĕ пулин те, ултавлă сăмахсем пулнине кăтартса памалла. ССРС-не сыхлас тенĕ лăсăнк тавра, вырăссен, тата киттайсен револђутсине сыхлас тенĕ лосăнк-тавра, пĕтĕм тĕнђери револђутсишĕн, ĕçлекенсен класĕн тиктаттурĕшĕн тенĕ лосăнк тавра мĕн пур тĕнђери ĕçхалăхне пухса, орканисатсилесе пымалла. Тĕнђери лару-тăру ĕçĕсен йулашки 2 çул хушшинђи паллăрах вырăнĕсем çаксем пулаççĕ ĕнтĕ. Пирĕн парттипе Совет влаçĕн сатађĕ—хамăр çĕршывăн тăшмансенђен сыхланас ĕçне çирĕплетесси. Хуçалăхăн пилĕк çуллăх планне тунă ђух, çак хамăр çĕршыва сыхлас ĕçĕн инттересĕсем шанђăклă пулђђăр, тесе тумалла. Малашне те килĕшӳллĕ политтĕк туса пымалла, кăпиталисла çĕршывсемпе килĕшӳллĕ пурăнма тăрăшмалла. Империалисăмла вăрçă хатĕрлес ĕçпе малашне те кĕрешсе пымалла. Империалисăмла патшалăхсен пусмăрне, вĕсен експлоаттатсине тӳссе пурăнакан вăйсăр патшалăхсемпе малашне те çывăхрах пĕрлешсе пымалла. Йут çершывсемпе сутуилӳ тăвас ĕçе вăйлăлатса пымалла, йут çĕршывсемпе сутуилӳ тăвас ĕçĕн монопполине çирĕплетсе пымалла.

Пирĕн умра канăçлă пурăнăç мар, хăрушă çапăçусем пуласса куллен-кунхи ĕçре асра тытса пымалла. Ку çапăçура епĕр пĕђђен мар, пирĕнпе пĕрле мĕн пур тĕнђери пролеттариат. Çак çапăçăва, кăпитал тĕнђипе çапăçас ĕçе епĕр йĕркеленсе, орканисатсиленсе çитнĕ вăйпа кĕретпĕр.

Пĕтĕмĕшпе илсен, XV-мĕш Сиесăн ĕçĕсем çаксем: епĕр килĕшӳ ĕçне çăлтăмăр, Совет Сойусне çирĕплетрĕмĕр, епĕр ĕçлекенсен класĕпе хресђенсен тĕп масси хушшинђи сойуса çирĕплетрĕмĕр, епĕр сотсиалисăмла интустрине вăйлăлатрăмăр, хулара та, йалта та сотсиалисăм тăвас ĕçе мĕн пур аслăшĕпе тума тытăнтăмăр. Епĕр парттине çирĕплетрĕмĕр, Ленинисăма çĕнтерсе илтĕмĕр. Епĕр ССРС-ђи ĕçлекенсен класĕпе империалисăмла патшалăхсенђи, колоњисенђи ĕçлекенсен хушшинђи сойуса тĕреклентертĕмĕр. Кусем пурте епĕр тĕрĕс çул çинђе тăнине кăтартаççĕ, ĕнтĕ малалла, çĕнĕ çĕнтерӳсем патнелле! (*Алă çупаççĕ*).

# ТУПМАЛЛИ.


Стр.

I. Партти хушшинђи лару-тăру ыйтăвĕсем . . . . . 5
Парттипе оппоçитси хушшинђи хирĕçÿсем çинђен 8
Оппоçитси Сиесра мĕн хăтланђĕ? . . . . . . . . 9
Оппоçитсин XV-мĕш Сиес умĕнхи ĕçĕсем . . . 11
Оппоçитси пирки Сиес мĕн каларĕ? . . . . . 14
Оппоçитсийе парттирен кăларса пăрахни пирĕншĕн хăрушă мар . . . . . . . . . . . . . . . 16
II. Хуçалăх ыйтăвĕсем çинђен . . . . . . . . . . 19
Иртнĕ çĕнтерÿсемпе малашнехи ĕмĕтсем . . . . 20
Пирĕн умри йăвăрлăхсем . . . . . . . . . . . . 23
Йăвăрлăхсене пĕтерме мĕн тумалла? . . . . . . 26
III. Парттин йалти ĕçĕ çинђен . . . . . . . . . . 31
Йал ăçталла ÿссе пырать? . . . . . . . . . . . 32
IУ. Копперацтсипе пĕрлепурнăç тăвас ыйтусем . . . 35
Совхоссем çинђен . . . . . . . . . . . . . . . 36
Йалта пирĕн мĕн тумалла? . . . . . . . . . . . 37
Йăвăрлăхсем пысăк, ĕçлекенсем сахал, вĕсене хатĕрлес ĕçе вăйлăлатмалла . . . . . . . . . . 38
Йал куљттурлăхне вăйлăлатасси . . . . . . . . 40
Пÿрократтисăмпа кĕрешесси çинђен . . . . . . . 41
V. Тĕнђери лару-тăру ыйтăвĕсем . . . . . . . . . 42
Кăпиталисла патшалăхсенђи хирĕçÿсем . . . . . 44
Хуçалăха пĕтĕçтереççĕ—вăрçма хатĕрленеççĕ . . 46
Хирĕçÿсене вăрçăсăр татма пултараймаççĕ . . . 48
Колођисенђи халăх револђутси йенне сулăнать . 49
Классен хушшинђи хирĕçÿсем те ÿссе, хайарланса пыраççĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 50
Комунисла парттисен сатађĕсем . . . . . . . . 51
Сотсиал-темократсем ĕçлекенсен хускануне Амерĕкри пек туса пыма хăтланаççĕ . . . . . . . 52
Совет Сойусĕпе кăпиталисла патшалăхсен хушшинђи лару-тăру . . . . . . . . . . . . . . . 56

Хакĕ 43 пус